Ольга АРХИПОВА

Çунатлан, чĕрем

Ольга Архипова

Чăваш автономи облаçне йĕркеленĕренпе
100 çул çитнине халалланӑ

Çунатлан, чĕрем

Сăвăсем

Шупашкар-2020

УДК 821.512.111
ББК 84(2=635.1)6-5
А 87

Архипова, О. А. Çунатлан, чĕрем = Вдохновение : сăвăсен пуххи / О. А. Архипова ; хатĕрлекенĕсем : М. Ю. Севастьянов, В. С. Архипова ; редакторсем Г. Л. Никифоров, А. В. Юрату. – Шупашкар : «Хамăн типографи» ТЯО, 2020. - 240 с.

Ку кĕнекене вĕрентӳ ĕçĕн ветеранĕ Ольга Архипова çырнă сăвăсем тата унăн тăванĕсене, ентешĕсене, Чăваш Енĕн паллă çыннисене халалланă хайлавсем кĕнĕ. Сăвăсен пуххине Чăваш автономи облаçне йĕркеленĕренпе 100 çул тата сăвăç çуралнăранпа 91 çул çитнине халалланă.

© Архипова О.А., 2020

ЧУН ХĔЛХЕМĔ

Паян эпир Ольга Александровна Архипова сăвăç пултарулăхĕ пирки сăмах хускатăпăр. Мĕншĕн? Мĕншĕн тесен вăл нумаях та пулмасть тăхăр вунпĕр çул тултарчĕ. Çавна май унăн сăввисем хаçатсенче, журналсенче пичетленчĕç, эфира тухрĕç, тăванĕсем, ачисем тăрăшнипе ятарлă кĕнеке те кун çути курчĕ. Çапла майпа хăй ĕмĕрĕнче нумай çул хушши ачасене чăваш чĕлхипе литератури вĕрентсе пурăннă паллă учительница ячĕ чăвашлăх юхăмĕнче çĕнĕ пусăма çĕкленчĕ. Эппин, хисеплĕ вулакансемĕр, Ульха аппамăрăн пархатарлă ĕçĕ-хĕлĕ çинчен кĕскен калаçса илни пурсăмăра та усă кăна кӳрĕ.

Ольга Александровна Çĕмĕрле районĕнчи Юманай ялĕнче пурăнать. Халĕ ĕнтĕ тивĕçлĕ канура вăл, апла пулин те тăван литература ĕçĕнчен пăрăнмасть. Тавра пĕлӳ туртăмĕ ăна мĕн çамрăкранпах хытă интереслентернĕ, çавна май чăваш чĕлхи,

халăхăмăр аваллăхĕ пирки вăл сахал мар статья çырнă, тĕрлĕ кăларăмра пичетленĕ. Чăваш чĕлхипе литературине тесен вара, вĕсене Ульха аппа хăйĕн тĕп ĕçĕ вырăннех хурать, ма тесен мĕн ĕмĕр тăршшĕпех шкулта ачасене вĕрентнĕ. Мĕнле килĕштĕр-ха ырă чун çав сăваплă ĕçрен пăрăнма?

Çураласса Ольга Александровна Красноармейски районĕнчи Тусай ялĕнче çуралнă. Уписен тăрăхĕнче Тусай паллă ял шутланать. Ахальтен мар Василий Каховский профессор ку вырăнта хăйĕн студенчĕсемпе пĕр хут кăна мар археологи экспедицийĕсем ирттернĕ, мĕншĕн тесен Тусай çĕрĕ авалхи пурнăçăн чылай ыйтăвне татса парас ĕçре уçăмлăх кӳнĕ. Ольга Архипова, тăван чĕлхемĕре чунтан юратаканскер, вунă класс пĕтернĕ хыççăн И.Я. Яковлев ячĕллĕ педагогика институчĕн филологи уйрăмне вĕренме кĕрет. Василий Егоров, Семен Горский, Михаил Сироткин пек паллă учĕнăйсем патĕнче хамăр чĕлхепе литература уйрăмлăхăсене чунне парса алла илет. Унпа пĕрле вĕренекенсем хушшинче мĕнле маттур студентсем пулнă-ха тата: кайран паллă чĕлхеçе тухнă Анатолий Горшков, Александр Галкин поэт, Зоя Нестерова çыравçă, Аркадий Малов куçаруçă, драматург… Унашкал хавхалануллă сывлăш такама та çунатлантарса ярĕ.

Тăван чĕлхем! Таса хĕлхем
Парсам пăлхавлă чунăма.
Пар чăнлăх, савăнăç, илем,
Пар ирĕк – çутăрах çунма, -

çапла каланăччĕ тăван чĕлхе пĕлтерĕшĕ пирки пирĕн чаплă поэтăмăр Митта Ваçлейĕ. Чăнах та, пурнăçра чăнлăх патне туртăнасси те, шăпамăр мĕн пӳрнине туллин ăнланса илесси те, ун патне çул хывасси те тăван чĕлхерен питĕ нумай килет. Çакна Юманай шкулĕнче Ольга Александровна патĕнче вĕреннĕ Леонид Волковпа Станислав Иванов та, Николай Дмитриевпа Николай Алексеев та, Клара Осокинăпа Михаил Максимов, Олег Кульевпа Георгий Иваничев та хаваспах çирĕплетме пултараççĕ, мĕншĕн тесен пурнăçăмăрта

çутта тĕттĕмрен, ырра усалтан уйăрса илес пархатар чи малтан чĕлхе урлă килет. Çавăнпа тав тăваççĕ те Ольга Александровнăна унăн вĕренекенĕсем. Ачасем кăна мар, вĕсен ашшĕ-амăшĕ те чĕререн хисеплет Ульха аппамăра. Калăпăр, учительница клубри концертра Петĕр Хусанкайăн «Тури Вылта туй сикет», «Таня» поэмисене чун çӳçенмелли хавхаланупа пăхмасăр каласа пани хăех мĕнле тыткăна илет, кашни итлекене хăй çине тепĕр хут тарăннăн та тишкерӳллĕн пăхма хистет. Çакă мар-и-ха ĕнтĕ шурăпа хура тĕссене пĕр-пĕринчен уйăрса илме вĕрентекен хăват?

Шăпах çав хăват асамлăхĕ сăвă тĕнчине çавăтса кĕнĕ те ĕнтĕ Ольга Александровнăна. Сăмах хĕлхемĕ алла калем тыттарать, чуна çĕнĕ шухăшпа çунатлантарать. Çав çунатлăха, хавхаланăва куратпăр та эпир унăн сăввисенче. Тавтапуç сана, Ульха аппамăр. Хăвανпа пĕрлех мăшăрна, Юманай шкулĕн директорĕ пулнă Севастиан Архипов çĕнтерӳçĕ салтака, ачусене, мăнукусене куратпăр эпир, Юманайри тата Тусайри тăванусене те пуç тайса чыслатпăр.

Кĕске сăмаха çак сунăмпа вĕçлер пуль. Чăваш литературинче тăхăрвунă çулран иртекенсем сахал мар пулчĕç. Калăпăр, Ваçлей Давыдов-Анатри, Иван Вашки… Тăвай хĕрĕ Валентина Элпи вара пире çĕр те икĕ çула çитсе ырă тĕслĕх кăтартрĕ. Санăн та çав шая çитмелли майсем пур. Çӳл тӳпе те пиллет, тăван халăх та ырлăх-сывлăх сунать. Эппин, малалла, Ульха аппа!

Юрий СЕМЕНТЕР,
ентешӳ, Трак Ен халăхĕн ывăлĕ



КУÇÇА ЙĂХĔН ЫРĂ ТĔСЛĔХĔ

Архипова (Александрова) Ольга Александровна 1929 çулхи авăн уйăхĕн 12-мĕшĕнче Чăваш Республикин Красноармейски районĕнчи Тусай ялĕнче çуралнă. Тусай ялĕ Трак тăрăхĕнчи паллă ялсенчен пĕри шутланать. Чăвашсен пинпин ялĕнчен пĕри вăл. Авалхи ватă ял. Упи паттăр йăхĕнчи çынсем чăвашсен çĕнĕ çĕрти пурнăçĕнчи несĕлĕмĕрсен пархатарлă йăли-йĕркине аталантарасинче нумай вăй хунă, паллă йĕр хăварнă. Çак ырă тĕслĕхсем Тусай ялĕнчен тухнă ăрури çынсен пурнăçĕнче те туллин палăраççĕ. Филологи наукисен докторĕ Николай Петров профессор, Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ агрономĕ Александр Ефимов, халăх ĕçĕ-хĕлĕн ырми-канми йĕркелÿçи Михаил Прохоров тата ыттисем те ырă ятпа Тусай ялĕн историйĕнче ылтăн сас паллипе çырăнса юлнă. Вĕсен йышĕнчи пысăк чыса тата хисепе тивĕçлĕ Ольга Архипова та Тусайпа Юманай хутлă-

хĕнчи çынсен темиçе ÿсĕмне чăваш чĕлхине вĕрентессинче пĕтĕм пурнăçне хывнă, пархатарлă ĕçре чăвашлăх сывлăшне сиплĕх кÿрес енĕпе пысăк утăмсем тунă.

«Мĕн ырри Куççан…»

Тусайра ултçĕр çул ытла ĕнтĕ чăваш халăхĕн йăх тымарĕ аталанса сарăлать. Сĕм авал кашни çемьен йăх-ăру ячĕ пулнă, вăл ĕмĕрсем иртнĕçем ламран лама куçса ăрăвăн ырă енĕсене аталанма-çирĕпленме пулăшнă. Кĕнеке авторĕн аслă ăру-несĕлĕн кăк ячĕ Куççа пулнă. Несĕлсен çĕрĕ те, улăх-çаранĕ те, выльăх-чĕрлĕхĕ те сахал мар пулнă. Çерем çĕтнĕ, тырă акнă, кĕтĕвĕ-кĕтĕвĕпе выльăх-чĕрлĕх усранă. Куççа ратнисем анлă тавракурамлă, ăс-тăнлă, ĕçчен, вăйлă та тĕреклĕ пурăнакан, вырăс культурипе чăваш халăхĕн авалхи йăли-йĕркине тытса пыракан çынсем пулнă. Суту-илÿ тунă, пысăк тупăшлă ĕçсем туса пурлăхне ÿстерме, укçа тума пĕлнĕ. Нумайăшĕ хутла, вырăсла калаçма пĕлнĕ, шÿтлеме юратнă, юрра-ташша кăмăлланă. Вĕсенчен нумайăшĕ тĕрлĕ музыка инструменчĕсемпе каланă.

Александровсем - Раççейĕн шанчăклă ывăлĕсем, паттăрĕсем

Аслă ăру-несĕлсен арĕсем - Раççейĕн шанчăклă ывăлĕсем, паттăрĕсем. Вырăс халăхĕн тĕрлĕ истори тапхăрĕнче нумай вăрçăра хаяррăн çапăçса Тăван çĕршыва хÿтĕленĕ. Çĕршывăн шанăçлă хуралçи-сыхлавçисем пулса тăнă. Тăван çĕршыва чун-чĕререн юратнă, ăна парăннă çынсем пулнă. Тăван халăхпа, ял-йышпа яланах пĕрле пурăннă, вĕсемпе пĕр сывлăшпа сывланă, пурнăç пулăмĕсене те тăван халăх куçĕпех виçсе хакланă. Нихăçан та чапшăн, сумлă ятшăн çунман. Тăван çĕршывшăн вăй-халне шеллемесĕр ĕçленĕ. Çавна май тĕп-несĕлсем ачисене те тĕрĕс воспитани парса çитĕнтерме тăрăшнă. Тен, çавăнпа та иртнĕ ĕмĕр пуçламăшĕнче Тусайра çуралса ÿсне сумлă ватă Энтип мучи: «Ыр хунавлă, ятлă йăх. Мĕн ырри Куççан», - тенĕ.

<u>*Александр Александрович Александров*</u>
Иккĕмĕш Микулай патша çарĕн аслă унтер-офицерĕ, Пĕрремĕш тĕнче вăрçин Георгий хĕресĕн IV степенĕн кавалерĕ, икĕ революци салтакĕ, Граждан вăрçин Хĕрлĕ Çар командирĕ, 1914 ç.

<u>*Владимир Александрович Александров*</u>
çĕнтерӳçĕ салтак, сержант, командир, Тăван çĕршывăн Аслă вăрçин тата вĕрентӳпе ĕç ветеранĕ.
Сăн ӳкерчĕре: Великобритани, АПШ, СССР правительствисен пуçлăхĕсен Потсдамри конференцине сыхланă вăхăт, Германи, Потсдам, 1945 ç.

<u>*Александр Евстафьевич Александров*</u>
çарти аслă командир, полковник, Казахстанри Шалти Ĕçсен министерствин инженер службин Тĕп управленийĕн ертӳçи, 1990 ç.

Энциклопедире - Куçça йăхĕнчен тухнă çыннсем

Красноармейски районĕн энциклопедийĕнче Куçça йăхĕнчен тухнă çичĕ çыннăн кĕске биографийĕпе те паллашма май

пур: Михайлов Александр Ефимович, (1905-1983), Ольга ашшӗн иккӗмӗш сыпӑкри тӑванӗ, карап ӑсти, инженер-конструктор, техника наукисен докторӗ; Александров Александр Александрович, (1888-1989), Ольга ашшӗ, икӗ самана çынни, тӗрлӗ хуçалӑхсенче яваплӑ вырӑнсенче ӗçленӗ; Александров Владимир Александрович, (1926-2012), Ольга пиччӗшӗ, учитель, музыкант, Тӑван çӗршывӑн Аслӑ вӑрçин тата педагогика ветеранӗ; Александрова (Архипова) Ольга Александровна, (1929), фольклорист, чӑваш чӗлхипе литератури учителӗ, ӗçпе вӗрентӳ ветеранӗ; Егоров Анатолий Егорович, (1937), Ольга ашшӗ енчи тӑванӗ, Чӑваш Республикин ял хуçалӑхӗн тава тивӗçлӗ ӗçченӗ; Григорьев Ливий Григорьевич, (1941), Ольга ашшӗ енчи тӑванӗ, «Досаево» хуçалӑхӑн тӗп инженерӗ пулнӑ, Чӑваш Республикин тава тивӗçлӗ механизаторӗ; Александров Александр Евстафьевич, (1949-1994), Ольга пиччӗшӗн Евстафий Александровичӑн ывӑлӗ, полковник; Архипова Вера Севастьяновна, (1962), Ольга хӗрӗ, культура ӗçченӗ, Чӑваш наци конгресӗн культура комитечӗн ертӳçи, Чӑваш наци библиотекин тӗп специалисчӗ, Раççей Федерацийӗн журналисчӗсен пӗрлӗхӗн пайташӗ, Нестер Янкас, Алексей Талвир, И.Я. Яковлев ячӗллӗ премисен лауреачӗ.

Аслашшӗ Михаил Кузьмич Кузьмин

Улькан аслашшӗ, Михаил Кузьмич Кузьмин, тулли те çителӗклӗ, тӗреклӗ пурнӑçпа пурӑнакан çын пулнӑ. Ӗç-пуçа пӗлсе йӗркеленипе, тӑрӑшса ӗçленипе пурлӑхӗ, çурчӗ-йӗрӗ, выльӑх-чӗрлӗхӗ, çи-пуçӗ, ӗç хатӗрӗ çителӗклех пулнӑ. Ӗççи вӑхӑтӗнче ал çитменрен çынна тара тытнӑ, хуçалӑхне пӗлсе ертсе пынӑ. Питӗ ӑслӑ çын пулнӑ, вырӑсла япӑх мар калаçнӑ. Михаил Кузьмич 84 çула çитиччен пурӑннӑ. Аслашшӗпе асламӑшӗ чӑваш тата вырӑс йӑли-йӗркисене çирӗп тытса пынӑ, юрра-ташша ӑста çынсем пулнӑ. Каннӑ вӑхӑтра та, ӗçкӗ-çикӗре те юрӑ пуçласа халӑха хавхалантарнӑ. Ачасене лайӑх воспитани парса çитӗнтернӗ, хутла вӗрентме пултарнӑ.

***

Ашшĕ Александр Александров – икĕ самана çынни

Александров Александр Александрович – Тăван çĕршывăн паттăр салтакĕ, тĕрлĕ хуçалăхра яваплă вырăнсенче ĕçленĕ.

Улькан ашшĕ те, Александр Александрович Александров (1888–1989) Куçça йăх-несĕлĕнчен, пысăк та тĕреклĕ ратнерен тухнă. Ялта ăна ватти-вĕтти Куçça мучи е Куçça Елексантăрĕ тесе чĕннĕ. Унăн кун-çулĕ çĕршыв пурнăçĕпе тачă çыхăннă.

Александр Александров – Тăван çĕршывăн хастар-сатур ĕçченĕ, хуралçи-сыхлавçи тата хăрушла-синкерлĕ вăхăтне-асапне тӳссе çĕнтернĕ паттăрĕ, патриочĕ. Тăван çĕршывăн шанчăклă ывăлĕ, пĕтĕмлетсе каласан, икĕ самана салтакĕ вăл. Иккĕмĕш Микулай патша çарĕн аслă унтер-офицерĕ, Пĕрремĕш тĕнче вăрçин Георгий хĕресĕн IV степенĕн кавалерĕ, февральти буржуаллă демократи тата 1917 çулти Октябрьти социализмлă аслă революцисен салтакĕ, Граждан вăрçинче Хĕрлĕ Çар командирĕ пулнă.

Александр Александрович Александров ял хуçалăха аталантарас енĕпе ĕçлеме, пурăнма çуралнă çынсенчен пĕри. Вăл пур енлĕ аталаннă çын, пултаруллă йĕркелӳçĕ пулнă.

Ĕçченлĕхĕпе палăрса тăнă, хăйĕнчен тата хăйне пăханса тăракан çынсенчен çирĕп ыйтнă, çынна куçран калама тăрăшнă. Тусайсен аса илĕвĕсем тăрăх, вăл питех те аван пуплевçĕ пулнă. Халăхпа пултаруллă, ăнлануллă калаçма пултарнă. Унăн анлă тавракурамĕ пурне те тĕлĕнтернĕ. «Ыр ут хыççăн пин ут шыв ĕçет тесе», - ахальтен каламан халăх. Ватă салтак 1926-1929 çулсенче ял совет председателĕнче, уй-хир бригадирĕнче, район больницин хуçалăх заведующийĕнче ĕçленĕ, Аслă тĕнче вăрçи пуçлансан Тусай ялĕн «Чутай» колхозне пиллĕк çул хушши ертсе пынă. Вăрçă хыççăн районти çул-йĕр пайĕнче счетоводра (бухгалтер-экономист), тăван хуçалăхра бригадирта тăрăшнă.

Çав тери çыпăçуллă, ылтăн алăллă пулнипе палăрнă Улька ашшĕ. Ăста столяр та, платник та, каменщик та, слесарь та, токарь те пулнă. Кил-йыш, колхоз валли чӳрече кăшкарĕсем, ут хатĕрĕсем, йывăç кĕреплесем, матиксем туса панă, урапасуна юсанă. Платник ĕçĕсĕр пуçне катка-пичке, уйран çӳпçи, чĕрессем тума пĕлнĕ. Тимĕр-тăмăрпа ĕçлеме те маçтăр пулнă. Шуç тимĕрпе пӳрт тăррисене витме, вĕсене сăрлама ăста пулнă. Çăм аттине те хăех йăваланă, лашасене те хăй ăсталанă такансемпе таканланă. Кăмака тăвакан паллă маçтăр та пулнă. Тытнă ĕçе тирпейлĕ те тĕплĕ тунă. Кĕнеке унăн пурнăçĕнче питĕ пысăк вырăн йышăннă. Хаçат-журнал та нумай çырăнса илнĕ вăл. 100 çултан иртсен те классика литературине тимлесех шĕкĕлтенĕ сумлă ватă.

Çирĕп чун-чĕреллĕ Александр Александров тăван ачисемшĕн те, чăваш халăхĕшĕн те ырă тĕслĕх пулнă. Хаяр самана вылявĕ сывлăхне хавшатса хăварнă пулин те чун илемлĕхĕпе кăмăл сипетне хуçайман - питех те кăмăллă, ялан шӳтлеме юратакан, черчен çын пулнă вăл. Çирĕп ăс-тăнпа пурăнакан Александр Александровичăн чун пуянлăхĕ çамрăк ăрăва та ăшăтса тăнă, ыттисене те хĕмлентернĕ. Çынсем вăл шалтан асамлă çутăпа хĕмленсе тăнине чунпа туйнă. Тĕрĕслĕхшĕн чунне пама хатĕр çын пулнă вăл. Александр Александрович ачисене те тӳрĕ чунлă çынсем пулма,

чăнлăхпа тĕрĕслĕхе хака хума вĕрентнĕ. Сахал мар пулăшу ыйтакана йывăрлăхран хăтарса хăварнă вăл, вăйсăррисене кӳрентересрен хӳтелеме тăрăшнă. Çынсемпе яланах пĕр чĕлхе тупма пултарнăшăн, уçă кăмăллă, калаçма, шӳтлеме юратнăшăн ăна таврари халăх хисепленĕ.

Юрă-кĕвĕ ăсталăхне алла илнĕ А.А. Александров хут купăсçă пулнă, балалайка калама, юрлама тата ăста ташлама пĕлнĕ. Вăл ял çыннисене музыка инструменчĕсем каласа ĕçкĕ-çикĕсенче, туйсенче, салтака каякансене тата ытти çĕрте юрлаттарса-ташлаттарса савăнтарнă. Халăх юррисене те нумай пĕлнĕ, тус-тăванпа, ял-йышпа пĕрле пуçтарăнсан юрра хăй малтан тăсса янă. Çавăн пек çĕмĕрттерсех 101 çул ытла пурăннă мухтава тивĕçлĕ Куçça мучи.

Амăшĕ Васильева Фекла Васильевна

Васильева Фекла Васильевна – Васнар хĕрĕ, Пăрчăкан тата Хĕвекле ятпа çӳренĕ.

Улька амăшĕ, Васильева Фекла Васильевна (1889–1954), хăйне çут çанталăк пилленĕ ĕмĕрне тертлĕ те пархатарлă çулпа утса тухнă. Ялти ятлă-сумлă çын пулнă, нумай ачаллă кил-йыша çирĕп алăра тытса тăнă. Мĕн пĕчĕкрен Пăрчăкан ятпа çӳренĕ. Хĕвекле ялти ытти хĕрарăм пекех хут вĕренмен,

сас палли палламан. Тăрăшуллă пулнипе, сăпайлă та тимлĕ, ачашлăхĕпе тата ырă кăмăлĕпе уйрăлса тăнă.

Нумай чăваш хĕрарăмĕн пурнăçĕ çăмăл пулман вăл вăхăтра. Саманасем ахăрнă вăхăтра Хĕвеклен иккĕмĕш Николай патша çарĕн аслă унтер-офицерăн мăшăрĕ те, пĕрремĕш тĕнче вăрçин, икĕ революци салтакĕн тата Хĕрлĕ Çар командирĕн арăмĕ те пулма тивнĕ. Вăй-халĕ вĕри çăл куç пек иксĕлми тапса тăнă Хĕвеклере. Салтак арăмĕн пурнăçĕ питĕ йывăр пулнă, çулла та, хĕлле те хĕвел тухиччен тăрса тĕттĕм пуличченех пĕр канăçсăр ĕçленĕ. Арçын ĕçĕ те, хĕрарăм ĕçĕ те тиеннĕ ун çине. Ваттисене те, ачисене те, выльăх-чĕрлĕхне те, лашисене те пăхмалла. Пĕтĕм ĕçе ал вăйĕпе тунă. Йывăр тесе пуç усман. Сӳс тунă, пир тĕртнĕ, суха пуç тытнă, тырă-пулă акнă, сӳреленĕ, пиçсе çитсен вырнă, пуçтарнă. Хуçалăхра кирлĕ пур япалана та, тăхăнмалли тумтире хăйĕнех тума тивнĕ.

Пурнăç - виçесĕр, аннемĕр юратăвĕ те виçесĕр. Хĕвекле хут вĕренмен пулсан та, ачисене чăтма çук вĕрентесшĕн çуннă, çутта кăларас тесе нумай тăрăшнă: ирсерен, апат çитерсе, шкула ăсатнă, киле таврăнсан, уроксем мĕнле иртни çинчен ыйта-ыйта пĕлнĕ. Хĕллехи кунсенче, урамран шăнса кĕрсен, алăсене вĕре-вĕре ăшăтнă, çемье валли пир-тăла тĕртнĕ, чăлха-алсиш çыхнă, кĕпе-йĕм çĕленĕ, кĕрĕк-сăхман сапланă. Выçлăх вăхăтĕнче хăй çиес тенĕ çăкăр татăкне те тĕпренчĕкĕсене тыттарнă. Ачисем лайăх тунă ĕçшĕн савăннă, начарришĕн хурланнă. Пăртак çунат сарма пуçласан çĕре хисеплеме, ĕçе юратма хăнăхтарнă. Çынна хисеплеме, чыса çамрăкран упрама, тус-тăвана чунтан савма, çынпа лайăх пулма вĕрентнĕ.

Хĕвекле - чăваш вăйă картин илемĕ

Чăваш халăхĕн виçĕ пин çулти чыслă аваллăхĕ мухтава тивĕçлĕ. Çак халăх ĕмĕр-ĕмĕр тар юхтарса ĕçлесе, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетсе, тыр-пул акса, çурт-йĕр лартса, хăмла, улма-çырла, пахча, вăрман ӳстерсе пурăннă. Чăвашсен хура ĕçпе

капăр уявсен йĕрки ĕлĕкрен пĕтĕм пурнăçăн йĕрки пулнă. Çав йăла ĕмĕртен ĕмĕре куçса пынă. Чăваш ĕçлеме тăрсан - ĕçленĕ, уяв çитсен - тĕнче курса тĕлĕнмелле савăнма пĕлнĕ. Çавна тума çирĕпленнĕ йĕркесене уяса, малалла аталантарса пыма хăват панă.

Садюков Н.И. Вăйă карти, 1978 ç.

Хĕвекле те нумай чăваш йăли-йĕркине астуса тытса пынă. Ниме, хĕр ними, улах ларни, алылмаш, хĕр сăри, сурхури тата çавăн йышши ытти уявпа йăла-йĕрке уншăн чăн-чăн пурнăç шкулĕ пулнă. Уйрăмăнах ăна чăваш вăйă картийĕ хăйĕн асамлăхĕпе илĕртнĕ. Мĕн тери хăйне евĕр илемлĕ пулнă несĕлĕмĕрсен уявĕсем! Хĕрсемпе каччăсем алла-аллăн тытăнса, вăййа васкаççĕ. Чăваш çи-пуçне тăхăннă хĕрсемпе каччăсем акăш карти евĕр вăйă картине тăнă. Пысăк ушкăн тикĕссĕн те хуллен шăвать, хĕрсем пĕр-пĕрин хыççăн çурма айаккăн çаврăнса утаççĕ.

Хӳхĕм хĕр Хĕвекле ташă ăсти пулнă. Каçхи вăйă-кулă картине савăнăç кӳнĕ. Чăн-чăн чăваш пики, чипер сăн-питлĕ хĕрупраç вăйă картинче акăш пек юхса, урасене çĕклемесĕр питĕ илемлĕ ташласа çынсене килентернĕ. Унтан сылтăм аллине пилĕкне тытса çаврăнать хĕрупраç. Сулахай алли халь-халь çӳлелле вĕçсе каяс кайăка аса илтерет. Вăл

ташланă чух, шăнкăр-шăнкăр тевет сасси илемлĕн янраса тăнă, çамрăксен чун-чĕринче ĕмĕр манмалла мар туйăмсем хăварнă.

Илемлĕ те уçă саслăскер, чăваш халăх юррисене те нумай пĕлнĕ Пăрчăкан. Вăйă картинче вăл яш кĕрĕмпе пĕрле шăрантарнă ĕлĕкхи чăваш юррисем пин-пин шăнкăрав янравлăн таврана саланнă.

***

Анне - пурнăç пуçламăшĕ, кун-çул никĕсĕ, чĕрçе çинче вылятса-култарса ӳстернĕ чĕре ăшши. Анне вăл – пĕртен-пĕр чи пысăк та чи сăваплă ят, пĕртен-пĕр чи аслă хăват. «Анне чунĕ - тĕнче чунĕ, ăна упра», - тенĕ Расул Гамзатов паллă сăвăç. Çавăнпах пуль эпир унпалан мĕнпурĕ те пĕр япалана çеç танлаштарма пултаратпăр - Тăван çĕршыва. «Аннемĕр-çĕршывăмăр», - тетпĕр ачашшăн та çепĕççĕн, мăнаçлăн та мухтавлăн. Аннемĕр… Çĕршывăмăр… Икĕ пысăк ят – никам пырса çулăхайми пĕр пĕтĕм хăват.

Пиччĕшĕпе йăмăкĕ Улькапа Володя

Александров Александр Александровичпа Васильева Фекла Васильевнăн ултă ача пулнă. Марипе Юлтук ятлисем пĕчĕклех вилнĕ. Евстафий (1914-1995), Василий (1923-1940), Владимир (1926-2012) тата Ольга (1929) хĕрĕ тăрса юлнă. Улькапа Володя пĕрле выляса çитĕннĕ, питĕ туслă ӳснĕ. Ача чух Володьăн хушма ячĕ Вольмакка пулнă. Тата ăна ял-йыш юратса час-часах Куççа Волойки тесе чĕннĕ.

Вăйлă вăрлăхран вăйлă калча шăтать, çĕнĕ ырă вăрлăх парать. Кĕвĕ-юрă тата илемпе çыхăннă сăмахлăх туртăмĕ ашшĕ-амăшĕнчен ачисене чунпа-юнпа куçнă. Пĕчĕкренех сăнама, курнине-илтнине астуса юлма пултаракан Улькапа Володя чăваш юрри-кĕввипе, вăййи-ташшипе кăсăкланнă, тăван халăх сăмахлăх тĕслĕхĕсене итлеме юратнă. Мĕн ачаран ытарайми юрă-кĕвĕпе сăмах-юмах илемне курса-

туйса ӳснĕ. Авалтан пыракан йăла-йĕрке - вăйă карти - юмахри илемлĕ яла, аваллăха аса илтернĕ пиччĕшĕпе йăмăкне. Икĕ ял çамрăкĕсем Шăмарсемпе Чутайсем ял варрине Вани хушши тĕлне каçсерен вăййа пухăнаççĕ, таврара хут купăс тата кĕсле сасси янраса тăрать. Вăйă курма кашни килти хăна-вĕрле урама тухать, савăнса пăхса тăрать. Акă, илемлĕ чăваш тумĕсем тăханса, юрă-кĕвĕ шăрантарса, ваттисем вĕрентнĕ йăла-йĕркене пăхăнса, çамрăксем вăйă картине тăраççĕ. Пĕр урамран тепĕр урама куçса пырса пĕтĕм таврана вăйă юрри янратса илем кӳрсе пырать. Эх, çаврăнать вăйă карти! Вăйă карти варрине 5-6-7 çулхи ачасене те ташлама кăлараççĕ. Улькапа Вольмакка та, ытти ачасемпе пĕрле, тăм шăхличĕсемпе шăхăртса вăйă варрине кĕре-кĕре пĕр-пĕрин хыççăн чупаççĕ. Уявра юрă-ташă, шӳт-такмак пĕр-пĕринпе черетленсе пырать. Ватти, çамрăкки, ача-пăча юрлать те ташлать, такмаксем калать. Вăйă шавлать, кĕрлет, пурте савăнăçлă. Çĕрĕпе янрать таврара чăваш-юрри кĕвви. Пĕтĕм ял-йыш çапла пĕрле савăннă, пĕрле туслă пурăннă…

Упи тăрăхĕнче ĕлĕкренех музыка инструменчĕсен культури пулнă. Музыка инструменчĕсемпе калакан ăста кĕвĕçĕсем - Сергей Ильин (Колбаков), Купăс Аркадийĕ, Матвей Константинов, Григорий Андреев (Казак Кĕркурийĕ) хут купăспа, Анисим Романов (Унеçĕм мучи) шăпăрпа, Шăмар енчи Николай Кошкинпа Чутай енчи Иван Михайлов (Вани мучи) кĕслепе, Прокопий Якимов (Çӳтте Пракухĕ) параппанпа, Александр Александров (Куçça) балалайкăпа тата хут купăспа ăста вылянă. Георгий Васильев çĕнĕ балалайкăсем, Леонтий Семенов çĕнĕ хут купăссем ăсталанă, вĕсемпе питĕ маçтăр каланă.

Улькапа Володя час-часах Унеçĕм мучи шăпăрçă тата Вани мучи кĕслеçĕ патне юрă-кĕвĕ итлеме çӳренĕ. Унеçĕм мучи питĕ маттур та илемлĕ ватă çын пулнă. Кĕреçе пек сарлака сухалĕ çил вĕрнипе ялав пек вĕлкĕшнĕ. Шăпăрпа выляма пĕлекенни те таврара вăл кăна пулнă. Тусай ялĕнче Унеçĕм мучи шăпăрĕпе Пракух параппанĕ сассисĕр пĕр туй та иртмен.

Сасса-кĕвве лайăх ăнкаракан тата илемлĕ саслă Улькапа Володя халăх юррисене юрлама юратнă. Тăван ял-йыш юрлакан тарăн шухăшлă, анлă кĕвĕллĕ чăваш юрри тата сăмахлăхĕ ачаранах ĕмĕрлĕхе тыткăнланă шăпăрлансене.

Ашшĕ хут купăс е балалайкă каланă чух вĕтĕр-шакăр кĕвĕ çеммипе ниçта кайса кĕреймесĕр сиккелесе, пăркаланса тăнă. Улькапа пиччĕшĕ Володя купăс калама ачаран хăйсем тĕллĕннех вĕреннĕ. Юрра-кĕвве кăмăлланăран, шăпах вăрçă тухнă кун, Трак пасарĕнчен ачисене ашшĕ хут купăс илсе парать. Вăрçă пуçлансанах çав купăспа миçе çынна çара, вăрçă хирне ăсатман пулĕ Володя! Ольга Александрова çитĕнсен, пединститут студенчĕ чухне, гитара калама хăнăхнă.

Мĕн ачаран кĕрсе вырнаçнă Улькапа Вольмаккан чунчĕрине аслă ăрури çынсен ырă йăли-йĕрки, чăваш халăх сăмахлăхĕ, тăван халăхăмăрăн тарăн шухăшлă кĕввиçемми. Вĕсем йăхран йăха куçса пыракан халăх пултарулăхне итлесе, ăша хывса ӳснĕ.

Пиччĕшĕ Владимир Александров – вĕрентекен, ăста музыкçă

Акатуйра туссемпе. Баянпа Владимир Александров

Улькашăн уйрăмах пиччĕшĕсем Евстафий, Василий, Владимир ырă тĕслĕх шутланнă. «Çынна пĕлӳлĕх çеç пурнăçăн аслă çулĕ çине кăларать», – вĕрентнĕ йăмăкне аслисем. Уйрăмах, Владимир пиччĕшĕ ырă тĕслĕх пулнă: вăл фельдшер шкулĕ те, Канашри педагогика училищин музыка уйрăмĕнче те вĕреннĕ, Хусанти В.И. Ульянов-Ленин ячĕллĕ университетра аслă пĕлӳ илнĕ. Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче 1-мĕшпе 2-мĕш Белоруссии фрончĕсенче çапăçнă. Потсдам хулинче пулса иртнĕ конференцие хутшăнса И. Сталин, У. Черчилль тата Г. Трумен хăрушсăрлăхне сыхланă. II тата III степеньлĕ Мухтав, I степеньлĕ Тăван çĕршыв вăрçин орденĕсене, «Паттăрлăхшăн», «1941-1945 çулсенчи Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче Германие çĕнтернĕшĕн» медальсене тивĕçнĕ.

Шкулта ачасене географи, истори, музыка, нимĕç чĕлхи предмечĕсене вĕрентнĕ. Ӳссе пыракан ăрăва нумай çул пĕлӳ тата тĕрĕс воспитани парас ĕçре вăй хунă. Педагогикăна 56 çул халалланă хисеплĕ вĕрентекен.

Ĕмĕр тăршшĕпе Владимир Александрович Шупашкарти тата Хусанти тĕп библиотекăсемпе, Кĕнеке палатипе тата республикăри патшалăх истори архивĕпе тачă çыхăну тытса тăнă. Вĕсем уншăн иккĕмĕш кил пулнă. Хăй ĕç-пĕлĕвне аталантарассине кĕнеке витĕр курнă вăл. Ăс-тăнĕ ватлăхра та питĕ çивĕч пулнă. Ун пирки çынсем шӳтлесе: «Утакан энциклопеди», - тенĕ. 80 çултан иртсен те тĕнчери, пурнăçри, историнчи, политикăри пулăмсене, тĕрлĕ паллă датăна лайăх астунă.

Владимир Александрович ĕмĕр тăршшĕпех алăран хут купăс та, баян та, аккордеон та яман. Музыка инструменчĕ каласа юрă-ташă кĕввине хитре шăрантарса ентешĕсене савăнтарнă. Тĕрлĕ мероприяти ирттернĕ çĕре хутшăннă; концертсенче, спектакльсенче кĕвĕ каласа савăнтарнă. Шкул ачисене те çак ăсталăха алла илме пулăшнă. Тивĕçлĕ канăва тухсан та вун икĕ çул хушши шкулта педагогра, ача сачĕнче музыка ертӳçинче шăпарлансене кĕвве-çемме юратма вĕрентнĕ.

Республикăри тата районти обществăлла пурнăçа активлă хутшăннă. Красноармейски районĕн вăрçăпа ĕç ветеранĕсен Совечĕн пайташĕ, Нестер Янкас ячĕллĕ культурăпа ÿнер тата литература обществин хастарĕ пулнă май тăван ен культурипе историне аталантарас, çамрăксене çарпа патриотизм воспитанийĕ парассишĕн нумай вăй хунă.

Районти тата ялти ветерансен хорĕн музыка ертÿçинче ĕçленĕ май ял тата район пурнăçне çĕнĕ варкăш кĕртнĕ, илем кÿнĕ. Ял уявĕсемпе тĕрлĕ культура мероприяти чылай ирттернĕ. Ветерансен хорĕ районта кăна мар, республикăра та тĕрлĕ смотр-конкурс, фестиваль лауреачĕ пулса тăнă. Хор репертуарне те пуянлатма тăрăшнă вăл. Ветерансем Раççей, Чăваш Ен, Трак тăрăхĕ, ĕç тата çар паттăрĕсем çинчен хывнă юрăсене мăнаçлăн шăрантараççĕ, ĕлĕкхи ырă йăла-йĕркене малалла аталантараççĕ.

Яту чаплă сан

Ольга Александровнăн ачалăхĕ колхозсем йĕркеленнĕ пăтравлă вăхăтпа, Тăван çĕршывăн аслă вăрçин 1941–1945 çулĕсемпе пĕр килнĕ. Ачалăх саманчĕпе киленсе, выляса-кулса пурăнма майĕ те пулман. Вăрçă çулĕсенчи йывăр пурнăç, пысăк çухату, канăççăр ĕçсем, хырăм выççи, ачалăха туртса илнĕ асаплă кунсем вăрçă ачине пурнăç çине ÿссе çитĕннĕ çын пек тарăннăн пăхма, шухăшлама вĕрентнĕ.

Ольга Александровна пурнăç тăршшĕпех чăвашлăхшăн, ăна сÿнме парас мар тесе нумай вăй хунă. Пурнăç çул-йĕрне вĕрентекен профессийĕпе çыхăнтарнă. И.Я. Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика институтĕнче вĕренсе чăваш чĕлхине вĕрентекенĕн дипломне алла илнĕ хыççăн (1953 ç.) Елчĕк районĕнчи Аслă Таяпа, Кĕçĕн Таяпа, Елчĕк тата Çĕмĕрле районĕнчи Юманай шкулĕсенче ĕçленĕ. Учительте, пĕтĕмĕшле илсен, 32 çул тăрăшнă.

Çăмăл пулман вăл вăхăтра чăваш чĕлхине вĕрентме. «Чăваш чĕлхи урам алăкĕнчен тухсан малалла кирлĕ мар»,-

çакăн пек шухăшланă нумайăшĕ. Çӳлте ларакан чиновниксем те çак шухăшпах килĕшнĕ. Пĕр вăхăт шкултан тăхтавра ачасен пĕр-пĕринпе вырăсла калаçмалла текен хушу та тухнă. Тăван чĕлхепе литература урокĕсем те шкулсенче сахал пулнă. Чăваш чĕлхине сивлени, хака хуманни çамрăк вĕрентекенĕн чунне питĕ ыраттарнă. Вăл хăй умне пысăк тĕллев лартать: йывăр пулсан та шкул сакки çинче ларакан ачасене чăваш чĕлхипе тата литературипе çирĕп те тарăн пĕлӳ парса, ун урлă тăван ене, çĕршыва юратма, хисеплеме вĕрентмелле.

О.А. Архипова учительница ачасемпе пĕрле çыру ĕçĕсене чăваш чĕлхи кабинетĕнче сӳтсе явать

Ольга Александровна пысăк тĕллевсене пурнăçа кĕртессишĕн сахал мар ĕç тунă, чунне парса ĕçлеме тăрăшнă. Юманай шкулĕнче вăл йĕркелесе янă чăваш чĕлхипе литература кабинетне пырса кĕрсенех чăвашлăх тĕнчине лекнĕн туйăннă. Пĕр стени çинче К.В. Иванован вилĕмсĕр «Нарспи» поэми тăрăх ӳкернĕ «Нарспипе Сетнер валак умĕнче» илемлĕ ĕç. Тепĕр стени çинче чăваш патриархĕн Иван Яковлевич Яковлевăн пысăк портречĕ. Ун айĕнче «Чăваш халăхне панă халал» сыпăкĕ. Чăваш кабинечĕнче - илемлĕ чăваш тĕррисем, ятарлă стендра - ачасем чăвашла

çырнă хайлавсем. Ан тив, çав класра чăвашлăх сывлăшĕ сисĕнсе тăтăр, Çеçпĕл халалĕсен туйăмĕ палăртăр, чăваш çыравçисен кĕнекисем пулччăр. Унта ачасем хăйсене чăваш ĕçне малалла аталантарас çынсем пек шутлаччăр.

Ачасене «Ылтăн тата хурçă перо» тăван чĕлхепе литература кружокне явăçтарнă: сăвăсем, тĕрлĕ калав çырма вĕрентнĕ. Вĕренекенсем майĕпен çырас ĕçе те хутшăнаççĕ, литература кружокĕнче пĕр-пĕрин хайлавĕсене сӳтсе яваççĕ. Пиçсе çитнĕ хайлавсем «Çамрăк хунавсем» литература альманахĕнче, «Пионер сасси», /«Тантăш»/ хаçатра, «Хатĕр пул» /«Самант»/ журналта пичетленнĕ.

Тăван чĕлхе вĕрентекен çамрăк сăвăçсемпе çыравçăсене урокра çеç мар, класс тулашĕнчи ĕçсене те явăçтарнă, вĕсене тĕрлĕ енлĕ аталанма пулăшнă. Кашни чăваш сăвăçин е çыравçин пултарулăхне тĕпе хурса (çуралнă е вилнĕ кунне, юбилейне палăртса) литература каçĕсем ирттернĕ, вулав конференцисем, кĕнеке куравĕсем, презентацисем, тĕрлĕ конкурс (пăхмасăр сăвă калакансен, сочинени çыракансен ăмăртăвĕсем) йĕркеленĕ.

Чăваш чĕлхипе литературине вĕрентме методика тата кăтарту пособийĕсем пулман вăл вăхăтра. Урокра усă курмалли тĕрлĕ кăтарту хатĕрĕ, меслет кăтартăвĕ хатĕрлессипе те палăрса тăнă учительница. Пултаруллă педагога Шупашкарти вĕрентекенсен пĕлĕвне ӳстерекен института час-часах чĕннĕ. Сăмахран, 1972 çулта унăн опычĕпе ыттисене паллаштарасшăннине пĕлсен хастар вĕрентекен лекци вулама килĕшнĕ. Вăл вăхăтра чăваш урокĕсене ирттерме кăтарту хатĕрĕсем пулман пирки чăваш чĕлхине вĕрентекенсемшĕн Архипова О.А. ĕç опычĕ питех те кирлĕ те усăллă пулнă.

Халăх пултарулăхне аталантарас енĕпе те пысăк хавхаланупа тăрăшнă Ольга Александровна. Тăван халăх йăли-йĕркине аталантарас, юрри-ташшине упраса хăварас тĕллевпе шкул ачисемпе, ял яш-кĕрĕмĕпе фольклор ушкăнĕ йĕркеленĕ учительница. Ку енĕпе шкулта музыка вĕрентекен

О.А. Архипова йĕркеленĕ шкулти фольклор ушкăнĕ, 1977 ç.

пултарулла Владимир Васильевич Петров хытă пулăшнă. Ачасемпе аслисем хăйсемех чăваш тумĕ çĕленĕ, хĕрачасем пуçа тăхăнмалли хатĕрсем ăсталанă. Ĕç урокĕсенче Петр Степанович Тарасов ачасене консерва банкисенчен тенкĕсем касса кăларса тухьясемпе шӳлкемесем тутарнă. Ку ĕçе пĕтĕм шкул хутшăннă.

Ачасемпе çамрăксенчен йĕркеленĕ фольклор ушкăнĕпе ăçта кăна çитмен пуль! Уйрăмах чăваш халăх юррисене юрлама, ташлама, юмах-халапа спектакль туса лартса выляма, концертсемпе республикăри тĕрлĕ ял-хулана çӳреме килĕштернĕ ачасем. Чăваш тумĕллĕ пикесем сцена çинче шыв юххи пек юхма-кумма пуçласан, илемлĕ чăваш кĕвви-юрри янраса кайсан, камăн чунĕ савăнмĕ? Чун хавалĕ çĕкленнипе чылай куракан пĕрле ташша ярать, аслисем савăнăçлă пăлхану куççульне чараймаççĕ, çамрăклăхне аса илеççĕ. Чăваш халăхĕн мĕн авалтан пыракан йăли-йĕркине ăста кăтартать пултарулăх ушкăнĕ. Республика шайĕнче тĕрлĕ темăпа иртекен халăх пултарулăхĕн смотрĕсенче те, фестиваль-конкурссенче те çак ушкăн сахал мар пĕрремĕш

вырăнсене тухнă. Рспубликăн массăллă информаци хатĕрĕсенче фольклор ушкăнĕн ĕçне-хĕлне çутатсах тăнă.

Ольга Александровна – пултаруллă литератури тĕпчевçи. Вăл вĕренекенсемпе пĕрле Çĕмĕрле тăрăхĕнчи ял халăхĕнчен ваттисен сăмахĕсем, такмаксем, каларăшсем, авалхи юрăсем мĕн чухлĕ пухман-ши! Ачасене ламран лама, ăруран ăрăва куçакан асатте-асаннен, кукаçи-кукамай тата атте-аннен пултарулăхĕпе паллаштарни, тăван ялпа шкул, тăван ен историне тĕпчени, вĕсене пухни, тĕпчев ĕçĕсем туса пыни пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнă. Вĕренекенсем çав пархатарлă ĕçре чĕлхе пуянлăхне ӳстернĕ, ытарлăхпа сăнарлăх туйăмне аталантарнă. Çапла майпа тухăçлă ĕçленипе фольклор ансамблĕн репертуарĕ те пуянланса пынă.

О.А. Архипова П. Хусанкайăн «Тури Вылта туй сикет» поэмăна вулать. Юманай клубĕ, 1978 ç.

Архипова О.А. пуçарăвĕпе шкулта вĕренекен ачасен ашшĕ-амăшне явăçтарса чăваш халăх уявсем тата тĕрлĕ мероприяти ирттернĕ. Çав мероприятисенче ал ĕç ăстисен ĕçĕсемпе шкулта чăваш тĕрри-эрешĕн куравĕсем тăтăшах йĕркеленĕ. Ял халăхĕ ашшĕ-амăшĕ ачисемпе пĕрле сцена çинче чăваш юррисене шăрантарнине, ташăсемпе савăнтарнине пахаланă. Вĕренекенсемшĕн те, ял-йышшăн та çакă чун апачĕ, чун ăшши пулнă. Ашшĕ-амăшĕ вĕрентекенсем пулăшнипе ачи-пăчине чăвашлăх туйăмне парса çитĕнтернĕ.

Пурăна киле шăпах çак вучахран шăранса тухаççĕ те ĕнтĕ паллă чĕлхеçĕсем, артистсем, фольклористсем, чăваш ўнерçисемпе культура ĕçченĕсем. Ольга Архиповăн вĕренекенĕсен хушшинче Чăваш Республикинче, Раççейре паллă çын пулса тăнисем чылаях. Вĕсем йышĕнче çар çыннисем те, ученăйсем те, патшалăх тытăмĕнчи ертўçĕсем те, хуçалăх ĕçĕнчи пысăк ăстасем те пур: филологи ăслăлăхĕсен кандидачĕ, «Халăх шкулĕ» журнал ĕçтешĕ, «Тăван ен культури» тата «Тăван чĕлхе» кĕнекесемпе ĕç тетрачĕсен авторĕ **Олег Кульев чĕлхеçĕ;** тĕнчипе паллă врач-невропатолог, медицина ăслăлăхĕсен докторĕ, профессор **Георгий Иваничев;** патшалăх деятелĕ, экономика ăслăлăхĕсен кандидачĕ, доцент, Раççей Федерацийĕн Президенчĕ çумĕнчи Чăваш Республикин полномочи представителĕ (2012-2016) **Леонид Волков;** полковник **Александр Якимов;** техника ăслăлăхĕсен кандидачĕ **Артем Соловьев;** биологи наукисен кандидачĕ, Чăваш патшалăх аграри университечĕн доценчĕ **Поликарп Смирнов;** ветеринари ăслăлăхĕсен кандидачĕ, Чăваш патшалăх аграри университечĕн доценчĕ **Геннадий Еремеев;** патшалăх деятелĕ, Чăваш Республикин культура, национальноçсен ĕçĕсен тата архив ĕçĕн министрĕ (2008-2012, 02.2020-09.2020); Раççей патшалăх аграри университечĕн Тĕп наука вулавăшĕн директорĕ - К.А. Тимирязев ячĕпе хисепленекен МСХА (2013-2019); Чăваш наци вулавăшĕн директорĕ (2001-2002, 2012-2013, 2020-) **Роза Лизакова;** патшалăх деятелĕ, офицер-ракетчик, юридици ăслăлăхĕсен

кандидачĕ, финанс, банк, налук енĕпе законлă прависен право экспертизĕн тата закон кăларакан Патшалăх Думин пай пуçлăхĕ (2003-2004) **Михаил Максимов;** производство тата вĕренӳ йĕркелӳçи, техника ăслăлăхĕсен кандидачĕ, Чăваш Республикин ал ăсталăхне тата предпринимательствăна аталантаракан ĕçĕн министрĕ (1996-1997), Атăлçи филиалĕн çул-йĕрпе автомобиль тата техника Мускав университечĕн (МАДИ) ректорĕ (2000-2011) **Владимир Федоров;** медицина ăслăлăхĕсен кандидачĕ, доцент **Владимир Евграфов;** педагогика ăслăлăхĕсен кандидачĕ, отставкăри милици подполковникĕ, Атăлçи филиалĕн çул-йĕрпе автомобиль тата техника Мускав университечĕн (МАДИ) доценчĕ **Святослав Осокин;** Чăваш Республикин Шупашкар хулин пĕтĕмĕшле вăтам пĕлӳ паракан 19-мĕш шкулĕн психологĕ тата социаллă педагогĕ, музыка учителĕ **Любовь Осокина;** отставкăри милици подполковникĕ, Чăваш Республикин ШĔМĕн пай пуçлăхĕ (2008-2011), вăрçă ĕçĕсен ветеранĕ **Геннадий Осокин;** отставкăри милици майорĕ, юрист, композитор, юрăç, халăх музыкçисен пултарулăхне аталантараканĕ, «Тарават» юрă ушкăнĕн ертӳçи **Клара Осокина;** Чăваш Республикин Вăрнар районĕнчи пĕтĕмĕшле вăтам пĕлӳ паракан Аçăмçырма шкулĕн завучĕ, физикăпа математика тата технологи учителĕ, Раççей Федерацийĕн халăха вĕрентес ĕç отличникĕ **Владимир Ежов,** Çеçпĕл Мишши ячĕллĕ çамрăксен театрĕн пултаруллă артисчĕ, Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ артисчĕ **Николай Дмитриев;** «Туслăх» халăх фольклор ушкăнĕн тата «Вольница» казах юррисен халăх ансамблĕн ертӳçи, Чăваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ **Николай Алексеев** тата ыттисем те.

Пурнăçпа тан утать

Паянхи кун Ольга Александровна тивĕçлĕ канура пулсан та унра иксĕлми хастарлăх, ĕçченлĕх, пултарулăх тапса тăрать, хăйĕн патне илĕртет. Ăна 91 çулта тесе калама питĕ

йывăр. Сумлă ветеран чăннипех те пуян, нумай енлĕ, интереслĕ пурнăçпа пурнать. Вăл тăтăшах халăхпа пĕрле. Çĕмĕрле районĕнчи Юманай ялĕнчи «Мерчен» пултарулăх ушкăнĕпе тĕрлĕ яла, района тухса çӳрет, фестиваль-конкурса хутшăнать. 2017 çулта СССР халăх артисчĕ Вера Кузьмина ячĕллĕ илемлĕ вулав конкурсĕн лауреачĕ пулса тăчĕ. Ольга Архипова çамрăксемшĕн ырă тĕслĕх. Паян та çитĕнсе пыракан ăрăва тивĕçлĕ воспитани парас ĕçе пысăк тимлĕх уйăрать. «Çар мухтавĕн календарĕ» çарпа патриот вулавĕсем, Тусай ялне никĕсленĕренпе 600 çул, Юманай шкулĕ уçăлнăранпа 125 çул тата Чăваш литературин классикĕ Константин Иванов çуралнăранпа 130 çул çитнине халаллланă уявсем, Ватăсен кунĕ тата ытти те – вăл хутшăннипе иртекен мероприятисене шутласа та пĕтереймĕн.

Тусай ялĕ 600 çулта. Сцена çинче О.А. Архипова тата К.А. Осокина йĕркеленĕ «Тарават» фольклор ушкăнĕ, 2014 ç.

Кăшăлвирус алхаснă вăхăтра та Интернет уçлăхĕнче иртекен чылай онлайн-мероприятисене хастар хутшăнчĕ сумлă ветеран. Чăваш Республикин Культура министерстви пуçарса янă Пĕтĕм Тĕнчери «Иванова вулатпăр» тата

«#ПроЧитайЧувашию» флешмобсем, «Читаем вместе = Пӗрле вулатпӑр» фестиваль, «Поэзи кӑмӑлӗ» акци тата ытти те. Çак уявсенче малти вырӑнсене йышӑнма пултарчӗ вӑл.

2020 çулта «Хыпар» Издательство çурчӗн «Чӑваш хӗрарӑмӗ» хаçат тата Чӑваш наци конгресӗ йӗркеленӗ «Вутра та çунман, шывра та путман чӑваш хӗрарӑмӗ» конкурс ирттерчӗ. Ӑна Тӑван çӗршывӑн аслӑ вӑрçинче çӗнтернӗренпе 75 çул тата Чӑваш автономи облаçӗ йӗркеленнӗренпе 100 çул çитнине халалланӑ. Пултарулӑх ӑмӑртӑвӗнче «Публицистика» ярӑмпа чӗлхе илем-сӗтекне, материал содержанине кура Ольга Александровна ӗçӗ пӗрремӗш вырӑна тухрӗ. «Ольга Архипова, ачалӑхӗ вӑрçӑ çулӗсенче иртни çинчен тӗлӗнмелле ӑсталӑхпа çырса кӑтартнӑ. Пӗр шухӑшласан, тӗлӗнмелле асаплӑ вӑхӑт пек, анчах автор шӳтлӗ самантсене те аса илет, хурланмаллине те манӑçа кӑлармасть…», - тесе палӑртать «Чӑваш хӗрарӑмӗ» хаçат редакторӗ Маргарита Ильина.

Вӑл паянхи кун та статьясемпе сӑвӑсем шӑрçалать, калавсемпе очерксем çырать, хаçат-журналта пичетленет. Радиопа тата сенкер экранпа та туслӑ - тӗрлӗ кӑларӑмра ветеранӑн сасси час-часах янӑрать. Унӑн сӑввисемпе нумай композитор юрӑ кӗвӗленӗ. Чӑваш юрӑçисем унӑн юррисене хаваспах шӑрантараççӗ. Çуралнӑ кунӗ тӗлне ветеранӑн «Кун-çул таппи» черетлӗ кӗнеки кун çути курчӗ.

Ольга Александровна 91 çулне халӑхпа чыслать, мӗншӗн тесен тивӗçлӗ вӑл çав чыса: çирӗп тытса пыраççӗ пурнӑç тилхепине вӑл вӗрентнӗ ачасем, хӑй çуратса ӳстернӗ ывӑлхӗр те тӑван халӑх умӗнче ырӑ ятпа çӳрет. Çемьен пӗтӗмӗшле педагогика стаже 550 ытла çул шутланать.

«Тӑван чӗлхешӗн, чӑвашлӑхшӑн яланах çунни ватӑлма памасть», – тет паян хисеплӗ Ольга Александровна. Çав пархатарлӑ туртӑма эпир унӑн пурнӑçӗнче те, ӗçӗ-хӗлӗнче те аван куратпӑр. Кӑçал Чӑваш автономи облаçне йӗркеленӗренпе 100 çул çитрӗ. Çавна май ветеран ӑшри вӑй-халне пухса тӑван халӑх валли хаклӑ парне «Кун-çул таппи» кӗнеке, «Чун-

чĕре юррисем» юрă пуххи, «Çунатлан, чĕрем» сăвă пуххи тата юрă пуххин «Вĕçет хур кайăк...» электрон кăларăмĕ хатĕрлерĕ.

«Çунатлан, чĕрем» сăвă пуххине вулакансем юратса кĕтсе илессе эпĕ чунтанах шанатăп. Чăвашлăхшăн пурăнакансем пулсан пирĕн халăх нихăçан та пĕтмĕ!

Геронтий НИКИФОРОВ,
Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ вĕрентекенĕ,
Чăваш наци конгресĕн вĕренӳ комитечĕн ертӳçи

Ольга Архипова сăввисем

Пĕрремĕш пайĕ

Чĕрем хушать

Чĕкеç вĕçсе иртет çӳлтен.
Тен, манпалах пуль калаçать вăл?
Апла пулсассăн, ун çинчен
Чунра эп шăрататăп сăвă.

Ак Юманай урамĕнче
Салтак ачин юрри янрарĕ,
Ăна çĕршыв хĕсметĕнче
Чипер тăма пил парам мар-и?

Ял-йыш ниме тăвать паян,
Хываççĕ çĕнĕ çул яланлăх,
Эппин, туссемĕр, хам ятран
Çыратăп юрă асăнмалăх.

Шкул çутă алăкне уçать,
Хитрен утать çап-çамрăк халăх.
Шур хут çине савăнăçа
Кĕртетĕп эп çын вуламалăх.

Шăнкрав килет Шупашкартан –
Хыпар ярать Верукăм, хĕрĕм.
Хĕпĕртесе чунтан-вартан
Каллех сăмах шăрçи эп тирĕп.

Çапла эп хам пурнăçăма
Чăваш сăмахĕпе irttertĕm.
Ыр туртăма сăвва хума
Хушса тăрать мана чĕреçĕм.

ТĂВАН ЕНЕ СĂВАПЛАСА

Ентешĕмсем

Куратăп Шупашкар тӳпемĕнчен
Çавал, ик Шетмĕ, Ункă хушшине.
Чунпа туятăп хам несĕлĕмсен
Вун ĕмĕр витĕр тухнă ăшшине.

Çичĕ çăлкуçăн çичĕ хĕлĕхне
Пĕрлештерсе кĕвве хывать Янкас,
Поэтăн иксĕлми хĕлхемлĕхне
Туйма паян кашни ентеш хавас.

Хĕлип Лукинăн сакăр çĕр юрри
Йăлтах шăраннă çак ытарлăхра.
Кунти тĕнче сипетлĕхĕн ырри
Çӳл тӳпене çĕклет чунăмăра.

Савса сăмах хушать сана, Элли,
Асрах çурет шӳтӳ те кулăшу,
Пире çамрăкланса çĕнелмелли
Эмел пекех, Элли, сан сывлăшу.

Петров Виталин çулăмлă сасси
Йыхрав пек ярăнать асамлăхра, -
Чăвашăн килесси те каясси
Йăлт куранать хĕвеллĕ уçлăхран.

Ытарайми Трак енĕм, тав сана,
Танăш пĕви пек çутăлтăр-и тул.
Тăван кĕтес ума тухсассăнах
Ик куççĕпе тĕллет мана Пайтул.

25.10.2020

Тусайпа Юманай

Мĕнле ял-ши вăл Тусай?
Чунлă ял тет вăл Тусай.
Ахаль мар-тăр çав унта
Çитнĕ Петĕр Хусанкай.

Сăвăçăсене ай-хай-хай
Илĕртет пирĕн Тусай,
Халăхпа аван калаçрĕ
Тусайра Якку Ухсай.

Хамăр ен ачи Аттай,
Çавал тăрăх утнă май,
Хапхаран кĕрсех пуç тайрĕ:
«Тавтапуç сана, Тусай!».

Ман çуралнă ял – Тусай,
Мăшăр-тусăм – Юманай.
Юманайне пырса курчĕç
Сатайпа Йăван Малкай.

Сăвăç ялĕ Юманай,
Юрăç та унта нумай,
Сăвă каçĕ йĕркелерĕç
Унта Тимпайпа Каттай.

Чăваш чĕлхи – вут-хĕлхем,
Чăваш юрри – чăн илем.
Халăха телей пиллеччĕр
Тусайсем, Юманайсем.

22.09.2020

Куçça йăх-несĕлĕ, 1946 ç.

Сулахайран сылтăмалла: Лиза, Васильева Фекла Васильевна 57 çулта (Ольга Александровăн амăшĕ), Евстафий хĕрĕ Маня, Евстафий (Ольга Александровăн (Архиповăн) пиччĕшĕ), Анна Уарова – Евстафий мăшăрĕ, Ольга.

Эпир – Куçça йăхĕнчен

Çавал шывĕ хĕрринче
Уписен тăрăхĕнче,
Хамăр Тусай ялĕнче
Тымар янă тет вĕсем,
Куçça хуçа йăхĕсем.

Майĕпен уçса куçа
Тусайри Куçça хуçа
Пĕчĕккĕн тăвать укçа,
Кантур пек кил-çурт лартать,
Халăха та пулăшать.

Вăйлă тыр-пул ӳстерсе,
Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетсе,
Шкулсенче пĕлӳ илсе
Çĕкленеççĕ Куççасем,
Аслисем, кĕçĕннисем.

Халь куратпăр çав йăхра:
Ăслăлăхри доктора,
Музыкăри маçтăра,
Аслă офицерсене,
Тĕрлĕ ертӳçĕсене…

Тав сире, Куççамăрсем,
Хаклă тăванăмăрсем,
Ытарми çыннăмăрсем!
Ятăр пултăр сумлăхра,
Пуçăр пултăр сывлăхра!

ИЛЕМ КӲРЕН ÇĔН КУНА, АННЕМ...

Çут хĕвелĕм эс, аннем…

Васильева Фекла Васильевна (1889-1954),
Ольга Архиповăн амăшĕ, 1946 ç.

Чĕвĕл чĕкеçĕм аннем!

Пăрчăкан ятпа çӳренĕ аннеме

Чĕвĕл чĕкеçĕм аннем,
Пире пурнăç парнелен.
Савса пăхса ӳстерен,
Çунат хушса вĕçтерен!

Чĕвĕл чĕкеçĕм аннем,
Пĕр канăçсăр вĕл! вĕçен,
Пĕр канмасăр эс ĕçлен,
Чĕппӳсемшĕн хĕмленен!

Чĕвĕл чĕкеçĕм аннем,
Чĕкеç чĕлхи пехиллен,
Чĕвĕл-чĕвĕл чĕвлетсе
Туслăн пурăнма чĕнен.

Чĕвĕл чĕкеçĕм аннем,
Кил вучахне эс чĕртен.
Шанăç паран, хӳтĕлен,
Пурнăçра телей кӳрен.

Чĕвĕл чĕкеçĕм аннем!

2019

Хĕвел пики Хĕвелпи

Хĕвеклене – аннеме-хĕвелĕме

Хĕвел тухать йăл кулать,
Çут тĕнчене ыталать.
Вăл сапалать çĕр çине
Сар ылтăн пек хĕлхемне.
… Савса чĕртет тĕнчене.

Хĕвел пики Хĕвелпи,
Чăн та, эс, хĕвел шевли.
Хĕвел ăшши - сан чунра,
Хĕвел кулли - сан куçра.
…Хĕвел вылять сан сăнра.

Çĕр пин тĕспе тĕр тĕрлен,
Эс чĕрене эрешлен.
Чунри ачаш туйăмна
Ачусене парнелен.
… Илем кӳрен çĕн куна.

Сăвва-юрра шăрантар,
Эс чăваша савăнтар.
Чăваш пики пит хастар!
Санпа пурте мухтанар!
… Телей, хавха çеç сунар!

2019

Сурăм шывĕ

Фекла Васильевна Васильевăна,
юратнă аннеме

Сурăм шывĕ – тулăх шыв,
Тăкăнас пек курăнать.
Симĕс кавир çереме
Йĕпетессĕн туйăнать.

Сурăм шывĕ – тăрă шыв,
Чăпăрт сыпассăм килет.
Чăпăрт-чăпăрт шеп сыпассăн
Чуп тунă пек туйăнать.

Сурăм шывĕ – тăрă шыв.
Чăмса тухассăм килет.
Шыв ытамне лексессĕн
Чуна уççăн туйăнать.

Сурăм шывĕ – лăпкă шыв.
Çамрăк пĕве ачашлать.
Анне ăшă аллипе
Чăпăл тунăн туйăнать.

2019

АТТЕНЕ – ПУРНĂÇ ТЫТКĂЧИНЕ

Тăван çĕршывăн хастар-сатур ĕçченĕ,
икĕ самана салтакĕ, паттăрĕ-патриочĕ

Александров Александр Александрович (1888-1989), Пĕрремĕш тĕнче вăрçин Георгий хĕресĕн 4-мĕш степенĕн кавалерĕ тата аслă унтер-офицерĕ, Ольга Архиповăн ашшĕ, 1914 ç.

Днепр шывĕ

Пĕрремĕш тĕнчи вăрçин паттăрне –
Александров А.А. халалласа

Манăн атте - Александр,
Харсăр тусĕ Ятсăр ун.
Ӳснĕ ачаран пит туслăн,
Эх, хаваслăн вĕçнĕ кун.

Салтака пĕрле ав кайнă, -
Пĕр ротта, патвар взвода.
Вăрçă тухнă, вут-хĕм çуннă,
Икĕ юлташ лекет фронта.

Вăрçă уй-хирне те кĕнĕ,
Çапнă, хирнĕ нимĕçе.
Чăн патшашăн, савнă çĕршĕн
Халăх тăкнă хăй юнне.

Авалхи шыв аслă Днепр,
Мĕн кăна-ши вăл тӳсмен!
Эс юнпа пĕвентĕн, Днепр,
Хĕп-хĕрлех эс, шывлă ен.

Александр, харсăр Ятсăр -
Шав сыхлаççĕ пĕр-пĕрне.
Вилĕмрен çеç Пӳлĕх çăлтăр!!!
Паттăр пулĕç ĕмĕрне.

Вăрманта пырать атака,
Май та çук пуç çĕклеме.
Шав ӳкет çӳлтен мăн бомба,
Шăхăраççĕ пульăсем.

Шартлатаççĕ, хуçăлаççĕ,
Сирпĕнеççĕ йывăçсем,
Каллĕ-маллĕ ав чупаççĕ
Уй-хирти пур чĕр чунсем.

… - Александр, кил кунта,
Шăтăк хатĕр, вăл умра! –
Кăшкăрать тус ман унта,
- Хăвăрт çит, пул ман çумра!

Александр чупса çитрĕ,
Аллинче ун кĕреçе.
Тус патне çитсе çеç ӳкрĕ,
Çурăлчĕ снаряд кĕçех.

- Днепр, Днепр, ан хумханччĕ,
Эс ăнлан пире, ăнлан.
Тӳперен ав бомба анчĕ,
Çумăр пек çăвать тăхлан!

Ирсĕррĕн тăшман алхасрĕ,
Никама та хĕрхенмест.
Вăл перет, чикет. Эх, асрĕ!
Днепр çумнеллех хĕсет.

… Кăшкăрать: «Капут!» Чупать.
Штыкпала çынна тирет.
Этеме перет, асать,
Никама та шеллемест.

- Ятсăр, кил кунта, таратпăр,
Днепр урлă каялла.
- Тăшманран, çук, хăрамастпăр,
Талпăнатпăр малалла.

- Ав, килет тăшман тӳпе пек,
Хирĕçни, кур, кăлăхах.
- Пултăрах тăшман тӳпе пек,
Тарçă пулмăпăр çавах!

- Александр, тар хăть эсĕ,
Çук халь пархатар манра!
Эх, ишме пĕлместĕп эпĕ,
Путăп пур пĕрех шывра.

- Матти! - терĕ вăл çиллессĕн,
- Çĕнтеретпĕр тăшмана! -
Çавăрса тытать хĕрӳллĕн
Аллинчи кив пăшала.

… Днепр шывĕ пăтранать,
Халăх çӳç пек тăкăнать.
Кун-çул сӳннĕ ӳтсене
Днепр илчĕ хӳтлĕхне.

Аслă Днепр лăпкă мар,
Хумханать, те хурланать,
Тен, вăл куççульпе йĕрет?
Ун çыранĕ йĕпенет.

Днепр шывĕ шав шавлать,
Саша чунĕ тулашать:
«Çăлаймарăн Ятсăра,
Хăвăн çывăх чăн тусна!

Тăкрăн эс вĕри юнна,
Упраймарăн юлташна.
Çĕнеймерĕн тăшмана,
Сыхлаймарăн патшана.

Çапăçрăн арслан пекех,
Тивĕçрĕн медаль «Хĕрес»*,
Вăй-хал хутăн камшăн тек,
Пĕлеймерĕн. Мĕн теес!…»
…
*Медаль «Георги хĕресĕ»

2019

Аттене сума суса

Эс атте те асатте.
Çĕр те пĕр çулхи çынна
Юратса та хисеппе
Эс чĕнетĕн: «Асатте»,
Эп калатăп: «Ман атте».

Иртеççĕ кунсем, çулсем,
Каллех нимĕç тапранать.
Фашист пуçĕ çĕкленет,
Тĕнче пуçĕ пулас, тет.

Днепр çинче çапăçу,
Кунта халь сан кĕрĕвӳ.
Питĕ хаяр тытăçу,
Арăслан пек сан ачу!..

2019

«Атте килĕ - эс шур хурăн,
Эс - çĕршывăм, эс - аннем…»

Тусай ялĕнчи Ольга Архиповăн тăван килĕ. Ольга Архипова ашшĕ тăмпа вут сыпписенчен тунă шурă пӳрт.

Атте килĕ - эс шур хурăн

Юратнă аттеме

Шупăр уртнă шурă хурăн
Ман чӳрече умĕнче.
Яланах эс шуррăн курăн
Çурхи тĕттĕм каçсенче.

Илем кӳр эс, шурă хурăн,
Пирĕн аслă урама.
Сан шăршу, сипетлĕ хурăн,
Çĕклентĕртĕр чунăма!

Эп вылятăп, савăнатăп
Каçхи вăйă-кулăра.
Туссемпе пĕрле юрлатăп
Шурă хурăн, сан умра.

Сар пике пек, эсĕ хурăн,
Пирĕн аслă урамра.
Кил илемĕ евĕр курăн
Çывăхран та аякран.

Атте килĕ - эс шур хурăн,
Эс - çĕршывăм, эс - аннем.
Яланах эс пурăн, хурăн,
Илемлет тăван çĕре.

2019

Атте лартнă ушкăн хурăн

Аттене – пурнăç тыткăчине

Атте лартнă ушкăн хурăн
Çилпе лăпкăн хумханать.
Атте лартнă ушкăн хурăн
Пире ырлăхне парать.

Çуркунне юхать сĕткенĕ,
Парать сывлăх çынсене.
Пылак хĕрлĕ çĕр çырлийĕ
Чĕнет шăппăн хăй патне.

Атте хутнă шур мунчийĕ
Хушать вăй пире пĕрмай.
Атте хĕртнĕ çĕн милкийĕ
Ӳте çемçетет самай.

Çатлатать, пиçет кăмпийĕ
Атте чĕртнĕ вучахра.
Куçĕнче - хĕвел шевлийĕ -
Тус-тăван халь хăнара.

11.05.2019

Тăван ял-йышпа. Тусай ялĕ

Малти ретре: Александров Александр Александровичпа (Ольга Архипова ашшĕ) юнашар Ульяна, ун çумĕнче Лука Александровичăн мăшăрĕ Евдокия; *çӳлти ретре сулахайран сылтăмалла (пиллĕкмĕшĕ):* Евстафий мăшăрĕ Анна.

Йӳçĕ пыл

Аттене халалласа - шӳтлесе

Пăрăç, хĕрен, горчица
Вар-хырăма чĕпĕтет.
Апат çиес кăмăла
Вăйлăн кăна ӳстерет.

Пирĕн атте вată çын,
Вăл шӳтлеме юратать.
Атте тавра вун-вун çын -
Хăй тĕрлĕ ал ĕç тăвать.

Аттен сĕтелĕ çинче -
Горчица чи варринче.
Вăл хăй ăна хатĕрлет,
Тен, çавăнпах хыт хĕртет.

Кӳршĕ хĕрне Маруçа
Чĕнет атте хăнана.
Апатпа сăйлать хуçа:
«Çитерем-ха пыл сана!»

Çăкăр тытать ват атте,
- Ытларах сĕр, - тет Маруç.
- Сан пыл, мĕн, сахал-им?- тет,
- Ман кăмăла эс ан хуç.

Атте шӳте кăмăллать,
Шеллемест горчицăна,
Маруç чыхăнса каять,
Атте кулать лĕх! кăна.

2019

Лартар, туссем, йывăçсем!

Куççа мучине – аттеме

Манăн атте пит хастар,
Пур ĕçре те вăл вăр-вар.
Тĕрлĕ йывăç шав лартать,
Шур хурăна хыт хаклать.

Пахчара мунча тавра
Лартнă атте хурăнсем.
Лăпкă халь ман чунăмра -
Юрă юрлаç кайăксем.

Çил лăпкать хурăнсене,
Тутлă шăрша вăл сарать.
Хумхатать çулçисене,
Хурăн пуçне, ав, таять.

Атте мана мунчара
Ыррăн çапать милĕкпе.
Пăсланакан сывлăшра
Такмаклать хăй майĕпе:

- Пур усалли – чул çине!
Мĕн пур ăшши – сан çине!
Çирĕп пул эс сывлăхран,
Чир-чĕрпе ан асаплан!

Ăшă çурхи кунсенче
Хурăн парать ырлăхне.
Тутлă шывпа хăналать,
Усă тăвать, вăй хушать.

Йĕпе-сапа кунсенче
Шурă хурăн айĕнче
Кăрăç кăмпи çитĕнет,
Ытарма çук илĕртет.

Çутă хĕвел айĕнче
Хурăн çырли хĕрелет.
Симĕс çулçи ăшĕнчен
Татса илме хăй чĕнет.

Лартар, туссем, йывăçем,
Çăка, хурăн, каврăççем.
Çĕршыв пулсан пит хитре
Пулĕ телей чĕрере!

19.02.2019

АСРАХ ЭС, ВОЛОДЬ ПИЧЧЕ, ЧĔРЕМĔН ВАРРИНЧЕ...

Владимир Александрович Александров ашшĕ килĕ умĕнче. Тусай ялĕ

Тĕнче курма…

Володь пичее халаллатăп

- Килтен ниçта тухса курман,
Кил умĕнчен пĕлмен кайма,
Атя, Улька, тĕнче курма, -
Чĕнет мана çывăх тăван.

Тухсан куран – урлă урам,
Хăвах пĕлен – вăйă вылян.
Чи варринче пысăк урам.
Ик енĕпе пĕчĕк, куран.

- Володь пичче, тĕнчи ăçта,
Халь ăçталла ман утмалла?
- Ман хыççăн ут, эп ăçталла –
Çавăнталла сан пымалла.

Тусай урамĕ сарлака,
Ик енĕпе йăмра, çăка.
Ĕç бригади пек уялла
Кĕтӳ каять унпа çулла.

Утатпăр анлă çулпала
Анаталла, улăхалла.
Тусан вара, ай, тур-турах,
Йăсарланать пĕлĕт майлах.

Мал еннеллех утатăп эп,
Васкатăп çут тĕнче курма.
«Аннен шăрçи çуп-çутă, шеп:
Тĕнче те çутă-ши çапла?»

- Володь пичче, тĕнчи ăçта?-
Ыйтатăп эп. - Кил ман пата.
Мĕн пур умра е аякра,
Веçех сăна, мана кала…

Умра тусан, хыçра тусан -
Çут тĕнчене епле тупан?
Çуртсем лараççĕ – йывăçран.
Пӳрт тăррисем – кив улăмран.

Тен, улăм ăшĕнче тупан?
Карта-вĕрлĕк те йывăçран.
Çапла çав пурнăç хĕсĕкки,
Мĕскер ăнлантăр пĕчĕкки?

(… Пиччĕшĕпе Улька пырать,
Улăх-çаран хыçа юлать.
Ик пĕртăван çавах утать,
Çавал хĕрне çитсе тăрать).

Çавал пуян, мĕн кăна çук,
Савăнмалли кунта мĕн чул?
Шапа хуппи, качă-мăчи,
Ачасене вылямалли.

Пухатăп эп сиксе чупса,
Пĕчĕк чунпа, ай, савăнса:
- Епле хитре – чăн-чăн «укçа»!
Пичче, çути кĕрет куçа!..

Явăш арманĕ ав кĕрлет
Тыр авăртса çăнăх тăвать.
Таврари ял кунта килет,
Ыраш та тулă авăртать.

Çак армантан тухать Гури
Тусай çынни вăл – шкул ачи.
- Улька пит харсăр хĕр пĕрчи! -
Шалт! тĕлĕнет хальхи Гури.

- Атьăр киле, çул май вăрра!
Санюк пахчи çур çухрăмра.
Пахча тулли улми-çырли,
Тĕм тĕрлĕ тутлă пан улми.

Малтан пулса Санюк пахчи,
Халь ку пахча - колхоз пахчи.

Хутор хуçи пуян Санюк
Пурнас тесе, пуяс тесе
Çавал хĕрне çĕрне сарать,
Сад ĕрчетет, сутă тăвать.

- Çитрĕмĕр, - тет, - хайхи Гури.
- Шыв урлă халĕ каçмалла.
Йĕм пĕççине тавăрмалла,
Улька, эс кĕпӳне майла.

Памасăр сас утар, ан çи,
Ан куртăр садăн хуралçи, -
Хушать пире Гури каллех.
Вăл хушнине итлемеллех.

Ак çитнĕччĕ çыран хĕрне,
Эп тытнăччĕ пĕр тымартан.
Яр! шурĕ пĕр урийĕ ман,
Шаплатрăм хыттăн шыв ăшне.

Йытти хаяр, урса вĕрет,
Хуралçă пăшалпа перет…
Володь мана алран туртать,
Çавал хĕррипеле чупать.

Гурийĕ чи малта пырать,
Çинçе саспа вăл кăшкăрать:
- Тусай арман патне çитер,
Ларса йӳç пан улми çиер!

Шăвать-çке вăхăт, сисĕнмест,
Сĕм каç та çывхарса килет.
Ав таврăнаç хĕрсем ĕçрен.
Утаç Шăмар варĕпелен.

Володь мана алран тытать,
Хĕрсем хыççăн вăл чуптарать.
Килеççĕ хирĕç икĕ çын,
Çĕн чĕлĕм хыпнă ик арçын!

Пĕри вăйпах тем хирĕçлет:
- Пĕл, чĕлĕм ялтăр çутатмасть,
Ку кашкăр куçĕ çуталать,
Пире вăл хирĕç ав килет.

Куçа хупса эп иличчен
Пĕр çын та ман умра ав çук.
Эп çырмаран хăпариччен
Эх, сурăх çулĕ – майĕ çук.

Володь мана, эх, сĕтĕрет –
Çырмийĕ çӳллĕ, шиклетет.
Йĕпе кĕпи пит кансĕрлет.
Ӳте-тире çӳçентерет.

Хăпартăмăр - ыраш ани.
Пит çӳллĕ, çын та курăнмасть.
- Тинех хăтăлтăмăр, ари! –
Ман пуçăм хăвăрт шухăшлать.

Çук, васкас мар-ха савăнма.
Эп тăрăшам-ха ăнланма:
Ыраш ани вăл - тинĕс пек,
Шалта вĕри мунчри пек.

Чăнах та пăчă, пăчă-çке,
Сывлас тесен те сывлăш çук.
Çăра ырашĕ хушшинче
Ура пусма та вырăн çук.

Ыраш тумран шав çакланать,
Такăнтарса та ӳкерет.
Упаленсе те уттарать,
Ял ăçталла – никам пĕлмест.

- Итлер-и йытă вĕрнине,
Сас хăш енчен илтĕннине?
Чухлайăпăр ял ăçтине, -
Калать Володь хăй шухăшне.

Ура çинче тăрса итлет,
Выртса та итлесе пăхать.
Анчах пĕр сасă та килмест.
Вăл хурланса йĕрсе ярать.

Володь ларса ав ĕсĕклет.
Йĕретĕп эпĕ те саспах.
Йĕпе кĕпе çўçĕнтерет.
Пите хыт чĕпĕтет пучах.

Нăшăклатса-çке ывăнсан,
Вăшт! тăчĕ ик ури çине.
Туртса мана та тăратсан,
Вăл путрĕ шухăш авăрне.

- Итле-ха, - тет, – ав, сас килет,
Шăп çав енчен-çке йыт вĕрет.
Апла тăк, ялăм çав енче.
Атя, утар çав еннелле.

(…Ачасене тин чун кĕрет.
Улька кулать те, хĕпĕртет -
Кĕпе йĕпи те сисĕнмест.
Ўксен те ним те чĕпĕтмест).

Тухайрăмăр тапаçланса
Çăра ыраш хушшийĕнчен.
Хĕпĕртесе те савăнса
Эх, кĕтĕмĕр ял хапхинчен.

Яш-кĕрĕм вăйă шеп вылять
Йĕри-тавра шăв-шав тăрать.
Пире ак курчĕç каччăсем,
Шалт! тĕлĕнеççĕ сар хĕрсем.

- Володь, Улька, тин çитрĕр-и?
- Çич ют яла лекмерĕр-и?
- Сехре хăппи, эсир мĕнле?
- Шыраççĕ килтисем сире!

Кил умĕнче тăрать арçын,
Пач палламан темле пĕр çын.
- Ку - Петĕр, ку - пичче иккен,
Килсе вăл çитнĕ Çĕпĕртен!

Ятлас, вăрçас, ай, вырăнне
Ĕсĕклесе йĕрет анне.
Тур-турлатать вăл, ахлатать,
Ыталаса хыт макăрать.

Атте, пичче килте-çке мар, -
Пире ав кайнă шырама.
Эх, чупнă юнашар яла,
Унтан уттарнă уялла.

Çавах сехри хăпман аттен,
Ĕненнĕ, шаннă чĕрине.
Куççӳль ӳкмен ун куçĕнчен,
Вăл туйнă эпĕр чĕррине.

Чăн, туслă кулăшпа атте,
Юратнă ыррăн шӳтлеме.
Вăй илнĕ пурăнма йăхран,
Вăл иртнĕ çĕр те пĕр çултан.

Ача сăпкин ункийĕ пур,
Вăл маччарах халь те! Кил, кур.
Вылянă эпĕ юратса
Çав ункăран шеп çакănса.

Райцентртан атте килет,
Пӳрт алăкне уçса кĕрет.
Атте, пар ункă! – кăшкăрсан,
Çакса яратчĕ ункăран.

Хăй каçăхса кайса кулать,
Мана çав ункăран çакать.
Çап-çут тĕнче курма сĕнет,
Ăçта-ши çав тĕнче? - тĕпчет.

Пиччемĕн ячĕ Евстафи.
Ялта чĕнеççĕ Евчеххи.
Ят калайман ватти-вĕтти
Ялан чĕнетчĕ Еçчăххи.

Пÿрнипеле, ав, юнаса,
Пичче пире, ай, хыт ятлать.
Çурăмпала вĕлт! çаврăнса
Пиртен ахăлтатса кулать.

… Курса эп килтĕм çут тĕнче,
Илемĕ юлчĕ куçсенче.
Асрах, чĕремĕн варринче.
Айван-çке пулнă, эх, тĕнче!

2019

МĂШĂРĂМ, ЭС МАН УМРА, ЭС ЯЛАН ЧУНРА, ĂШРА...

Çĕршывăн шанчăклă ывăлĕ

Архипов Севастиан Михайлович,
Тăван çĕршывăн Аслă вăрçин тата вĕренӳпе ĕç ветеранĕ,
Ольга Архиповăн мăшăрĕ, 1981 ç.

Çăкăр

Чăваш ачине – Çеççима халалласа

Çут çанталăк, çут хĕвел,
Этемсемшĕн çывăх тус.
Пурнăç хаклă мĕнешкел,
Çынсенчен нихçан ан тус.

Сар хĕвел савса çиçет,
Тыр-пул уй-хирте ӳсет.
Çăкăр пур сĕтел çинче -
Пурнăç пур çак çĕр çинче.

Сăпкара ача йĕрет,
Хырăмĕ апат кĕтет.
Амăш чăмлак хыптарать -
Сиплĕ çăкăр вăй парать.

Каччă çитĕнет патвар!
Пур ĕçре те вăл вăр-вар.
Вырăсра вăл – Селифан,
Чăвашра вара – Йăван!

Çут хĕвел вăл пирĕн тус!
Тепĕр чух пулать çав юс.
Çунтарать те, пит хĕртет,
Тыр-пула йăлт пĕтерет.

Çăкăр çук сĕтел çинче,
Курăк çук уй-хирсенче.
Выçлăх шелсĕр алхасать,
Вилĕм çавипе çулать.

Чи асаплă выçлăх çул
Эсĕ килтĕн тĕнчене.
Фашист асрĕ тăвата çул,
Пĕлтĕн çăкăрăн хакне.

Ваттисем сĕтел çине
Пĕр тĕпренчĕк тăктарман.
Çăкăр ăшĕн çемçипе
Пуçса çинĕ. Пăрахман.

Мĕн вăл çăкăр? Ун хакне
Хывнă эс чĕрӳ тĕпне.
Сан аннӳ те асаппа
Кĕнĕ çĕре выçăпа.

Ыйтрăн çăкăр виличчен,
Чикрĕн хăвăн кĕсйӳне.
«Юлашки çула», - тесе
Лăпкăн хупрăн куçсене.

Хуçалантăр тĕнчере
Туслăх! Пытăр ĕмĕре!
Йăлтăр култăр çут хĕвел,
Çиттĕр çăкăрлă мехел!

2019

С.М. Архипов, вун улттăри нимĕç чĕлхи учителĕ

С.М. Архипов *(иккĕмĕш ретре сулахайран сылтăмалла улттăмĕшĕ)* вăрçă умĕн Етĕрне училищине пĕтернĕ хыççăн Юманай шкулĕн вĕрентекенĕсемпе тата вĕренекенĕсемпе пĕрле, 1937 ç.

Етĕрнене çул уçă…

Тури Вылă ачине –
Севастиан Архипова

Ĕлĕк халăх хут пĕлмен,
Саспалли те палламан.
Уншăн кĕнеке тени
Йĕр-йĕрленĕ хут татки.

Çĕн тĕнче - çĕн самана.
Халăхăн куçне уçма
Хут пĕлменлĕх пĕтерме,
Ялсенчен хуласене
Янă ăслă çынсене.

Аслă Тури Выл ялне
Янă Шупуççыннине.
Пĕчĕк Çеççим шкул ачи
Поэтпа пĕрле çӳрет.
Çитĕннĕ măн çынсене
Вулама вăл вĕрентет…

Ăс патне çын туртăнать…
Ĕмĕт каччăн çуралать:
«Ман учитель пулмалла,
Пухмалла ăс малалла.

Пултăр вăйлă ман çĕршыв,
Пултăр халăхăм та сыв,
Шухăшсем хăватлă ман,
Ĕмĕтĕм çунатлă ман».

***

… Каччă утрĕ ыткăнса,
Утнă май йăл-йăл кулса.
Кутамкки ун хыçĕнче,
Çутă ĕмĕт куçĕнче.

Шерепеллĕ пиçиххи
Амăш тунăскер хайхи.
Утнăçемĕн хĕмленет,
Çынсене пит илĕртет.
Пир кĕпийĕ çийĕпе
Вăй вылять сар хĕвелпе.

Уринче ун, тупата,
Вĕлтрен хунă çăпата.
Çулĕ вăрăм, тамаша,
Ан ыраттăр сан ура.

Вĕçнĕ евĕр вăл пыртть
Пуласлăха хăвалать.
Çутă ĕмĕт чĕринче,
Ытамĕнче ун - тĕнче.

Утрĕ каччă вĕренме
Хĕрех пилĕк çухрăма.
Вăл çӳрерĕ виç çулччен
Таврари ялтан пĕччен.
Пултарайрĕ вăл илме
Çĕн диплом: «Вĕрентекен».

…Кăмăлĕ ун пит хавас,
Умĕнче пĕрремĕш класс.
Ăс парать куллен-кунах:
«Ылтăнран паха сăмах.
Тăрашса вĕренмелле,
Кĕнеке – чи чаплă тус.
Аслине итлемелле,
Çирĕппĕн, ачам, эс пус.

Халăхра хисеплĕ пул,
Юлташпа эс туслă пул.
Аннене юратнă пек
Çĕршыва юрат эс тек!»

2019

Днепр шывĕ çинче

Иккĕмĕш тĕнче вăрçин
паттăрне – С.М. Архипова

Тăхлан çумăрĕ хыт çурĕ.
Шыва халăх мĕн чул путрĕ.
Днепр шывĕ хыт пăтранчĕ,
Хĕп-хĕрлĕ юнпа пĕвенчĕ.

Тум-тир йывăр, акă, путăп,
Шыв тĕпне часах эп тупăп.
Çăвара сив шыв шав кĕчĕ,
Вăл ман сывлăша пит пӳлчĕ.

Ишме йывăр – эп аманнă, -
Хам ăçти çинчен эп маннă:
«Асаттеçĕм, эс çăлсамччĕ.
Юнашар манпа пулсамччĕ.
Вăрçăра эс ĕлĕк пулнă,
Эс те ман пекех-çке путнă».

… Украин та, белорус –
Авалтан ав пирĕн тус.
Украина офицерĕ
Мана çăлчĕ! Вăл чăн тус!

2019

Тăван Çĕршыв тав тăвать

Çĕршывăн шанчăклă ывăлне -
С.М. Архипова халалласа

Эс - пĕр пĕрчĕ! Пĕчĕк мар!
Эс - пин тумлам! Океан!
Тăшман хаяр, вăйсăр мар,
Вăй-хăватна хытă шан.

Чăваш каччи халсăр мар,
Çакна чунтан халь ăнлан.
Вăл çулăмра, çук, çунман,
Шывра нихçан та путман.

Вăл никамран хăраман,
Пĕл, нихăçан парăнман,
Çавна тăшман ăнланман,
Çакна, юлташ, çук, ан ман!

Эс çапăçрăн паттăрла
Тискер вăрçă хирĕнче.
Çĕклерĕн эс çĕршыва
Мĕн пур тĕнче умĕнче!

Мăнаçлăн халь тĕнчере
Кĕрлет çĕнтерӳ юрри.
Хĕвел çиçет тӳпере,
Чăн-чăн телей мир пурри.

Тăван Çĕршыв тав тăвать:
«Пусмăртан хăтартăн», - тет.
Санра тĕрек вăл курать,
«Ялан пулсам паттăр», - тет.

2019

«Çул кăтартрăн ачаран,
Эс юратрăн чĕререн,
Патăн ăс, пĕлӳ чунтан,
Тав сана, вĕрентекен!»

Çĕмĕрле районĕнчи Юманай вăтам шкулĕн вĕренекенĕсем. *Иккĕмĕш ретре сулахайран сылтăмалла*: шкул директорĕ Архипов Севастиан Михайлович *(виççĕмĕшĕ)*, унпа юнашар Николай Игнатьевич Михайлов завуч.

Юманай вăтам шкулăн вĕрентекенĕсем. *Иккĕмĕш ретре сулахайран сылтăмалла:* О.А. Архипова *(5-мĕшĕ), виççĕмĕш ретре сулахайран сылтăмалла:* шкул ертӳçи С.М. Архипов *(5-мĕшĕ).*

Тавах, учителĕм, тавах!

Севастиан Михайлович Архипова –
вĕренекенĕсен ячĕпе

Пурнăç вĕççĕр улшăнать,
Çĕнелет те вăйланать.
Ыйтрĕ çĕн çын ÿстерме,
Çĕршыва хăват кÿме.

Тивĕçе эс ăнланан,
Çирĕп йĕвене тытан,
Эс ĕçлерĕн вăй хурса,
Лараймарăн лăпланса.

- Вăхăт çиттĕр, ĕç пĕтсен
Канăп, - теттĕн кулăпа.
Вăхăт çитрĕ, халь куллен
Çывăр канлĕ ыйхăпа.

Тĕрĕслĕхпе чăнлăха
Вĕрентрĕн эс хаклама.
Юлташлăхпа туслăха
Хушрăн çирĕп упрама.

Заводра та уй-хирте,
Шыв çинче те тÿпере.
Палăрнă ĕçре çынсем -
Эс вĕрентнĕ маттурсем.

Ывăлу сан хуралта,
Савнă çĕршыв чиккинче.
Вăй хурать вăл чи малта
Сумлă, кирлĕ ĕçсенче.

Эсĕ шаннă ачасем
Илнĕ çирĕп пĕлӳсем.
Чăн профессионалсем –
Пурнăçăн чăн хуçисем!

Тӳпере те, çĕр çинче,
Шыв çинче, шыв тĕпĕнче -
Харсăр, паттăр ĕçченсем, -
Санăн шаннă ачусем!

Çул кăтартрăн ачаран,
Эс юратрăн чĕререн,
Патăн ăс, пĕлӳ чунтан,
Тав сана, вĕрентекен!

2019

Иккĕн утнă çулсем

Юратнă мăшăрăма

Тĕлĕкре курнисем
Пурнăçа килмĕç, çук.
Çуннă çут ĕмĕтсем
Вут кĕлрен пулмĕç, çук.
Чăн-чăннипе чăнахах -
Вут кĕлрен пулас çук.
Пурнăç хаклă, ăнлан,
Ан хурлан эс, тăван.

Иртнĕ кунăн çути –
Халь хура каç карри.
Пурнăç аван, ăнлан,
Ан хурлан эс, тăван.
Чăн-чăннипе чăнахах,
Сĕм хура каç карри.
Пурнăç аван, ăнлан,
Ан хурлан эс, тăван.

Иккĕн утнă çулсем,
Мал ĕмĕтлĕ кунсем –
Халь асаплă каçсем,
Канăçсăр шухăшсем.
Чăн-чăннипе чăнахах -
Канăçсăр шухăшсем.
Пурнăç хаклă, ăнлан,
Ан хурлан эс, тăван.

Ĕмĕтпе çунатлан,
Ĕçӳпе хăватлан.
Халăхран эс ан тус,
Пул унпа ялан тус.
Чăн-чăннипе чăнахах -
Пултăр сан ялан тус,
Пурнăç хаклă, ăнлан,
Ан хурлан эс, тăван.

2019

«Иккĕн утнă çулсем,
Мал ĕмĕтлĕ кунсем...»

Туслă çамрăк çемье, Ольга тата Севастиан Архиповсем, 1961 ç.

Тав тăватăп мăшăра

Севастиан мăшăрăм умĕнче
пуçăма тайса

Мăшăрăм, эс ман умра,
Эс ялан чунра, ăшра.
Икĕ тăлăх-турата
Хӳтлĕх патăн, тав сана!

Чунсăр, пӳтсĕр ашшĕсем
Шеллемеç пепкисене.
Шав шыраç хитре хĕрсем,
Пăрахаç ачисене.

Эс ӳстертĕн юратса
Икĕ пĕчĕк тăлăха.
Эс ăс патăн савăнса,
Хĕмлентертĕн чунлăха.

Хамшăн хаклă мăшăра
Тав тăватăп ăшăмра.
Туслă пурăнчĕ çемье,
Ят ямарăн ял çине.

– Мĕншĕн çук çу яшкара? –
Эп илтмен санран нихçан.
Вутлă çиçĕм сан куçра
Кун-çулра пачах курман.

2019

Севастиан юрри

Куллен юхататăн эс, Çавалăм,
Ик çырану хушшипеле.
Тухаççĕ халăм та хавалăм
Мăн Атăла санпа пĕрле.

Иртеççĕ чунăм та, чĕрем те
Хусан керменĕ умĕнчен,
Шăп çак çулпа хăпарнă ĕнтĕ
Асаттесем кăнтăр енчен.

Чĕмпĕр тени – чăваш сăмахĕ,
Самар та несĕлсен хули,
Ахаль-и Жигули юмахĕ
Чăваш чĕлхипеле тулли.

Чăваш та Атăлпа çӳренĕ
Бурлак пăявĕ тăхăнса,
Хĕнпе асаплăха çĕнтернĕ,
Çĕнтернĕ юрă юрласа.

Ав курăнать Мамай сăртламĕ,
Салам, Мамай паттăрĕсем,
Пин çул иртсессĕн те хуплаймĕ
Хĕвел пек чысăра тусем.

Эс, Атăл, ĕмĕрти аттемĕр,
Тăван та шанчăклă юлташ,
Пуçне тайса чыслать мĕн ĕмĕр
Сана атте текен чăваш.

ТУРИ ВЫЛТИ ЭРХИП МИХАЛИ ТАТА УНĂН МĂШĂРĔ ТАРИ

«Тав сире, аттепеле анне, Йăхăмăр манмасть ятăрсене»



Архипов Михаил Архипович (1887-1972)
Пĕрремĕш тĕнче вăрçин Георгий хĕресĕн кавалерĕ тата унтер-офицерĕ, Севастиан Михалович Архиповăн ашшĕ, Ольга Архиповăн хуняшшĕ.

Архипова Дария Архиповна (1891-1946)
Тури Вылăри И. Сталин ячĕллĕ ял хуçалăх эртелĕнче ĕçленĕ, Севастиан Михалович Архиповăн амăшĕ, Ольга Архиповăн хунямĕшĕ.

Тав сире, аттепе анне

Михаил Архипова,
мăшăрăн ашшĕне, хуняçана,
Дария Архиповăна,
мăшăрăн амăшне, хунямана
халалласа

Тури Вылти Эрхип Михали
Тата унăн мăшăрĕ Тари,
Сирĕн ывăлăр Севастиан
Ырă упăшкаçăм пулчĕ ман.
Çавна май, аттепеле аннем,
Мана кин тесе чĕннĕскерсем,
Халĕ ĕнтĕ нумай çул иртсен,
Тав тăватап сире эп чĕререн.

Пире ыр сăмахпа пиллерĕр,
Ку çын хамăр тĕс мар темерĕр,
Хăвăр кил-йышăра йышăнса,
Халăх йĕркипе телей сунса
Хута кĕрсе чипер усрарăр,
Инкекрен-синкекрен сыхларăр.

Пĕрле нумай пурăнаймарăмăр,
Çапла килсе тухрĕ шăпамăр,
Анчах сирти ырă туртăмсем
Севастианра юлчĕç вĕсем.
Хамăр пурнăçа йĕркелеме,
Ачасене чипер ӳстерме
Пычĕç пулăшса пире вĕсем.

Тав сире, аттепеле анне,
Йăхăмăр манмасть ятăрсене.

АСĂМРИ ÇЫВĂХ ÇЫНСЕМ

Чăваш поэчĕ Н.Т. Ваçанкка тата
чăваш халăх ӳнерçи П.В. Сизов
Архиповсем патĕнче хăнара, 1963 ç.

Пĕрремĕш ретре сулахайран сылтăмалла: Надя, Люся тата Вера хĕрĕсем. *Иккĕмĕш ретре сулахайран сылтăмалла:* С.М. Архипов, О.А. Архипова. *Виççемĕш ретре сулахайран сылтăмалла:* Н.Т. Ваçанкка, П.В. Сизов.

Пирĕн хастар Ваçанкка

Никифор Тарасович Ваçанкка
çыравçа хисеп туса

Ваçанккамăр, Ваçанкка,
Сана епле манăн-ха:
Ураскилтре çуралса,
Чĕлхемĕре юратса
Çырав ĕçне пикентĕн,
Çӳл тӳпене çĕклентĕн.

Çамрăксемпе туслашрăн,
Çеçпĕлпе те паллашрăн.
Хветĕр Павлова курса,
Ĕмĕрлĕхех ал парса
Сăвă-юрă шăратрăн,
Чăваш чунне вăратрăн.

Маяковский Мускавра
Çĕр чĕлхеллĕ уявра
Сан сассуна итлесе
Йăлтах кайрĕ тĕлĕнсе,
Салам, терĕ чăвашла,
Ыталарĕ юлташла.

Ваçанккамăр, Ваçанкка,
Яту яланах паха,
Элĕк сана юратать,
Вăрнар ен те пуç таять,
Асран ямасть Шупашкар,
Эсĕ – пирĕн пархатар.

2020

Эс пур, Сизов

Чăваш халăх ӳнерçине
Петĕр Сизова сума суса

Пулать-мĕн çавăн пек этем, -
Пĕрре курсах юлать асра:
Асамлăн йăлкăшать хĕлхем
Йăлтах асăрхакан куçра.

Петĕр Сизов – Турхан çынни,
Юманайсемшĕн те ентеш,
Ахальтен мар, куратăн-и, -
Пуçне таять ăна пилеш.

Мĕн ачаран, мĕн пĕчĕкрен
Вăл сăнарланă тĕнчене,
Ӳнерлĕхпе тулли чĕрен
Çуначĕ вĕçнĕ тӳпере.

Эс курнă, туйнă Сетнере,
Калаçнă эсĕ Нарспипе,
Çӳренĕ эсĕ Силпире,
Пупленĕ Кантăр варĕпе.

Слак шывĕн çепĕç кĕввипе
Эсир киленнĕ Кĕçтукпа,
Пĕр туйăмпа, пĕр сисĕмпе
Каçкӳлĕм утнă пĕр çулпа…

Сăнарусем паян чунра
Чĕртеççĕ хĕмленен кăвар,
Пĕвӳ те яланах умра,
Эппин, Сизов, эс пур, çук мар.

2020

«Виçĕ тус, виççĕш те элĕксем»

Александр Артемьев, чăваш халăх писателĕ.

Никифор Ваçанкка, чăваш поэчĕ, куçаруçă, писатель, журналист.

Севастиан Архипов, вĕрентекен, тĕрлĕ енлĕ аталаннă йĕркелӳçĕ.

Александр Артемьев алă пусса С.М. Архипова парнеленĕ «Ан авăн, шĕшкĕ» кĕнеке, 1950 ç.

Ваçанкка, Уртемух, Себастьян*

Ваçанкка, Уртемух, Себастьян –
Виçĕ тус, виççĕш те элĕксем.
Шупашкар хулинче тĕл пулсан
Пĕр пек сас кăларас хĕлĕхсем.

Ваçанкки шăрантарнă малтан
Федор Павловăн шеп хорĕнче,
Уртемухĕпеле Сабастьян –
Тури Выл акатуйĕсенче.

Уртемух – «Салампи» çыравçи,
Çакăн пек ăна чĕннĕ Уяр.
Себастьянĕ вара – шкул хуçи,
Юрăра яланах вăл патвар.

Анчĕç виççĕн хай Атăл хĕрне
Себастьян килнине палăртма,
Салтакла тутансан хĕрлине
Кĕç пуçларĕç хуллен юрлама.

«Хĕл илемĕ» те «Сурăм вăрмань»
Çыранра кăлараççĕ хĕлхем.
Ваçанкка, Уртемух, Себастьян –
Виçĕ тус, виççĕш те элĕксем.

*) Туссем хайсем хушшинче Никифор Ваçанкка поэта - Ваçанкка, Александр Артемьев писателе - Уртемух, Севастиан Архипов шкул директорне - Себастьян тесе чĕннĕ.

«Пирĕн туслăх ĕмĕре…»

Ольга Архипова Кудаков Юрий Дмитриевич композиторпа, Раççей Федерацийĕн тата Чăваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕпе, 2014 ç.

Тăван ен кĕввисем

Юрий Дмитриевич Кудакова – чăвашсен
паллă композиторне, ентешĕме

Канмалли кун пединститут доценчĕ
Хутар ялне çитсеччĕ ир-ирех.
Каç пулттипе вара ăна чĕнтерчĕ
Чун-туртăмĕ сап-сарă уй-хире.
Хисеплĕн те ăшпиллĕн пуç таясшăн
Кашни пучах халь композитора:
«Пире вăл юрăра мухтать пулсассăн
Ăна мĕнле пуç таяс мар вара?».

Кудакова вăрман та асăрхарĕ,
Сас пачĕç юмансем те хурăнсем.
Шăкăлчисен кĕвви хавас янрарĕ,
Унтан йышпа пуçларĕç шăнкăрчсем.
Саркайăксем тулли хорпа чысласшăн,
Хăйсем палланă композитора:
«Пире вăл юрăра мухтать пулсассăн
Ăна мĕнле пуç таяс мар вара?».

Ак композитор улăха ăсанчĕ,
Тӳрех ăнланчĕ: саламлать çăлкуç.
Тăван çăлкуç! Мĕнлеччĕ-ха ун ячĕ?
Чим, чим, чĕлхе çинчех тăрать… Илькуш!
Илькуш шăнкрав пекех шăнкăртатасшăн,
Шывне сĕнесшĕн композитора:
«Пире вăл юрăра мухтать пулсассăн
Ăна мĕнле пуç таяс мар вара?».

2020

«Эсĕ – хӳхĕм журналист, Тусай хĕрĕ Роза»

Деменцова (Лукина) Роза Трофимовна, журналист, Чăваш Ен наци радиовĕн аслă редакторĕ, Чăваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ.

Чăваш наци радиовĕн «Чăваш Ен: çулсем тата çынсем» черетлĕ кăларăмĕ

О.А. Архиповăн «Кун-çул таппи» кĕнекин хаклавĕнче. *Сулахайран сылтăмалла:* Г.Л. Никифоров, «Кун-çул таппи» кĕнекен рецензенчĕ тата тĕп редакторĕ; Р.Т. Деменцова, Чăваш наци радиовĕн аслă редакторĕ; В.С. Архипова, «Кун-çул таппи» кĕнекен çум авторĕ.

Тусай хӗрӗ Роза

Роза Деменцовăна халалласа

Эсӗ – хӳхӗм журналист,
Тусай хӗрӗ Роза.
Сăмахран хыватăн эс
Чаплă ариоза.

Юрă евӗр шăратан
Очерк е тӗрленчӗк.
Элли Юрьевпа пӗр тан
Ӳкерен ӳкерчӗк.

Янкас евӗр сăвăça
Курăмлăн сăнлатăн.
Петров евӗр юрăça
Чӗртсе тăрататăн.

Зоя Нестерова-и?
Саншăн çывăх тема,
Шетмӗ е Çавал хăвин
Ытарми илемӗ.

Чăнлăха, тӗрӗслӗхе
Эс уçатăн алăк,
Манăн чун ӗмӗрлӗхе
Саншăн лартӗ палăк.

02.08.2020

«Эсĕ, Алексей, матрос,
Пит хăюллă альбатрос»

Арсентьев Алексей Егорович - Хĕсметре.
Тинĕс-çар флочĕн шыв айĕнчи флот морякĕ. Кронштадт, 1972 ç. Чăваш Енĕн шалти ĕçсен органĕсен сотрудникĕ (1974-1998), общество деятелĕ, Чăваш Республикин ШĔМĕн тата ĕç ветеранĕ, Ольга Архиповăн кĕрӳшĕ.

Эх, Алеша, Алексей!

Арсентьев Алексей Егорович
кĕрĕве юратса

Эх, Алеша, Алексей,
Ҫурма тăлăх ӳснĕ май
Тӳсрĕн йывăрлăх нумай
Пурнăҫ пачĕ ăс самай!
Ăнланмарĕ сан атте
Чăн-чăн пурнăҫ таппине.
Ăнланмарĕ, тен, хăй те
Пысăк йăнăш тунине.

Ытарайми илемпе
Илĕртекен чунсене,
Тăват пĕчĕк пепкене,
Шеллемерĕ хĕрхенсе.

Печĕ тĕпсĕр шăтăка,
Улăштарчĕ ҫич ютпа.
Вĕҫрĕ ҫĕн кун-ҫул тума,
Ырлăхпа шеп савăнма.
Юлчĕ аннӳ асапа
Т(ă)вată пĕчĕк ачапа.
Йывăр пулчĕ ӳстерме,
Ҫунат хушса вĕҫтерме.

Хуҫăк ҫунат айĕнче
Ун ачаш ытамĕнче
Ӳсрĕн, ҫитĕнтĕн патвар,
Пур енчен эс халь хастар.
Эсĕ мĕн пĕчĕкренех
Хăнăхран аҫу ĕҫне.
Эс ăнлантăн кулленех
Пурнăҫ тути-масине.

Хĕсметре маттур матрос,
Пит хăюллă альбатрос,
Сан секретлă ятсăр ут -
Шыв айĕнчи пăрахут
Тӳсрĕ асап нумай хут.

Тинĕсре киммӳ ишет,
Çĕршыва вăл хӳтĕлет.
Шыв айне вăл пĕр чăмать,
Çиеле каллех тухать.
Витĕнет вăл хумсемпе,
Кĕрешет тăшмансемпе.
Тӳсрĕн эс асап çĕр хут,
Пулчĕ сан çӳçӳ шур хут…

Эс ӳстертĕн икĕ чун,
Ик чунра та пĕр пек юн.
Вĕçертмерĕн ытамран,
Çирĕп тытрăн алăран.
Эс хушмарăн çĕн çунат,
Эс вĕçмерĕн ют çĕре.
Йăвvунта вут-хĕм çунать,
Саншăн савăнать чĕре.

Савăн халь эс, Алексей,
Чĕппӳсем нумай, экей!
Пăр-р-р! вĕçсе килеç киле,
Юратса чунтан пилле.
Мăнаçлан ĕçтешсемпе,
Пархатарлă ĕçӳпе.
Çынсене упра чунпа,
Пул ялан эс халăхпа.

29.10.2020

ТĂВАН ТĂРĂХ ТУРТĂМĔ

Çут çанталăк

Çаврăнать çĕр хăй тавра,
Çут çанталăк улшăнать.
Кĕрĕ, хĕлĕ вăхăтра
Çулсерен шав ылмашать.

Сив хĕлле хытах шăнтать
Чĕпĕтсе   питрен-куçран.
Ачапча пач хăрамасть,
Ярăнать ÿксе тара.

Çулла шăрăх пĕçертет,
Ӳт-пĕве хыт çунтарать.
Ачапча пач шикленмест,
Пĕверен тухма пĕлмест.

Сар хĕвел йăл-йăл çиçет -
Çуркунне хавас янрать.
Ачапча пит хĕпĕртет,
Пăрахут хутран тăвать.

Ылтăн кĕркунне çитет,
Çимĕçпе вăл хăналать.
Ачапча наччас   ÿсет -
Тутлă çимĕç пулăшать.

23.02.2019

Пакша

Шӗшкӗлӗхе хумхатать
Вăштăр-вăштăр çил вӗрсе.
Тулнă măйăр тăкăнать,
Пуçтарать пакша хӗрсе.

Хӗл валли вăл хатӗрлет,
Йăвине ав тултарать.
Ывăнма пакша пӗлмест,
Тултарать те тултарать.

Măйăр тутлă сап-сарри!
Вăй парать вăл пакшана.
Пулӗ вăл чи самăрри -
Хӗл хăратмӗ тек ăна.

2019

Сипетлĕ хурăн

Шупăр уртнă шурă хурăн
Чўречемĕр умĕнче.
Пирĕнпе юрлать вăл юрă
Çурхи ăшă каçсенче.

Эп утатăп, савăнатăп,
Тантăшсемĕр ретĕнче.
Хурăн, халь сана куратăп
Хамăр вăйă картинче.

Пĕвўпе те эс илемлĕ,
Çепĕç эсĕ чунупа.
Çав илемлĕх, çав черченлĕх
Яланах çўрет манпа.

Сар пике пек, эсĕ хурăн,
Пирĕнпе ташлан, юрлан.
Чĕререх ялан эс пурăн
Ытарми сăнупалан.

2019

Кĕрхи кăмăл

Кăштах тĕксĕмленет тĕрленчĕк,
Кăштах салхуланать хĕвел.
Тĕрлесшĕн çумăрлă ўкерчĕк
Чăваш çĕршывĕнчи тĕпел.

Çапах хĕрў куçпа пăхасшăн
Куçран сап-сарă вĕрене,
Сар тенкĕпе вăл саламласшăн
Атăл аттемĕр тĕррине.

Астутарса ларать хăвалăх
Пуçа усас марри çинчен:
Салхулăхра та пур хаваслăх
Эпир ăна тупма пĕлсен.

20.09.2020

Ула такка

Так-так-так-так-так!
Янăрать вăрман!
Так! таккать: так-так!
Сăр ула такка!

Хумханать вăрман -
Ав, хăрать юман,
Чирлӗ хурлăхан,
Хурланать палан…

Так-так-так-так-так!
Ан хумхан, вăрман,
Тухтăр сан çумрах,
Сыватать аван.

Савăнать вăрман -
Ешерет юман,
Хӗп-хӗрлех палан,
Пиçнӗ хурлăхан.

Так-так-так-так-так!
Тав, ула такка.
Чӗрӗлнӗ вăрман
Вăй парать çынна.

Так-так-так-так-так!

07.04.2020

Çумăр хыççăн

Çумăр хыççăн тӳпере
Илтĕнет тăри сасси,
Юратса çурхи нӳрре
Йышăнать суха сасси.

Шăтса тухĕç ак кĕçех
Тулă, пăрипе урпа,
Пикенет ял-йыш ĕçе
Çĕкленӳллĕ юрăпа.

Карăнса тăрать çӳлте
Çичĕ тĕслĕ асамат:
Пирĕн çутă ĕмĕте
Пурнăçласшăн курăнать.

Кĕркунне, вырма çитсен,
Чи маттур комбайнера
Асамат пек алшăли
Çакса ярăпăр вара.

2020

ЯШЛĂХĂМА ХЫВАМ КĔПЕР

Çунатлă çамрăклăх!

Ольга Александрова 20 çулта.
Чăваш патшалăх педагогика институчĕ, 1949 ç.

Çунатлан, чĕрем, ялан!

Çĕмĕрт шап-шур çеçкере,
Тутлă шăршă таврара!
Эх, илемлĕ-çке тĕнче,
Çĕкленет ман шух чĕре.

Куç хĕсеççĕ çăлтăрсем,
Вăй выляççĕ тӳпере.
Эх, епле хитре тĕнче!
Савăнать çамрăк чĕре.

Уй-хир тулли тыр-пулли,
Кӳлли тулли шыв пулли.
Эх, пуян-çке ку тĕнче!
Хĕпĕртет яш чун-чĕре!

Каш! Кашлать пуян вăрман,
Ешĕрет улăх-çаран.
Эх, çут тĕнче пит аван,
Çунатлан, чĕрем, ялан!

01.02.2020

Çамрăклăх юрри

Эп кĕтеттĕм, эс васкаттăн
Çурхи лăпкă каçсенче.
Купăсна тăсса яраттăн
Шурă хурăн айĕнче.

Уйăх тухрĕ, йăлтăр кулчĕ,
Сапаларĕ çутине,
Те хумханчĕ, те именчĕ,
Тарчĕ пĕлĕтсем хыçне.

Кĕмĕл чĕлĕхлĕ хут купăс
Вылянатчĕ сан алра.
Кĕмĕл чĕлĕх, эс ан хупăн,
Янăра эс ман умра.

Шурă хурăн ал çупатчĕ
Вăштăр çилĕ вĕрнипе.
Ташша чĕннĕн туйăнатчĕ
Чун юратнă савнине.

Уй-хирте ĕçле, юрла эс,
Савăн Аслă вăйăра.
Çĕр-аннен хуçийĕ пул эс,
Юл ялтах, телей – çумра.

Пирĕн юрă ян-ян кайтăр,
Сиртĕр çутă тунсăха.
Пĕр-пĕрне чунтан юратăр,
Çамрăксем, яланлăха!

2019

Вăйăра

Çăка сап-сар чечекре,
Пыл хурчĕ хĕрӳ ĕçре.
Яшсем, хĕрсем вăйăра,
Эх, юрлар-и çĕн юрра?

Уяв кĕтет хĕм чĕре,
Тапать вăл хавасланса.
Атя, яра пар тепре,
Пĕрле ташлар савăнса.

Çăка йывăç чечекре,
Сĕрлеç сим-пыл хурчĕсем.
Çамрăк Аслă вăйăра -
Уяври пек чĕрере.

Тăри сасси тӳпере

Тăри сасси тӳпере
Ян-ян каять инçене!
Тулăх тыр-пул уй-хирте
Савса таять пучахне.

Тăр, тăр! Тăр, тăр! Тăтăр-и?
Ыраш пиçнĕ, куртăр-и?
Вырма вăхăт – сисрĕр-и?
Пурте карах тăрар-и?

Тӳпере хĕвел кулать,
Пике хĕрсе тыр вырать.
Канăçсăр тăри юрлать,
Сар хĕр чĕри кăлт! тăвать:

«Уй-хирте те, тӳпере
Эс чăн хуçа сывлăшра.
Пĕр анатăн, хăпаратăн
Ирĕклĕхпе савăнатăн.

Ĕçчен кайăк эс, тăри,
Мана чăнне калăн-ши,
Хăçан качча кайăп-ши
Хам телее тупăп-ши?

Качча каятăп пулсан,
Чăн телей тупап пулсан,
Тĕрĕсне кăтартса пар,
Ана çине анса лар».

Ши-ши, ши-ши шăхăрса,
Вĕçрĕ тĕпсĕр тӳпене.
Чу! Чу! Чу! Чу! чулатса
Анчĕ хĕр ани çине.

Янраттар, тăри, юрра,
Уйра-хирте ху хуçа.
Ĕçри хастар çамрăка
Телей сун юратура!

Уй-хир ĕçне пĕтерсен,
Кĕр мăнтăрĕ пуçлансан,
Туй кĕрлерĕ, пысăк туй
Ун хăватне хăвах туй.

Асаттесен йăлипе
Çĕнĕ ыраш çăкрипе
Хирĕç тухрĕç мăшăра:
- Тулăх пулăр пурнăçра.

08.12.2019

Атьăр, атьсем!

Вĕл-вĕл вĕçсе çаврăнса
Юр пĕрчи çĕре ӳкет.
Тавралăха шуратса.
Сив хĕл васкаса килет.

Атьăр, атьсем, урама
Кăпăш юрпа выляма.
Шурă юр ăшне чăмар,
Шур упа пулса тухар!

Атьăр, атьсем, çырмана
Тăвайккинчен ярăнма.
Çунашка çине ларар,
Шухă çилпе ăмăртар.

Атьăр, атьсем, пухăнар!
Кĕлетке юртан тăвар!
Хĕл мучине ăсталар,
Хурăн шăпăр тыттарар!

Атьăр, атьсем, янрашар!
Хĕл сиввине хăвалар!
Сикер, чупар, ярăнар,
Çирĕп сывлăхлă пулар!

15.04.2020

Ыр суну

Чаплă ята ан ăмсан,
Эсĕ ан тар ырлăхран.
Ан çухать эс ыр ятна,
Ан хапсăн эс ылтăна.

Ĕç тăвакан ыр çынна
Ырăлăхпа тавăрсам.
Ĕçшĕн тав ту эс ăна,
Туслăн унпа пурăнсам.

Кĕвĕçÿ - сĕмсĕр йăла,
Хăв чунран шав хăвала.
Эс ан сут тус-тăвана,
Савĕ ялан çын сана.

Аçупала аннÿне
Эс юрат, ан пул пĕччен.
Ан ман вĕсен ырлăхне,
Хыт упра мĕн виличчен.

Хăть ăçталла кайсан та
Ман сĕнĕве эс ан ман.
Хăв çĕрне те кил-çурта
Тыт асрах. Вăл ĕмĕр сан.

Çĕршыву шав сыв пулсан,
Пулĕ тăван килÿ сан.
Савнă çĕршыв вăл - анне!
Сывă упра ун чунне.

Йывăр килсен, тăр-пĕччен
Эсĕ юлсан, ан йĕрсем.
Сан çумра ял-йыш. Темччен
Пулмăн хăрах. Ĕненсем!

2019

ПАТТĂРЛĂХПА ХАСТАРЛĂХ КУÇАТЬ ЛАМРАН ЛАМА

Мускав

Çĕршывăн тĕп хулине мухтаса, тав туса

Эс, Мускав, чăн чиперкке -
«Сăпкари черчен пепке».
Çурт-йĕрсем сан йывăçран,
Пулĕç-ха часах чулран.

Ӳс, эс, çитĕн, аталан,
Вăйлă пулăн эс кайран.
Халь имшер эс, пит айван,
Эх, нумай-çке сан тăшман.

Батый хан, монгол-тутар
Пит нумай кăтартрĕ шар.
Польша панĕ те шляхтич
Пўтсĕррĕн хăтланчĕç пит.

Куртăн, тӳсрĕн эс нумай
Çичĕ ютăн мăшкăлне.
Парăнмарăн çапнă май
Юн ёмен сĕлĕхсене!

Шăварса çĕре юнпа
Çитрĕ француз Мускава.
Чунĕнчи паттăрлăхпа
Кĕчĕ вăл шур хулана!

Эс, чĕнмен хăна, тус мар,
Эс - тăшман! Хăна та мар.

Пушă кив Мускав! Пĕлсем.
Вырăс - ăслă вăл. Сиссем.

Çĕнтерӳ ваййи вылять.
Бонапарт харсăрланса.
Шыв пекех «йӳçек» юхать,
Антăхаççĕ савăнса.

Шĕвĕр вĕçлĕ калпакне
Вăл хăварчĕ Мускавра.
Кĕлетри сăр шăшине
Ас илтерчĕ хăй вара.

Шурă тутăр пĕркенсе
Вĕçрĕ Руçăн çĕрĕнчен.
Кун-çулне хыт сыхласа
Тарчĕ хăйĕн çарĕнчен…
………
Çитрĕ фрицĕ çунтарса,
Вут çĕлен пек чашкăрса.
Саранча пек сарăлса,
Çĕршыва хупăрласа.

Гитлер юнлă куçĕпе
Пăхрĕ çăткăн кайăк пек.
– Нах Москау! – çурăк сас,
Вĕçрĕ Берлинтан приказ.

Руссиш, руссиш! Хенде хох!
Капут, руссиш! – çухăрать.
Самолĕчĕ, ох-хох-хох!
Çăхан евĕр явăнать.

Тăхлан çумăр пек çăвать,
Пин-пин бомба çурăлать.

Чĕр юнпа çĕр хутшăнать,
Пурнăç пĕтнĕн туйăнать.

Сталин илчĕ аллине
Çут çĕршыв тилхепине.
Тапранмарĕ Мускавран:
«Пултăр тĕп хаяр тăшман!»

Приказсем куллен парать,
Мускава çăлма хушать.
Хучĕ пин-пин çын пуçне,
Çăлчĕ çĕршыв чĕрине.

Гитлер ĕмĕрĕ кĕске,
Капут! пулчĕ йăвинче.
Çӳллĕ рейхстаг тăррине
Çакрĕç совет ялавне.

Хĕмленсе Берлин çунать,
Шăршă вăйлăн сарăлать.
Гитлер çулăмпа «çунать» -
Чунĕ тамăка каять.

Çур тĕнче тĕп турĕ вăл
Халăха хыт макăртса.
Халь те халăх тарăхать
Чунсăр чунне ылханса.

Мускавра парад пырать:
Çĕнтерӳшĕн савăнса.
Тӳпере салют ялтрать -
Туслăн пурăнма ыйтса.

....

Кремль куранчĕ чан çапать,
Çĕршыв тăрăх сас янрать.

Халăха ыр ир сунать,
Мирлӗ пурнăç йыхăрать.

Мускав çӳллӗ вырăнта,
Тивӗç вăл ларма унта.
Пӗтӗм тӗнчене курать,
Мирлӗ кун-çула сыхлать.

Тав, мухтав сана, Мускав,
Эсӗ пурнăç, эс - ялав!
Пирӗн паттăр тӗп хула
Çӗнтерӳçӗ! Пуç хула.

2019

Амăшĕ

Çулăм хыпнă, çĕршыв çуннă.
Çуннă амăшĕн чĕри.
Кăмрăк, кĕл пулса çеç юлнă
Ял-хула, çынсен тупри.

Тăвата ывăл çитĕнтертĕн,
Чĕрĕ юлтăрччĕ пĕри!
Пурнăç панă çĕнтерӳшĕн,
Тапнă амăшĕн чĕри.

… Амăш чунĕ çурăлать,
Тĕтĕм-сĕрĕмсĕр çунать:
«Ан хурлан, пĕччен-çке мар,
Сан пекки, пĕл, сахал мар».

Эсĕ вăйлă, эс маттур
Уншăн эс сăвап çеç кур.
Эс хăтартăн тăшманран,
Эсĕ - амăш, тав чунран.

Паттăр ывăл çуратса
Патăн çĕршыва хăват.
Тăшмана эс аркатса
Тĕнчене вăйна кăтарт.

Ăмăрт кайăк ачусем,
Кăйкăр евĕр хĕрӳсем –
Чăрсăр, харсăр ыр чунсем -
Эс пилленĕ чĕппӳсем…

Вăрçă шавĕ кĕр! кĕрлет,
Халăх юнĕ тăкăнать.
Ирсĕрпе ачу вăрçать,
Урнă тăшмана хирет.

Эс сăваплă, амăш эс,
Сан хыçра тăван кӗтес!
Ачусем сан хăраман,
Нихăçан та парăнман.

Чăт, аннеçӗм, эс ан йӗр,
Çӗр çинче хăварăн йӗр:
«Аптраман тавраш эпир»,
Малашра - çап-çутă ир.

Пурнăç алăкне уçан,
Эс хăв Пурнăç, эс – чултан!
Эс сыхлан çӗршыв чысне!
Эс упран ун телейне!

02.01.2020

Çунса тăтăр пурнăçу!

Аннӳ сана çуратать,
Тăвать чăпăл, пил парать:
«Хастар, сывлăхлă ар пул,
Салтак вăйĕпе эс тул».

«Тăван çĕршыв сыв пулсан,
Тăван кил те пулĕ сан» -
Пурах чăнлăх çак пилте,
Упрать пил мĕнпур çĕрте.

Çĕршыва хӳтĕлесси,
Ăна харсăр сыхласси
Арçын тивĕçĕ чăнах,
Кунта пархатар пурах.

Ача вĕренет шкулта,
Ĕçчен, яланах малта.
Ăс пухать вăйне хурса,
Савать çĕршыва çунса.

Кун иртет те, çул иртет,
Маттур ывăл çитĕнет.
Анне пилĕ вăйланать -
Ывăл офицер пулать.

Тивĕçне аван пĕлет,
Çĕршыва чунпа тимлет.
Ăçта йывăр – çавăнта,
Пур çĕрте те вăл малта.

Яш ар вăйлă офицер,
Пĕлӳ, ăс вăл илнĕскер:
Воспитатель – педагог,
Военрук та, политрук.

Çӳлте самолет вĕçет
Хăлат евĕр малалла.
Пилот хăй ĕçне пĕлет,
Эс вĕрентнĕ пулмалла.

Эс çынсемшĕн пурăнан,
Чунна, чĕрӳне паран.
Тавах, ырă, ыр тăван,
Пулсам халăхпа ялан.

Хăвна çирĕп эс тытан
Ĕçре. Харсăрлăх чунра.
Тёркин евĕр шӳт тăван
Ялан каннă вăхăтра.

Юхан шыв пек шавласа
Юхса пытăр кун-çулу.
Çут хĕвел пек çуталса,
Çунса тăтăр пурнăçу!

28.06.2019

Офицер

Отставкăри офицер!
Çавах эс хастар, чипер.
Ĕçчен алра ĕç вĕрет,
Чунра хурçă шеп хĕрет.
Чĕрӳнте сан канлĕх çук,
Чăвашра çитмен çĕр çук.
Эс - чăвашлăх управçи,
Çĕн йĕркен çĕн хуралçи.

Ыр кăмăллăх йĕркине
Тытать çирĕп çут чĕре.
Пулăшан эс çынсене -
Сан йăлу, чăнах, хитре.
Пуян çĕршыв паттăрпа,
Эсĕ паллă - хăватпа.
Çунан хĕмлĕн вăй-халпа,
Çĕклен палăк халăхпа.

Илсе килтĕн Некее
Килне, хăй тăван ялне.
Ларать палăк çуталса,
Пит мăнаçлăн курăнса.
Патшан намăс кӳрекен
Хура юпи вырăнне -
Хураш чапне çĕклекен
Капмар палăк - Некее.

Çыран сăвă тăрăшса
Чуна варкăш тултарса.
Çынсене те пулăшан,
Пур ĕçе те пултаран.
Юбилей сан – ку телей!
Сана сывлăх эп сунам.
Çĕр çултан çĕн юбилей
Уявла! Унччен пурнам.

28.06.2019

Çĕнтерӳ

Аслă Çĕнтерӳ 75 çул çитнине халалласа

Çĕнтерӳ! Çĕнтерӳ! Çĕнтерӳ!
Мĕн тери чаплă ку пĕлтерӳ!
Чун, çĕклен, çунатлан, хаваслан,
Кĕтнĕ кун, вăйлă кун çитрĕ сан.

Çĕнтерӳ – мухтавлă ят,
Çĕнтерӳ – хăватлă ят.
Тăкнă çĕнтерӳшĕн юн,
Хунă пуç пин çын, мильюн…

Çĕнтерӳ вăл – тавăру,
Тавăру – чăн тарăху!
Чун-юна шăнăçайми
Халăхăн хаяр çилли!

Вырăс çынни нихăçан
Пĕр тăшман айне пулман.
Кĕлеткийĕ татăлсан,
Вăрçнă çурри! Парăнман!

Тĕнчери хура вăя,
Чи усал, тискер вăя
Хуçрĕ çапса, тĕп туса,
Хăйĕн вăйне кăтартса.

Каш! кашлатăр сĕм вăрман,
Ешĕрейтер хир, çаран.
Пирĕн вăй чăн тус-тăван,
Иртĕхеймĕ чĕр тăшман!

Тек ан çунтăр ял-хула,
Тек ан пӳлччĕр мăн çула.
Йӳç куççуль ан юхтăр тек,
Ӳстĕр таврара чечек!

Çĕнтерӳ! Çĕнтерӳ! Çĕнтерӳ!
Чаплă, хаклă пĕлтерӳ!
Чун, çĕклен те хаваслан,
Çитрĕ кĕтнĕ кун паян!

07.01.2020

ПУРНĂÇ ХУМĔ

Чăваш халăх кун-çулĕ

Чăваш, пĕл, эс начар мар,
Ан хурлансам, кирлех мар.
Эс ху камне пĕлсе тăр,
Кун-çул хакне туйса тăр.

Тăван чăваш, – эс пăлхар,
Сан несĕлӳ пит патвар.
Ан шухăшла: «Эп начар!...»
Маттур, сутур, эс хастар.

Сан çĕршыву чăн пуян,
Суту-илӳ эс тăван.
Эс ĕçленĕ, ӳркенмен,
Ятна çĕре ӳкермен.

Мĕн пур ĕçре чи малта,
Ал ĕç тума пит ăста.
Хитре япалусене
Сутан ют çĕршывсене.

Ширанă эс чăн туссем,
Чарман сана чикĕсем.
Çавах тăван ялунтан
Ниçталла та пăрăнман.

Вут-хĕм сапса, çаратса,
Хула-яла çунтарса
Тутар, монгол, вун-вун хан
Тӳлек кун-çул пач паман.

Хĕр, арăма хĕрхенмен
Вĕлернĕ пусмăрласа.
Укçа-тенке тиркемен,
Çаратнă йăлт урмăшса.

Пăлхар йăхĕ эс, чăваш,
Пулман çавах эс йăваш.
Йăхна хыт асапланса
Хăварнă эс упраса.

Арканнă сан çĕршыву,
Хĕн-хур тӳсет шеп йăху.
Эс тарнă вăрмансене,
Шыранă хăв телейне.

Тăвансемпе, çемйипе
Мĕн пур ачи-пăчипе,
Чăххи, ĕни, лашипе
Чăваш тарать сиккипе.

Пур-çук тырри михĕре -
Кун-çул килет çав пĕрре.
Чăваш тарать таçталла -
Хăй те пĕлмест ăçталла …

Умри шывпа сулăпа
Ишет куллен хал пухса.
Сăрт-ту урлă вăл йышпа
Утать телей шыраса.
- Тарас, тарас инçерех,
Çын тупайман çĕререх.

Ура пусман çĕн çĕре,
Капмар вăрман чăтлăхне,
Çырма-çатра çывăхне -

Çитет чăваш чĕп-чĕрех.
Тупать унта хÿтлĕхне,
Каллех ярать тымарне.

Чавать чăваш çĕр пÿртсем,
Касать йывăçран çуртсем -
Ĕçлет чăваш пур вăйран:
Кун-çул пуçланнă аран.

Вăрман касать, сайратать,
Тыр-пул акма уй-тăвать.
Чăваш ĕçчен, ÿркенмен,
Йывăрлăхран шикленмен.

Тÿре-шара, тăшмансем
Тупаç кунта та ăна.
Мĕн пур хырçă-марçăсем
Каллех тăллаç хĕм-чуна.

Чакка йышши чухăна
Тăсса хурса сак çине
Хулне касса чух кăна
Хĕненĕ çине-çине.

Юн ăшĕнче халь чăваш,
Ун умĕнче çук малаш.
Пур-çук укçи-пурлăхне,
Картишĕнчи выльăхне
Туртса илеç тÿресем,
Пуянсемпе çăткăнсем.

Чăваш ирĕклĕх шырать,
Вырăспала туслашать.
Пĕрле хастар çапăçать,
Хăй тăшманне аркатать.

Вырăспала пĕрлешет,
Чун-чĕрипе хĕпĕртет.
Анчах пуян тӳресем –
Çавах ун пусмăрçисем.

Иртеç çулсем, ĕмĕрсем,
Иртеç манми тапхăрсем.
Паян чăваш ирĕкре,
Янрать, кĕрлет тĕнчере!

24.01.2020

«Тăршшĕпех вĕрентрĕн чăваш ачине
Чĕрере тытмашкăн амăш чĕлхине...»

Районти художествăллă смотр-конкурсра, сцена çинче О.А. Архипова. Çĕмĕрле районĕн культура çурчĕ, 1977 ç.

Чăваш тĕррин вăрттăнлăхне уçакансем

Çĕмĕрле районĕнчи Юманай ялĕн ал-ĕç ăстисем.
Чăваш тĕррин кунĕ, чӳк уйăхĕн 26-мĕшĕ, 2020 ç.

«… Чăвашах юласчĕ ман,
Чăвашлах юрласчĕ ман.
Чăвашлах ташласчĕ ман,
Чăвашлах пурнасчĕ ман»

О.А. Архиповăн «Кун-çул таппи» кĕнекин презентацийĕнче.
Ольга Александровнăпа пĕрле «Мерчен» юрă ушкăнĕ
(ертӳçи Зоя Николаева), юпа уйăхĕн 4-мĕшĕ, 2020 ç.

Чăвашах юласчĕ ман

Чăваш халăхне савса,
Чунтан çирĕп шантарса,
Ăшри мĕн пур шухăша
Пухса калăп ак çапла:

«Чăвашах пулса юлса,
Пурăнасчĕ, кун курса…
Тăван хамăн халăхпа
Пурнар туслăн сывлăхпа.

Çĕр çинче те уçлăхра
Паян эпĕр чăн хуçа!
Чăваш эпĕр! Чăн хуçа!
Усман нихăçан пуça!

Халĕ ĕнтĕ йăваш мар,
Хĕн-хур тӳснĕ Чакка мар.
Уçса уçлăх алăкне
Эс кăтартрăн хăв камне!

Андриан, Некей, Иван -
Патвар халăх ачисем.
Тĕнче уçлăхĕ таран,
Кур, çĕкленчĕç ячĕсем.

Чăваш эпĕ! Чăн хуçа!
Пытармастăп шухăша.
Инçет пăрлă океан
Манпа туслă вăл ялан.

Шыв çийĕнчи пăрахут
Асап тӳснĕ вăл пин хут.
Чăваш арĕ - капитан,
Рульне вăл тытать аван.

Тӳпере пĕр самолет
Çурса сывлăша вĕçет.
Халăха вăл ыр сунать,
Чăвашла салам ярать.

Чăваш çитмен вырăн çук,
Ăна пĕлмен çын та çук.
Чăвашах юласчĕ ман,
Чăвашлах пуплесчĕ ман.

Чăваш, эс, пуян паян,
Ĕçӳпе хастар ялан.
Пултарулăх вăйлă сан
Несĕл хăват панăран.

Чăваш хĕрĕ юрласан
Хĕвел ыррăн йăл кулать.
Чăваш яшĕ ташласан
Çĕр чĕтреннĕн туйăнать.

Мухтанатăп чăвашпа,
Савăнатăп тăванпа.
Чăваш ялĕ пурăнсан,
Чăваш пĕтмĕ нихăçан.

Чăваш эпĕ! Тĕп чăваш!
Паян! Ĕмĕрех чăваш!
Куллен юлăп эп чăваш,
Чăвашра курап малаш!

… Чăвашах юласчĕ ман,
Чăвашлах юрласчĕ ман.
Чăвашлах ташласчĕ ман,
Чăвашлах пурнасчĕ ман».

04.01.2020

Тĕнче – тĕрлĕ кĕнчеле…

Çеçенхирте çил вылять,
Ешĕл курăк хумханать.
Шухăш вĕççĕр çаврăнать,
Канăçа пĕрмай вăрлать.

Сар хĕвел ав çутатать,
Пурнăç тĕнчене парать.
Çĕр çине çĕн çын килет,
Пурнăçран телей кĕтет.

Çĕр çинче шеп пурăнни,
Хĕвелпе пит савăнни –
Чăн та, пысăк пархатар,
Пурнăçа, шав, тав тăвар.

«Пурнăç тулăх, пурнăç лайăх,
Юрлама та пит аван!..» -
Шăратаççĕ юрăсем,
Шав иртеççĕ уявсем.

Пурнăç пуçĕ пăрăнăç,
Ялан мар вăл тутлă кăрăç.
Аркашать те тăнăç пурнăç,
Юлать йӳçĕ-йӳç пăрăç.

Вăрçă-харçă пуçланать,
Хура халăх тăкăнать.
Юнпалла çĕр çăвăнать,
Çут куççулĕ тасатать.

«Çут çанталăк пирĕн тус!» -
Тетпĕр уççăн тепĕр чух.
Çук çав, вăл та хăш-пĕр чух
Пач тус мар, хаяр ют юс.

Чĕтренет çĕр, шыв илет,
Выçлăх çавапа килет.
Урнă çилĕ аркатать,
Кăшăл вирус алхасать.

Кун иртет те çул чупать,
Вĕл вĕçеççĕ ĕмĕрсем.
Пурнăç вĕççĕр улшăнать,
Улшăнаççĕ çыннисем.

Тĕнче – тĕрлĕ кĕнчеле,
Кам кăна çук çĕр çинче…
Шухăшла хăв пуçупа,
Тавçăруллă ăсупа.

Пултаруллă паттăрсем
Тĕпсĕр тӳпене вĕçеç.
Парăнаççĕ уçлăхсем,
Çĕнĕ пурнăçа тĕпчеç.

Мирлĕ пурнăç çыннисем
Çĕнетеççĕ çĕр питне.
«Эп - хуçа!» - теекенсем
Юнпала сăрлаç питне.

Çăткăн чунлă Чингисхан
Пулчĕ чылайччен хуçа.
Мăшкăларĕ халăха,
Вăл аркатрĕ Çĕршыва.

Чĕр тăшман Наполеон,
Вăл юхтарчĕ хĕрлĕ юн…
Хуçланчĕ Мускавра,
Пушă, пушă хулара!

Сĕмсĕр фюрер, Адольф Гитлер,
Пулаймарăн эс хуçа,
Халăх вăйлă ман, патвар,
Ватрĕ, çапрĕ тăмпуçа.

Ан тив лăпкă пурнăçа,
Ан тарăхтар халăха.
Халăх çилли – чăн тăвар,
Тăварлать сана хаяр.

Кирлĕ мар çынпа вăрçма,
Туслăн пурăн савăнса.
Килĕшӳллĕн канашлар,
Мирлĕ пурнăçа упрар.

Пурнăç иртет тĕрлĕ май,
Ырă ĕçсем тунă май,
Пăтăрмахсем пит нумай,
Сыхлануллă пул пĕр май.

Кăшăл вирус терроорпа
Алхасаççĕ тĕнчипе.
Çапăçаççĕ пурнăçпа,
Хăратаççĕ вилĕмпе.
Пирĕншĕн ют, чĕр тăшман.
Ĕçкĕче сиплемелле,
Тăшмана тăн кĕртмелле.

Элекçĕсем, суеçсем,
Вĕтĕр-вĕтĕр шăркасем
Хыт çыртаççĕ, ах, мурсем,
Ĕçлĕ «туслă юлташсем».

***

Çынна усал тăвиччен
Ырă туса савăнтар.

Ку тĕнчерен кайиччен
Пурте туслăн пурăнар!

Мĕн чул усал ĕç тăван
Çав усалпах тĕп пулан.
Ырă тусан халăха
Пурнан хăв та ырлăхра.
Çапла çĕр çинчи саккун,
Çакна туйтăр мĕн пур Чун!

10.10. 2020

Пурнăç таппи

Пулнă вăхăтсем начар,
Ас илме те çăмăл мар.
Ача «сачĕ» те вите
Пулнă пĕр пӳртре пурте.

Ача-пăча сак тулли,
Путек-çатак пӳрт тулли,
Кăмака хыç пушă мар,
Унта пăру – тивер мар.

Йĕрет ача сăпкара,
Хырăм выçать пуль, ара.
Амăш чăмлак хыптарать,
Хура çăкăр тут тытать.

Çемье ларать апата,
Çиет уйранпа улма.
Мĕн пурри сĕтел çинче,
Чĕпкĕм тăвар умĕнче.

Тăм чашăкри уйрана
Çавăрттараç кашăкпа,
Кăмакари улмана
Пуçса çиеç тăварпа.

Çинçе саслă путексем –
Выçăхнă пĕчĕк чунсем,
Кăшкăраççĕ макăрса,
Амăшне кĕтеç выртса.

Арканать пурнăç таппи:
Ачи-пăчи, путекки
Сикеç, чупаç, тĕркĕшеç,
Путеккисем сĕкĕшеç.

Пытанать, ав, кушакки,
Вăрттăн шикленсе сăнать.
Хăй те шăши хăраххи,
Хускалмасăр ав выртать.

Тăр-р-ă-с сикет пĕр путек,
Ӳкерет çĕре тӳшек.
Ачи-пăчи ыткăнать,
Тӳшек çине йăванать.

Тăрăс-тăрăс сикнĕ май,
Чĕтренет пӳрчĕ самай.
Кусарпа хырнă урай
Кăларать тусан, ай-ай!

Сурăх сасси илтĕнет,
Путек хăлхи чанк! тăрать.
Пуçлать хыттăн макăрма,
Амăшне йыхравлама.

Алăк яри! уçăлать,
Пӳрте пăс кĕрсе тулать.
Сурăх кĕтĕвĕ кĕрет,
Халь тĕркешӳ пуçланать.

Путек шырать амăшне,
Амăш шырать путекне -
Ай, чупаççĕ васкаса,
Шăпланаççĕ тупăнсан.

***

Тек, аннеçĕм, ан кулян,
Пурнăç урăхла паян.
Выльăх-чĕрлĕх картара,
Вĕт ачасем садикра.

Çемçе кавир çийĕнче
Вяляç, ташлаç, савăнаç.
Паха апат çитереç,
Хăвăрт ӳсме вăй илеç.

Тав тăватпăр пурнăçа,
Ырлăхра ӳсет ача.
Пулччăр сывă та таса,
Хыт юратчĕр çĕршыва.

Тек ешертĕр çĕн калча,
Пил, пехил пиртен ăна!

12.10.2020

Кун-çул никĕсне хывап чул çинче…

Ача чухнехи хавас кунсенче
Чупаттăмăр, шав, Çавал хĕрринче,
Пухаттăмăр чул. Чăп-чăмăр шакчул,
Вĕçсе хĕпĕртенĕ ман ирĕклĕ чун.

Çап-çутă Çавалăм, Сурăм-чĕре,
Çумри яп-яштак хăва евĕрех
Ӳстертĕр пире, лăпкарăр пире,
Савса чăпăл турăр аннемĕр пекех.

Çулаттăмăр курăк туслăн тăрса,
Сурăм леш енче, Çавал тавралла.
Шуп-шур тумсене хавассăн хывса
Чăматтăмăр шавлăн тăр шывалла.

Шап-шур акăшсем вĕçеççĕ çӳлтен,
Юлмаççĕ пачах хăйсен шăпинчен.
Шăпам ӳкрĕ ман Ураваш çине,
Пĕр канăççăр, вĕççĕр юхан шыв хĕрне.

Çунат хуçăлать, ман чун аманать,
Аслă Уравашăм пит шавлăн юхать.
Юхать çурхи шыв, юхать ман куççуль,
Ура айĕнче йăванать мăн чул!

Ураваш хĕрри, пухатăп эп чул,
Чĕрем ман тулли, унта пысăк чул.
Тухап сив шывран йăтса эп мăн чул,
Ӳкмест, çук, ӳкмест чĕрем çинчи чул.

… Эп аслă уйра. Çил çеç ман умра,
Çук манăн кил-çурт. Çук мăшăр çумра.
Яма никĕсе шур чул купи пур.
Ман шанчăкăм пур, ик пĕчĕк чун пур.

Таса уй умра. Вĕрет çил шăнтса,
Тăпра муклашки пурнас çĕр çинче.
Алра ик пепкем, хама-хам шанса
Кун-çул никĕсне хывап чул çинче…

03.12.2020

«Юманайĕн ачисем,
Юман айне ларар-и,
Вĕреннĕçем, ӳснĕçем
Юман пулса кашлар-и?»

Юманай вăтам шкулĕн линейкинче

Шкул директорĕ С.М. Архипов ачасене вĕренӳ çулĕ вĕçленнĕ ячĕпе саламлать, Хисеп хучĕсемпе чыслать. Çу уйăхĕ.

Юманай вăтам шкулĕн вĕренекенĕсемпе тата вĕрентекенĕсемпе

Иккĕмĕш ретре сулахайран сылтăмалла: Архипова О.А., чăваш чĕлхипе литература учителĕ *(1-мĕшĕ),* Дмитриева Анна Дмитриевна, вырăс чĕлхипе литература учителĕ *(19-мĕшĕ),* Петров Владимир Васильевич, музыка учителĕ *(20-мĕшĕ); виççĕмĕш ретре сулахайран сылтăмалла:* Васильев Геннадий Иванович, музыка учителĕ *(1-мĕшĕ),* Архипов Севастиан Михайлович, шкул ертӳçи, вырăс чĕлхипе литература учителĕ *(2-мĕшĕ),* Николаев Константин Николаевич, истори учителĕ *(3-мĕшĕ), 1977 ç.*

Юманай ачисем

Юманайĕн ачисем,
Юман айне ларар-и,
Вĕреннĕçем, ӳснĕçем
Юман пулса кашлар-и?

Çĕмĕрле те Шупашкар
Пирĕн сасса илтчĕр-и,
Çӳлтен анас пархатар
Пирĕн пата çиттĕр-и?

Юманайĕн юманне
Чăваш тĕнчи пуç таять,
Кашни хĕрне-ывăлне
Юман пулма пил парать.

Çав пилпеле, тантăшсем,
Вăрман евĕр пулăпăр,
Ырă ĕçпе, тăвансем,
Ырă çулсем хывăпăр.

Юманайĕн ачисем,
Юман айне ларар-и,
Ун пилĕпе ӳснĕçем
Ун туратти пулар-и?

14.09.2020

Хăна юрри

Хурăнташсене ырă сунса

Кĕрхи ĕçе пуçтарсан,
Çĕр ĕçĕнчен пушансан,
Ял-йыш хăна пуçтарать,
Кĕр мăнтăрне уявлать.

Юртать шур ут васкаса,
Тăван кĕтет савăнса.
Сăра курки алăра,
Шевле вылять пит-куçра.

Мĕн пур тăван пухăнсан,
Йышпа тăрса юрласан.
Юррăмăр ян-ян каять,
Тăван пўрчĕ янăрать.

Кĕрекемĕр авăнать,
Сĕтел ури тайăлать.
Автан яшки пăсланать,
Хăна-вĕрле сăйланать.

Тăван савсах хăналать,
Сим пыл, шерпет ĕçтерет.
Хут купăспа шеп вылять,
Пире ташша вăл чĕнет.

Тăван сĕнет тав курки,
Кăпăкланать пыл сăри
Тăванĕсем куç тулли,
Кăмăлĕсем пўрт тулли.

Куккук хĕрсех авăтать,
Сасси ян, ян, ян каять!
Кун-çул хавас, чун пуян,
Савăн, паян эс, тăван!

20.01.2020

Çул çук каялла

Юхаççĕ пĕлĕтсем, шăваççĕ малалла,
Иртеççĕ ман кунсем, килмеççĕ каялла.
Юхать тăр юханшыв, юхмасть вăл тăвалла,
Иртет кун-çул, иртет, çул çук халь каялла.

Вĕçеççĕ кайăксем, вĕçеç кăнтăралла,
Хаяр хĕлрен тарса ыр пурнăç шырама.
Çунатăм çук вĕçме, усатăп эп алла,
Текех хăватам çук çĕн пурнăç пуçлама.

Капмар сăр пĕлĕтсем килеççĕ капланса,
Хупласçĕ тухăça, хупласçĕ пурнăçа,
Шумаççĕ каялла, тăраççĕ çакăнса,
Çул çук халь каялла, утатăп анăça.

Ик куçăм хупăнать, кун-çулăм вĕçленет,
Каçар мана тĕнче, каçарăр, ыр çынсем.
Телейĕме татса çут кунăм ав сӳнет,
Çавах эп хĕмленеп, чунра - ыр ĕмĕтсем.

10.10.2020

Уйрăлу юрри

Иртеç пĕлĕтсем, шăваç анăçа,
Шăваççĕ вĕсем, пĕлмеç канăçа.
Хавас вăхăтсем, черчен кунăмсем
Текех каялла килес çук вĕсем.

Хур кайăк вĕçет, каять кăнтăра
Каять кăнтăра капмар вăй илме.
Çунатăм ман çук вĕçме кăнтăра,
Сăвапăм та çук ăна тивĕçме.

Хура пĕлĕтсем çӳреç капланса
Хура хăлатсем çине утланса.
Ик куç хупăнать, çут çăлтăр сӳнет,
Нуша çухалать, тулли лав тӳнет.

Каçар, çут тĕнче, кил-йышăм, каçар,
Ыр кӳршĕ, каçар, ял-йышăм, каçар.
Каяс тĕнчене кайма хăрар мар, -
Лери тăванпа унта тĕл пулар.

15.10.2020

«Çуралса ÿссем, пепкем,
Эп сана телей пиллем!»

Архипова О.А. Вера хĕрĕн çемйипе. *Пĕрремĕш ретре сулахайран сылтăмалла:* кĕçĕн мăнукĕ Максим, Ольга Александровна кĕçĕн мăнукĕпе Марийăпа, Максимăн мăшăрĕ Анастасия. *Иккĕмĕш ретре сулахайран сылтăмалла:* Максим мăнукĕ, Янина мăнукĕ, Вера хĕрĕ, Валерий Иванович Ильин (Анастасия ашшĕ), 2019 ç.

Эп сана телей пиллем!

Юмахри пек ĕмĕтре
Пулăттăм ухмах Йăван.
Йĕрĕхе те сĕмсĕре
Параттăм эп ăс япан.

…Кайăк эпĕ пулăттăм,
Юмаха чăн тăвăттăм.
Тĕнче çийĕн вĕçĕттĕм,
Асапа пĕтерĕттĕм.

Пăрчăкан пек юрлăттăм,
Кантăкран шак! шаккăттăм.
Пур пӳрте те кĕрĕттĕм,
Çут телей валеçĕттĕм.

Шап-шур аист пулăттăм,
Çуната вĕл! сарăттăм.
Тĕнчене ыталăттăм,
Тăнăç пурнăç сунăттăм.

…Чăн юмах çут тĕнчинче
Сарă кун çĕршывĕнче
Çуралса ӳссем, пепкем,
Эп сана телей пиллем!

09.05.2019

ШУХĂШ-ÇИÇĔМСЕМ

Мĕн вăл телей?

Мĕн вăл телей? Пурнăç шăпи?
Ĕмĕтленни? Çитсе пыни?
Вĕри кăвар пек пĕçертсе
Е кĕл пулса вĕçсе кайни?..

Çĕрĕм-шывăм, тăван халăх

Тăван çĕршыв сывă пулсан,
Тăван кил те пулĕ сан.

***

Тăван çĕршыв – пирĕн анне,
Чунпа упра тымарсене.

***

Тăван киле, чăваш çĕрне,
Нихçан ан ман ун чĕлхине.

***

Тÿрĕ çулпа тĕрĕс утсан,
Çăмăл пулĕ пурнăçра.
Халăхшăн ыр ĕç тусан,
Яту çутă пулĕ сан.

***

Тус-тăванна эс ан сут,
Ялан пĕрле туслăн ут.

***

Пур – пĕрле, çук – çурмалла,
Пурăнмалла тăванла.

***

Пĕччен юлсан, йывăр килсен,
Пуçна ан ус, ан лар йĕрсе.
Йĕри-тавра ял-йыш, пускил
Пĕччен хăвармĕç, парĕç пил.

***

Тăван атте, тăван анне –
Чи хаклă çын çак çĕр çинче.
Ан ман нихçан ыр кăмăлне,
Сыхла, упра мĕн виличчен.

***

Чăвашах тăрса юласчĕ,
Пĕтес марччĕ, пурăнасччĕ.
Çĕр çинче те, космосра
Паян куншăн Эп хуça!
Эп чăн чăваш! Чăн хуça!
Нихăçан усман пуça!

Чысна упра

Чаплă ята ан хăмсан,
Ырă ятна ан çухат!
Пуянлăха ан хапсăн,
Ырлăхран та эс ан тар.

***

Ыр ĕç тăвакан çынпа
Кĕвĕç чунлă эс ан пул.
Савăн эс ун ĕçĕпе
Туслăх пултăр ĕмĕре!

***

Çӳле хăпарса çитсен,
Ан ӳк каллех каялла.
Тĕрĕслĕхе çирĕп тыт,
Юлмăн нихçан намăса.

***

Тĕрĕс ĕçпе чыслă пул,
Чысна ырă ĕçпе туп.

***

Элек-суя – сăнсăр йăла -
Ан пултăр сан таса чунра.

***

Çапакантан эс ан тар -
Тĕрĕслĕхшĕн хытă тăр.

***

Шăтăк мăйăр шăхăрать,
Тулли мăйăр тут тытать.

***

Хуйхă пулман, ан куйлан,
Шухăшласа ан хурлан.

***

Çуклăх пуршăн ан куйлан,
Сывлăх пулсан, пуç пулсан,
Çуклăхран та пур пулать.

***

Çын йывăрлаха тӳсет,
Мăнтара вăл чăтаймасть.

***

Ан хурла çынна нихçан,
Хăв çине пăх çаврăнса.

***

Куç умĕнче ан мухта,
Куç хыçĕнче ан хурла.

***

Палламан çынна курсан,
Сывлăх сунса иртсе кай.

Çемье

Ашшĕ ятлать ачана,
Те тĕрĕс, те тĕрĕс мар.
Анчах, амăш, ан шарла,
Ача хутне эс ан кĕр.

***

Килте пулать калаçу
Е ятлаçу, тавлашу.
Ан калаç яла тухсан,
Эс хăв камне кăтартан.

Ачана мул париччен
Ăсна пар, теç ваттисем.

***

Алра шап-шур алшăлли,
Ун çинче ыраш çăкри.
Асаттесен ыр йăли –
Çĕн мăшăра чысласси.

Çамрăк ĕмĕр час иртет

Çамрăк ĕмĕр пĕрре килет,
Анчах пит хăварт иртет.
Выльăр, кулăр, уçăлăр,
Яш ĕмĕрпе савăнăр.

***

Качча кайма ан васка,
Малтан вĕрен юратма.
Килĕшӳллĕ пурăнма,
Кил ăшшине упрама.

***

Малтан ăс-тăна пухар,
Пурăнмашкăн вĕренер.
Ĕçре çитĕнӳ тăвар,
Хамăр хисепе тупар.

***

Ан лексем серепене:
Усал çыннăн аллине.
Йӳççе юратакана,
Ютта куç хывакана.

***

Тăхтаманпа Сетнере
Уйăрмашкăн эс вĕрен!

***

Паян пурнăç çамăл мар,
Пуçа усма кирлĕ мар.
Туптан, хăйран, çивĕчлен,
Хурçă евĕр эс шăран!

***

Ĕмĕт-шухăш çунатлă,
Çуначĕсем хăватлă.
Куçа хупса иличчен
Мускава çитсе килен.

***

Ярăм-ярăм çут шăрçа
Мăй илемне вăл кӳрет.
Анчах пуçра «çук» пулсан,
Çут шăрçа та илĕртмест.

***

Туптăр, хăйрăр хăвăра
Çивĕч пулăр пурнăçра!

Çут çанталăк

Тĕнче карти арканчĕ
Шурă юрĕ тăкăнчĕ.

***

Тăр-тăр, тăр-тăри?
Ыраш пиçнĕ, куртăр-и?
Пурте карах тăрар-и?
Кал-кал ĕçе пуçлар-и?

2019

ТЫТĂНСА ТĂРАТЬ ТĔНЧЕ ЫРĂ, ÇУТĂ ЧУНСЕНЧЕН

Таймапуç!

Эй, атьсем, мĕн каласси,
Сăвă-калав çырасси –
Уççăнах палăртмалла –
Сĕре кансĕр япала.
Çĕнĕ сăмах тупасси,
Çĕнĕ сăнар тăвасси –
Тем тесен те, çамăл мар:
Чĕрӳнтен вут-хĕм кăлар –
Вара пулĕ пархатар.
Кĕнеке çаптарасси –
Çырнинчен те хĕнтерех,
Типографийĕн хуçи
Укçине ыйтать тӳрех.
Эс калатăн: «Гонорар
Эсир тивĕç тӳлеме»,
Вăл калать: «Шел, ку хыпар
Ĕлкĕрчĕ çав кивелме».
Эс вара ирĕксĕрех
Кĕрсе каян кивçене,
Ыйткалакан евĕрех
Тархаслан юлташсене.
Юрать çавра çĕр çинче
Ăнланакан çын пĕтмен,
Тытăнса тăрать тĕнче
Çавăн пек ыр чунсенчен.
Тав сире, тăванăмсем,
Ман хутăма кĕнĕшĕн,
Çапла çакă сăвăсем
Вулавăша çитнĕшĕн.

Халал сăввисем

Иккĕмĕш пайĕ

Чăваш хĕрарăмĕсене эп пуç таятăп

Чăн-чăн чăваш хĕрарăмне –
Ольга Архиповăна хисеплесе

Чăваш хĕрарăмĕсене эп пуç таятăп:
Вĕрентнĕ юратма эсир Чăвашлăха,
Тав сăмаха пуçа тайса калатăп:
Эсир курма вĕрентнĕ-çке пуласлăха.

Чăваш хĕрарăмĕсене эп пуç таятăп:
Эсир пире вĕрентнĕ юратма.
Тав сăмаха пуçа тайса калатăп:
Эсир вĕрентнĕ чăнлăха савма.

Чăваш хĕрарăмĕсене эп пуç таятăп:
Эсир вĕрентнĕ кăйкăр пек пулма,
Тав сăмаха пуçа тайса калатăп:
Эсир пире вĕрентнĕ çын пулма.

Чăваш хĕрарăмĕсене эп пуç таятăп:
Эсир пире вĕрентнĕ ĕçлеме,
Тав сăмаха пуçа тайса калатăп:
Эсир пире вĕрентнĕ кĕрешме.

Чăваш хĕрарăмĕсене эп пуç таятăп:
Эсир вĕрентнĕ çĕнтерме йывăрлăха.
Ура тапса, чăн сăмаха паян калатăп:
Эппин, савар пĕрле юратнă халăха.

ЮХМА Мишши,
Чăваш халăх писателĕ
14.04.2008

«Мăшăр тени мĕн тени –
Çумра шанчăк пур тени…»

Çĕнĕ çўрт умĕнче. *Сулахайран сылтăмалла:* кўршĕ хĕрĕ Лиза Афанасьева, Севастиан Михайловичпа Ольга Александровна Архиповсем, Александр Александрович Александров (Ольга Архипова ашшĕ), Ефимия (Ухвина), кўршĕ Ульки Славăпа, 1961 ç.

Юманайри вăтам шкула С.М. Архипов ятне панă митингра

Пĕрремĕш ретре сулахайран сылтăмалла: Ольга Архипова, юнашар чăваш халăх писателĕ Анатолий Кипеч, çу уйăхĕн 8-мĕшĕ, 2017 ç.



Мăшăр тени мĕн тени

Ольга Александровнăпа Севастиан
Михайлович Архиповсене

Мăшăр тени мĕн тени –
Çумра арçын пур тени,
Юратупа пĕрлешсе
Пĕр çăмхана явăнни,
Пĕрне-пĕри итлесе
Килĕштерсе пурăнни.

Мăшăр тени мĕн тени –
Çумра хӳтлĕх пур тени,
Ĕшенсессĕн тайăнма
Юман вырăнне пулни,
Ăшшăн тытнă ытамра
Ачашланма май пурри.

Мăшăр тени мӗн тени –
Çумра шанчăк пур тени.
Çирӗп сывлăхлă пулса
Ăрăва вăй-хал пани,
Çут пуласлăха курса
Хавасланса пурăнни.

Мăшăр тени мӗн тени –
Çумра ырлăх пур тени,
Ватлăхра та киленсе
Пурнăçа хыт юратни,
Ачасене ӳстерсе
Пӗрле ӗмӗр вӗçлени.

Анатолий КИПЕЧ,
Чăваш халăх писатӗлӗ

Çĕмĕрле районĕнчи Юманай вăтам шкулĕн вĕрентекенĕсем

Шкул коллективĕ. *Сылтăмран сулахайалла 2-мĕш ретре:* Архипова О.А. *(1-мĕшĕ),* хĕрĕ Арсентьева Л.Н. вырăс чĕлхипе литературине вĕрентекенĕ *(4-мĕшĕ),* Архипов С.М. шкул ертӳçи *(12-мĕшĕ)*

Чăваш чĕлхин çӳлти сывлăшĕ

Тусай ялĕнче çуралса ӳснĕ, Юманай ялĕнче пурăнакан Ольга Александровна АРХИПОВА патне янă уçă çыру

Эй, Улька, Улькаçăм, Тусай хĕрачи,
Пурнăç çапуççийĕн çирĕп тăпачи,
Акă эсĕ çитрĕн тăхăр вун çула,
Сана ыталатăп çав сăлтавпала.

Чунтан тав тăватăп эп сана, Улька,
Мĕншĕнне хăвах та ăнланан пуль-ха:
Тăршшĕпех вĕрентрĕн чăваш ачине
Чĕрере тытмашкăн амăш чĕлхине.

Йывăра çĕнтертĕн çав чĕлхепеле,
Ыррине çул патăн çав пуплевпеле,
Пысăк çын мĕн чухлĕ тухрĕ сан алран, -
Вырăн йышăнаççĕ Мускавсем таран!

Чаплă агроном та, тухтăрĕ те пур,
Орденлă салтак та, генерал та пур,
Мĕншĕн сан, Ульхаçăм, халь савăнас мар,
Çакă мар-ши ĕнтĕ пирĕн пархатар?

Иванов Кĕçтук та Петĕр Хусанкай,
Çеçпĕлпе Митта та, Алкапа Ухсай
Асăнчех тытаççĕ сан ĕçне-хĕлне,
Пуç тайса яраççĕ пехилне-пилне.

Уявра, Улька, эс чыслăн ларнă чух
Çак сăвва вулатăр сан хĕрӳ Верук.
Чăвашла юрлатăр пĕтĕм хурăнташ,
Шурăмпуç пек килтĕр ыранхи малаш!

Çыруçи Шетмĕ ачи Юрий СЕМЕНТЕР

Ольга Архипова тата Чăваш халăх поэчĕ Юрий Сементер. 2019 ç.



Тавах, чĕлхе вĕрентекен!

О.А. Архиповăна

Чăваш чĕлхи вĕрентекен –
Чăвашлăхпа илĕртекен,
Çĕн ÿсĕмри ачасене
«Нарспи» çинчен пĕлтерекен.

Чăваш чĕлхи вĕрентекен –
Çеçпĕл патне чĕнтерекен,
Умра чăрмав тухас пулсан
Хастарлăхпа çĕнтерекен.

Чăваш чĕлхи вĕрентекен –
Хусанкая хисеплекен,
«Кĕлпук мучи» çыракана
Пуçкăшăл евĕр çĕклекен.

Чăваш чӗлхи вӗрентекен –
Чун-чӗрене эрешлекен,
Эпир тăван ялав айне
Тăрассине йӗркелекен.

Тавах, чӗлхе вӗрентекен!

Юрий СЕМЕНТЕР,
Чăваш халăх поэчӗ

2019

Сăпка юрри

Тăхăрвун пĕррери Ольга Архиповăна

Ульхине аппине,
Тăпăр-тăпăр тяппине,
Аслă улăха анма,
Улăх çулĕпе утма,
Ури çămăл пултăр-и,
Утнăçемĕн уттăр-и,
Хăмăш патне тухтăр-и,
Хирлеп урлă каçтăр-и,
Сурăм хĕрне çиттĕр-и,
Çавал шывне ĕçтĕр-и.

Ульхине аппине,
Чĕвĕл-чĕвĕл чĕлхине,
Тусай хапхине уçма,
Тăвансемпе калаçма,
Прахур Мишшине курма,
Петĕр Кулине курма,
Лука Трахвинне курма,
Ырă хыпар пĕлтерме
Ырă сăмах килтĕр-и,
Кăмăла çĕклетĕр-и.

Ульхине аппине
Чăваш кĕввин ăстине
Тăри пек çӳле кайма,
Шăнкăрч пек çунат çапма,
Шăпчăк евĕр юрлама
Пиллĕх патăр Хусанкай,
Çунат хуштăрччĕ Ухсай,
Ырлăх кӳтĕрччĕ Малкай,
Алă çуптăрччĕ Каттай
Купăс тыттăрччĕ Туркай.

Ульхине аппине,
Юманай юмахçине
Хăй вĕрентнĕ ачасем,
Тăван хир сухаçисем,
Хăтлă çурт-йĕр ăстисем,
Тухтăрсем, тимĕрçĕсем,
Тĕрлĕрен ертӳçĕсем
Малалла ăс-тăн кӳме,
Çĕр çула чипер çитме
Пуç тайса ыр сунччăр-и,
Туссем, çапла пултăр-и?

Юрий СЕМЕНТЕР

26.11.2019

Юманай такмакӗсем

Юманай юмахçине – Ольга
Александровна Архиповăна

Юман-ши эс, Юманай,
Çăка-ши эс, Юманай?
Çăка чухне çăка пуль,
Эсӗ, пирӗн Юманай.

Юрă-ши эс, Юманай,
Сăвă-ши эс, Юманай?
Юрă чухне юрă пуль,
Сăвă чухне сăвă пуль,
Эсӗ, пирӗн Юманай.

Юмах-ши эс, Юманай,
Халап-ши эс, Юманай?
Юмах чухне юмах пуль,
Халап чухне халап пуль,
Эсӗ, пирӗн Юманай.

Ылтăн-ши эс, Юманай,
Кӗмӗл-ши эс, Юманай?
Ылтăнран та хаклăрах,
Кӗмӗлрен те пахарах,
Эсӗ, пирӗн Юманай.

Юрий СЕМЕНТЕР

2019

«Поэт каллех утать ялтан яла»

Шупуççынни (Васильев) Николай Васильевич (1889-1942), çыравçӑ, куçаруçӑ, тӗпчевçӗ, вӗрентекен.

«Çӗн влаç кашни ялта уçать ЛИКБЕЗ. Тӗллевӗ – хутпӗлменлӗхе пӗтересси…»

«Аслă Тури Выл ялне
Янă Шупуççыннине.
Пĕчĕк Çеççим шкул ачи
Поэтпа пĕрле çӳрет.
Çитĕннĕ măн çынсене
Вулама вăл вĕрентет…»

Севастиан Архипов Элĕк районĕнчи Тури Вылă шкулĕнче 4-мĕш класра пĕрле вĕренекенсен хушшинче, 1930-мĕш çулсем.

Тури Вылти ликбез

Н.В. Шупуҫҫынни поэтпа Севастианăн
ырă тĕлпулăвне аса илсе

- Чăваш, пĕлетĕн-и-ха эсĕ вулама-ҫырма?
- Ҫук, эпĕ вулама-ҫырма пĕлмес…
Вара, ҫав ҫынсене ҫутă енне туртма
Ҫĕн влаҫ кашни ялта уҫать ЛИКБЕЗ.

Тĕллевĕ – хутпĕлменлĕхе пĕтересси.
Ан тив, кашни паллатăр саспалли,
Кăштах ҫырулăха вĕрентесси
Пулса юлать ҫав вăхăтăн палли.

Шупашкартан Элĕк енчи Тури Выла
Ҫав вăхатра пырать Шупуҫҫынни поэт.
Ун халăха ҫутта тухма пулăшмалла, -
Тĕттĕмлĕхре этем пĕтмеллипех пĕтет.

Ак урамра поэт курать пĕр ачана.
- Мĕн ятлă эс, ачам? Ҫӳретĕн-и шкула?
- Ҫеҫҫим тесе чĕнеҫҫĕ-ха мана, Севастиана,
Хушаматпа вара Архипов эп пулап.

Ҫапла вĕсем пуҫлаҫҫĕ ĕҫлеме Тури Вылта,
Явăҫтараҫҫĕ шкул ачисене ҫав юхăма.
… Кайран, вăтăр ҫултан, шăп ҫак ялтан
Пултарнă ҫĕн ҫыравҫă шăтарса тухма.

Халь кам пĕлмест пуль Александр Артемьева,
Кам вуламан пуль «Салампи» кĕнекене?
Кунта тав тумалла, тен, ҫав Ҫеҫҫим Архипова,
Выл халăхне ҫутлăхалла чĕнекене?

Юрий СЕМЕНТЕР

2019

Етĕрне çути

Ĕтĕрне училищинче
вĕреннĕ вăхăта аса илсе

Етĕрнемĕр пайăрки
Ӳкнĕ Тури Выл çине:
Вĕренӳ йăли-йĕрки
Чĕннĕ Элĕк ачине.

Ак утать хайхи Çеççим
Çĕнĕ çăпатапала,
Ĕтĕрне училищин
Алăкне ун уçмалла.

Çийĕнче вĕр-çĕн кĕпе,
Ун çинче – чăваш тĕрри, -
Несĕлсен пехилĕпе
Яш ача вĕрентĕр-и!

Шуçăм çулăмĕ пекех
Тĕттĕме сирет Çеççим,
Касмĕ, вăтăрмĕ текех
Чăваша инкек çĕççи.

Виçĕ çул ăс-хал пухсан
Диплом илчĕ Севастиан.
Тĕлĕнмешкĕн ан хăтлан –
Вăл учитель паянтан!

Унăн çулĕ - çутă çул, -
Шав астарчĕ малалла,
Кĕç пĕтерчĕ аслă шкул,
Шутласан – ăмсанмалла.

Сăр çутиллĕ Етĕрнен,
Шупашкарăн çуттисем
Халăхра хĕмленнĕрен
Çитрĕ чăваша хисеп.

Юрий СЕМЕНТЕР

2019

Днепр çинче

Севастиан Архипова – вăрçă паттăрне

Днепр урлă эп ишеттĕм,
Кĕç леш çырана çитеттĕм, -
Тăхлан кайăк пычĕ-çапрĕ,
Кĕлеткем пута пуçларĕ.

Асаттеçĕм, хăтарсамччĕ, -
Астăватăп, каласаччĕ,
Шăп çак вырăнта эс пулнă,
Çак йывăрлăхах эс курнă…

Шăчă вĕçĕ çитрĕ – туйрăм,
Çийĕнчех ярса эп тытрăм,
Хамăр çарăн офицерĕ
Вăй-халне пач хĕрхенмерĕ.

Акă вăл çарти юлташлăх,
Вилĕм умĕнчи тăванлăх:
Эс мана шывран хăтартăн,
Эп сана вутран кăлартăм.

Юрий СЕМЕНТЕР

2019

Тăван çĕршывăн Аслă вăрçин вут-çулăмĕ витĕр тухнă совет салтакĕсем

С.М. Архипов *(сулахайран сылтăмалла пĕрремĕшĕ),* Сталинăн комендант çарĕ, Рашкуф хула çар коменданчĕ (Польша), 1944 ç.

Тăван çĕр салтака пил пани

Ачам, эсĕ пĕччен мар,
Пин салтак вăл – хăй вăрман.
Тăшман çарĕ-вайлă çар,
Эсĕ хамăр вăя шан.

Ывăлăм, çакна ăнлан,
Тыт чĕрӳнте яланах:
Кунта чăрăш та юман,
Сăрчĕ-тăвĕ сан майлă.

Юлташусем юнашар –
Вырăсĕ те тутарĕ,
Пурте пĕрле тăрĕ кар,
Хăй çĕршывне хăтарĕ.

Тыт, салтакăм, пăшална
Çирĕп кĕр çапăçава,
Урса кайнă тăшмана
Кунсерен кĕтет çава.

Тыт, ачам, асра ялан,
Пĕр йыхрав сан, пĕр чĕнӳ:
Аякран, Тури Вылран
Кантăкран пăхать аннӳ.

Çап, салтак, тет, ютсене,
Сан çинче – тăван тӳпе,
Таврăн Сурăм хĕррине,
Ху килне, çĕнтерӳпе.

Юрий СЕМЕНТЕР

2019

Кăвакарчăн, упăшкаçăм!

Ольга Архипова ячĕпе

Мăшăрам, эс умăмрах,
Сăмахху та асăмрах.
Яланах мана ăнлантăн,
Çумра пултăн ик çунатăн.

Икĕ пĕчĕк тăлаха
Йышăнса усравлăха
Лайăх вĕрентсе кăлартăн,
Педагог пĕлĕвĕ патăн.

Кăмăлсăррине курман,
Сив сăмах илтмен нихçан,
Ывăнсан та ӳркенмерĕн,
Кил хуçалăхне тĕплерĕн.

Иртнĕçемĕн каç та кун
Килчĕç тепĕр виçĕ чун.
Ыррăн ӳсрĕç ачасемĕр,
Иксĕмĕр чĕппĕмĕрсемĕр.

Шкул директорĕ пулса
Эс ĕçлерĕн тăрăшса.
Шел, леш тĕнченеваскарăн,
Мăшăрна пĕччен хăвартăн.

Пурпĕрех эс умăмрах,
Сăмаху та асăмрах.
Асилетĕп ирĕн-каçăн,
Кăвакарчăн, упăшкаçăм.

Юрий СЕМЕНТЕР

2019

Тури Вылти Архипов Севастиан

Баллада

Аннесем кăмакана çăкăр хывнă майлах
Севастиан яшлăхне вăрçа хыврĕ йăлтах.

Пĕр пайне вăл хăварчĕ Мускав патĕнче,
Тепĕр пайĕ çӳрет Сталинград уйĕнче.

Ыттисем – Курск енче, Венăра, Прагăра,
Рейхстаг çийĕн вĕл-вĕл вĕлкĕшет ялавра…

Ма хитре çуркуннен ытарми йăл кулли?
Ма тесен вăл –Çĕнтерĕвĕн ырă палли!

«Севастиан! – ыталатчĕ ăна ротăри молдаван, -
Эсĕ – Атăл çинчи парăнман арăслан:

Çапăçса чунсăрлатрăн фашист хурахне,
Эс кăлартăн тӳрре çут тĕнче шанăçне».

«Çук, Ион, - тет ăна Элĕк çĕрĕн каччи, -
Пирĕн туслăх – ак мĕн Çĕнтерӳ туптави».

Чăнкă-чанкă тăвать çичĕ орден-медаль.
Çĕмерле хыçа юлчĕ, хыçра халь Шăхаль.

Тăр-тăри вирхĕнсе çĕкленет йăвинчен, -
Севастиан килсе çитрĕ тĕнче вăрçинчен!

Акă кивĕ хапха. Тури-Вылăм, салам!
Чим-ха, мĕн ку: çуннă, кĕленнĕ урам…

Вăрçăра та пушарчĕ, ялта та пушар,
Эй, аттеçĕм, аннеçĕм, хирĕç тух, сасă пар!

Çĕнтерсе киле килчĕç пулсан ачăрсем
Çĕнĕрен çĕкленеççĕ тăван çуртăрсем!

Юрий СЕМЕНТЕР

09.05.2017

Çĕнтерӳ кунĕ, Польша

С.М. Архипов *(сулахайран сылтăмалла улттăмĕшĕ),*
Сталинăн комендант çарĕ, Нове-Скальмежице хула çар коменданчĕ (Польша), çу уйăхĕн 9-мĕшĕ, 1945 ç.

С.М. Архипов, халăх депутачĕ. 08.05.1984 ç.

Севастиан Архипов шывĕсем

Баллада

Элĕкре вăл Выла урлă каçнă,
Сурăм урлă каçнă савăнса.
Çуркунне çав шывсемпе çураçнă,
Патварланнă пĕвесем тытса.

Етĕрне енче Сăрпа туслашнă,
Чăмнă, виçнĕ ун тарăнăшне,
Каярах Атăлпала паллашнă,
Кимĕпе хутланă анлăшне.

Вăрçă! Днепр хумĕсем хĕрелнĕ
Севастиан Архипов юнĕпе,
Чăвашла юрра Десна итленĕ,
Иртнĕ чух Чернигов çумĕпе.

Буг та Неман салтака ыр суннă
Урнă тăшмана хӳтернĕ май,
Висла виçĕ сулă илсе пынă,
Пулăшнă совет çарне Дунай.

Одер, нимĕç çĕрĕнче пулин те,
Чыслăн кĕтнĕ пирĕннисене,
Эльба шывĕ те юратнă питĕ
Тăнăçлăх кӳрен салтаксене.

...Вăрçă хыççăн, вăтăр çул иртсессĕн,
Çĕнтерӳн хĕвеллĕ кунĕнче
Çав шывсем пĕрлешнĕ те вунçиччĕн
Пăсран пĕлĕт пулнă ир çинче.

Юманай патне пырса илемлĕн
Чарăнса шкул сачĕ тĕлĕнче
Туслăх çумăрĕ çутарнă меллĕн
Йывăççем хитрен ешериччен.

Шур кĕпеллĕ Севастиан пиччемĕр
Тăнă тет çав çумăр айĕнче,
Тумламсем, телей куççулĕ евĕр,
Юхнă тет директор куçĕнчен.

Юрий СЕМЕНТЕР

27.11.2019

«Тусай салтакĕ Германире Сталин, Черчиль, Трумен Канашлăвне сыхлать…»

Александров Владимир Александрович, хĕсметре. Потсдам, Германи, 1945 ç., Тăван çĕршывăн Аслă вăрçин тата вĕренӳпе ĕç ветеранĕ, Ольга Архиповăн пиччĕшĕ.

Тав сăмахĕ

Владимир Александрова халалласа

Ыр ятлă ывăлсем нумай чăвашăн,
Нумай вĕсем йăмраллă Трак енре.
Паян эпир пуçăмăра таясшăн
Хастарлă Александров Тимĕре.

Тусай ачи ялта кĕтӳ те кĕтнĕ,
Тăван уйра сӳренĕ вăл сӳре,
Кайран шкулта хавхаланса вĕреннĕ, -
Хисеп çав Александров Тимĕре!

Фашист эшкерĕ капланса килсессĕн
Яш каччă хĕç-пăшал тытать тӳрех,
Виç ордена тивлетлĕн тивĕçнишĕн
Сăвап çав Александров Тимĕре!

Тусай салтакĕ Сталин, Черчиль, Трумен
Канашлăвне сыхлать Германире,
Халь чыс парса иртесчĕ паттăр умĕн, -
Мухтав çав Александров Тимĕре!

Хусан университетне пĕтернĕ хыççăн
Хăйне ялан кăтартнă ыр ĕçре.
Ентешĕмсем, пĕрле калар-и уççăн:
Тавах çав Александров Тимĕре!

Юрий СЕМЕНТЕР

29.11.2019

Акатуй

Ольга Александровнăпа Вера
Севастьяновна Архиповăсене

Тинех çитрĕ кĕтнĕ кун,
Савăнать паян ман чун.
Кĕр-кĕрлетĕр Акатуй –
Тĕнчери чи чаплă туй.

Акатуй, Акатуй,
Савăнтар чăвашсене!
Акатуй, Акатуй,
Хĕмлентер чĕресене!

Килсе çитрĕç хăнасем –
Кӳршĕсем те тăвансем.
Шăратар-ха çак юрра
Пирĕн Аслă уявра!

Тайма пуç сана, уй-хир,
Ешерсем эс каç та ир.
Тулли пулччăр пӳлмесем
Савăнар паян, туссем!

Валери ТУРКАЙ,
Чăваш халăх поэчĕ

«Чăваш чĕлхи вĕрентекен –
…Эпир тăван ялав айне
Тăрассине йĕркелекен…»

Ертсе пыракан класпа. *Малти ретре варринче:* Ольга Александровна Архипова чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекенĕ, класс ертӳçи; юнашар Николай Игнатьевич Михайлов завуч.

«Чăваш чĕлхи вĕрентекен –
Чăвашлăхпа илĕртекен…»

Архипова О.А. йĕркеленĕ фольклор ушкăнĕ,
музыка ертӳçи Петров В.В., 1977 ç.

Вĕрентекен

Ольга Александровна Архиповăна -
хисеплесе, пуçăма тайса

Сантăр хĕрĕ чиперкке Ульха -
Тăхăрвуннăри чăваш «пики»!
Юрласа çыхан алса-чăлха,
Тĕррӳнте - çут асамат пĕкки!

Ватлăх пусаймасть сан хăватна,
Аваймасть сан вутлă кăмăлна.
Шартлама хăртман чунри садна,
Шăрăх типĕтмен таса çăлна...

Пурнăçа саватăн ачалла,
Хăв йышна туртатăн малалла:.
– Çутталла, чăвашлăх, çутталла!
Чăвашсем Хĕвеллĕ пулмалла!!!

«Вĕрентӳ вăл – вĕççĕр вĕренӳ!» -
Вĕрентетĕн те – хăв вĕренен.
Чунсене кĕртсе çут ĕненӳ
Халăх ăс-халне шав тĕренен.

Халăхран пухса ăс-тăн тĕнчи
Пĕлӳ-мул паратăн халăха!
Мухтанать санпа чăваш тĕнчи!
Тивĕç эсĕ çутă палăка!

Сан çине пăхсан, пурнас килет!
Шалти вăй санра тăрать тапса!
Çĕн ăру санран хăват илет!
Вулкан пек çунан, хевте сапса!

Пурăн чăваша савăнтарса!
Яш ăру-туйралăх – çумăнта!
Пилĕк-çурăма авăнтарса
Пуç таятăп санăн умăнта.

Раиса САРПИ,
чăваш поэтесси,
Чăваш Республикин культурăн
тава тивĕçлĕ ĕçченĕ

Эс – юратнă анне, асанне, кукамай

Ольга Александрова Архиповăна - ачисемпе мăнукĕсен ячĕпе - юратнă хĕрĕ Вера Севастиановна Архипова шухăш-кăмăлĕпе килĕштерсе

Эс – юратнă анне, асанне, кукамай!
Савнă арăм пулнă мăшăрушăн!
Аслă юбилей çывхарнă май
Саламлать сана тăванлă ушкăн.

Эс çуралнă йывăр вăхăтра,
Ӳснĕ тапхăр пулнă хĕнлĕ-хурлă.
Эс пире усрарăн шеп хăтра,
Пурнăçу пулсан та хура-шурлă.

Хĕрхенмерĕн чун ытарлăхне,
Юратса ачашшăн çупăрларăн.
Парнелерĕн савнăç ырлăхне,
Инкекрен çунатлăн хупăрларăн.

Ăнланатпăр сан асаплăхна,
Пуç тайса, хĕрӳллĕн тав тăватпăр.
Хакласа сăпай паттăрлăхна,
Сан ятпа эпир халь мухтанатпăр.

Сан пекех пулас килет маттур!
Пурăнас килет сăваплăн, танлăн.
Ырă тĕслĕх пирĕн йăхшăн пур!
Сан пекех çутта утатпăр анлăн.

Ырă та хĕлхемлĕ чунупа
Халăхшăн эс çунтăн çут хĕвеллĕн!
Сан пекех шевлеллĕ çунупа
Несĕлӳ çĕкленчĕ теветкеллĕн!

Чун-чĕрӳ - асамлă хĕм Вутчул -
Хĕмлетет çунмашкăн çутă ятлăн!
Эс тултартăн 90 çул.
100 çулна та кĕтсе ил хăватлăн!

Раиса САРПИ
2019

Вăрçă тата вĕрентӳ ветеранĕ С.М. Архиповăн тăван килĕнче Хисеп хăми уçнă чух. Çĕмĕрле районĕнчи Юманай ялĕ, çу уйăхĕн 6-мĕшĕ, 2016 ç.

Пĕрремĕш ретре сулахайран сылтăмалла: культура ĕçченĕ, Архиповсен хĕрĕ Вера Архипова; профессор, вĕрентӳ ăслăлăхĕсен кандидачĕ Владимир Иванов; офицер Юрий Дадюков (псевд. Чутай Юркки); учитель-ветеран Ольга Архипова; виçĕ вăрçă тата вĕрентӳ ветеранĕ Алексей Алексеевич Яковлев; *иккĕмĕш ретре сулахайран сылтă-малла:* журналист, режиссер Зоя Яковлева; журналист, Архиповсен мăнукĕ Максимилиан Севастьянов; педагог Луиза Каткова (Кузнецова); журналист Людмила Кутьина; педагог-воспитатель, Архиповсен хĕрĕ Надежда Шалева (Семенова); Раççей тата ЧР халăх артисчĕ Петр Заломнов; журналист Роза Деменцова (Лукина); чăваш поэчĕ, композитор, журналист Светлана Азамат; педагог, Архиповсен хĕрĕ Людмила Арсентьева; дизайнер, Архиповсен мăнукĕ Янина Михайлова; *виççĕмĕш ретре сулахайран сылтăмалла:* офицер Анатолий Николаев; чăваш поэчĕ, юрăç, журналист Альбина Юрату; Алексей Яковлев хĕрĕ Вера Яковлева.

Учитель-ветерансемпе пĕрле

Пĕрремĕш ретре сулахайран сылтăмалла: музыкăна вĕрентнĕ Петров Владимир Васильевич, вырăс чĕлхипе литератури учителĕ Кульев Георгий Аврамович, чăваш чĕлхипе литератури учителĕ Архипова Ольга Александровна, вырăс чĕлхипе литератури учителĕ Дмитриева Анна Дмитриевна, вырăс чĕлхипе литератури учителĕ Арсентьева Людмила Николаевна, культура ĕçченĕ Архипова Вера Севастьяновна. Çĕмĕрле районĕнчи Юманай вăтам шкулĕ, 2019 ç.

Юратнă Чăваш Килĕм…

Ольга Архиповăна сума суса

Çĕр çула çитнĕ Чăваш Ен,
Сăваплă та хăватлă Чăваш Ен,
Тĕреклĕ, ăраскаллă Чăваш Ен,
Хĕвеллĕ те хевтеллĕ Чăваш Ен,
Çулу сан пултăр вăрăм та ĕлккен.

Юман вăрманĕн кашшăн кашласа,
Çăка çулçийĕн çуттăн çуталса –
Мăнаçлă, анлă Атăл тăршшĕпе,
Тăванлă халăхсен туслăхĕпе,
Çап-çут хутшăнусен пĕрлĕхĕпе
Янратăр чаплă Чăваш Кил сасси –
ПУЛНИ, ПУРРИЙĔ, ПУЛАССИ.

Светлана АЗАМАТ,
Чăваш Республикин искусствăсен тава тивĕçлĕ деятелĕ,
Чĕмпĕр облаçĕн культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ
2020

Ан кулянсам, тăванăм

Ольга Архиповăна - чунтан

Ан кулянсам, тăванăм, ан кулян,
Такам кӳрентернишӗн ан хурлан.
Каçар, каçарнине мӗскер çитет,
Хурри тухса кайсан, ырри çитет.

Ан кулянсам, тăванăм, ан кулян,
Ӗçсем ăнсах пыманшăн ан хурлан.
Телей тени вăл хăй çулне пӗлет,
Вăл яланах ăнăçупа килет.

Ан кулянсам, тăванăм, ан кулян,
Çулсем чупса иртнишӗн ан хурлан.
Шăпа тени вăл хăй ӗçне пӗлет,
Курмаллине курмах, чăтмах тивет.

Ача-пăча, тăван сума сусан,
Чупса ĕçлес, вĕççе çӳрес килет.
Вĕсем киле килсен чун хĕпĕртет,
Вучах çунать пулсан, тĕпел çиçет.

Ан кулянсам, тăванăм, ан кулян,
Уни-кунишĕн хытă ан хурлан.
Сывланă чух, тăван, савăнса юл,
Сывланă чух, тăван, телейлĕ пул.

Светлана АЗАМАТ

2020

«Пурăн чăваша савăнтарса!
Яш ăру – туйралăх – çумăнта!»

О.А. Архиповăн "Кун-çул таппи" кĕнекин презентацийĕнче. Ольга Александровнăпа пĕрле «Мерчен» юрă ушкăнĕ (ертӳçи Зоя Николаева), 1979 тата и 1980 çулсенче Юманай шкулĕнчен вĕренсе тухнисем, учитель-ветерансем Ольга Ивановăпа Юлия Григорьева, шкул директорĕ Галина Федорова. Çĕмĕрле районĕнчи Юманай культура керменĕ, 2020 ç.

Чăваш поэтесси Альбина Юрату Архиповсем патĕнче хăнара

Сулахайран сылтăмалла: Вера Архипова, Альбина Юрату, Ольга Архипова, Алексей Архипов, Людмила Арсентьева, 2019 ç.

Чăваш хĕвелĕ ялтăрать умра

Ульха аппана халалласа

Ĕçчен, маттур хĕрарăм эс, Ульха аппа,
«Чăваш чĕлхи» вĕрентнĕ эс шкулта.
Халь калаçаççĕ чăвашла пурте чунпа,
Ан сÿнтер эсĕ çутнă шур çурта.

Эс парăнтарнă кун-çулти йывăрлăха
Чăвашлăх ячĕпе хастар утса.
«Курса эс пурăн тĕнчери пур ырлăха!» -
Тав сăмахне калаççĕ юратса.

Чăваш чĕлхи кăвар пек йăмăхать чунра,
Пурнатăп эп те сан пекех çунса.
Чăваш хĕвелĕ ялтăрать куллен умра,
Вăй-хал хушать çап-çут хĕмне парса.

Ульха аппа, сан пек маттур чăваш нумай,
Чăваш пулсах пурнаççĕ тĕнчере.
Эпир санпа, çук, хăнăхман утма çил май,
Чăваш юрри юрлать патвар чĕре!

Альбина ЮРАТУ,
чăваш поэтесси, Чăваш Республикин
культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ
01.11.2020

Хĕрĕх çул иртсен те юратнă вĕрентекенсемпе тата вĕренекенĕсемпе пĕрле

Пĕрремĕш ретре сулахайран сылтăмалла: Архипова Ольга Александровна (91 çулта), 1980 çулта Çĕмĕрле районĕнчи Юманай вăтам шкулĕнчен вĕренсе тухса кайнă ачасен класс ертӳçи, чăваш чĕлхипе литератури учителĕ; юнашар - шкул ертӳçинче ĕçленĕ Иванова Ольга Сергеевна, физика учителĕ; *иккĕмĕш ретре сулахайран сылтăмалла:* биологи вĕрентнĕ Григорьева Юлия Петровна тата 1980 çулта шкултан вĕренсе тухнă Максимов Владимир, Шипеев Георгий, Кириллова Римма, 2020 ç.

Çĕмĕрле районĕнчи Юманай шкулĕнче Тăван Çĕршывăн Аслă вăрçи тата педагогика ветеранĕ С.М. Архипов ячĕпе Хисеп хăми уçнă вăхăтра

Пĕрремĕш ретре сулахайран сылтăмалла: шкул ертӳçи Галина Федорова; чăваш халăх писателĕ Михаил Юхма; учитель-ветеран Ольга Архипова; Архиповсен хĕрĕ Вера Архипова; çыравçă, таврапĕлӳçĕ Эдисон Патмар; çыравçă, композитор Светлана Азамат; *виççĕмĕш ретре сулахайран сылтăмалла (4-мĕшĕ):* Ольга Архиповăн вĕренекенĕ Олег Кульев. Çу уйăхĕн 6-мĕшĕ, 2016 ç.

Пирĕн ватă учитель

Юратнă вĕрентекене Ольга Архиповăна

Çĕр çине сарă çулçă ÿксессĕн,
Хĕрелсессĕн пилеш сапаки
Шкул енне тĕмсĕлсе пăхан эсĕ,
Асăнта – шăнкаравăн сасси.

Пирĕн ватă учитель,
Пул эс çитмĕл çулта –
Пурпĕрех, кĕр çитсессĕн,
Чунупа эс шкулта.

Ачасем ретĕн-ретĕн параççĕ,
Чунĕсем шуря хут пек таса.
Вĕсене ыр енне çавăрасчĕ –
Яланах çакна тытнă асра.

Миçе класс вĕрентсе эс кăларнă,
Пĕлӳ панă мĕн чуль ачана!
Вĕсенче – пурнăçун пархатарĕ,
Пуç тайса тав тăватпăр сана.

Олег КУЛЬЕВ,
чĕлхеçĕ, журналист,
филологи ăслăлăхĕсен кандидачĕ,
«Халăх шкулĕ» журнал ĕçтешĕ

Юманай мухтавĕ

Ольга Александрова (Архипова) ентешĕме

Тусай енчен ăш çумăр килсе
Ман таврана уçăлтарчĕ.
Куçça хĕрне аса илсенех
Тӳрех чĕре çамрăкланчĕ.

Эп мантăм ватлăха самантрах,
Ĕçчен Улька вăй-хал пачĕ.
Вăл ашшĕ пек… Унран вăйлăрах,
Кĕрлет, янрать сумлă ячĕ.

Сурăмпа Мăн Çавал юратса
Ятне çӳле шав çĕклерĕ.
Ял-йышăм мухтаса, савăнса
Ăна çут кун-çул пиллерĕ.

Георгий ТУСЛИ,
Нестер Янкас ячĕллĕ преми лауреачĕ
27.10.2020

Чутай чăвашĕ

Ольга Архипова ашшĕне –
Куçça мучине асăнса

Кун-çул кĕнекине уçа-уça
Куçсем умне утса тухать Куçça…
Хăй кăмăллă, йăл-кулăллă чăваш,
Утти те, кĕлетки те вăш та ваш.

Йăх-несĕл тытăмне сыпăнтарса
Лександр ячĕ куçнă Куççана.
Хастар, хыт утăмлă, маттур пулса,
Мăнаçланса вăл тытнă ку ята.

Çĕр пĕр çул та пĕр уйăх тултарса
Вăл çирĕп утнă савăнса, савса.
Аттемĕр Турă пӳрнĕ ĕмĕрне
Чутайăн пархатарлă чăвашне.

... Тĕнче*) вăрçин унтер-офицерĕ,
Георгий хĕресĕн кавалерĕ.
Йăх-несĕлпе ял-йышăн сумлăхне
Упрарĕ вăл, çĕре ӳкермерĕ.

Георгий ТУСЛИ
27.12.2019

*) Тĕнче вăрçи - Пĕрремĕш тĕнче вăрçи (1914-1918).

Манар мар…

Тусай халăхĕн хисеплĕ çыннине –
Александр Александрович Александрова

Çут Тусай енчен ачаш ăш çил вĕрчĕ,
Уçă хум ман шăмшака уçăлтарчĕ.
Ват Куççа сăнарĕ куç умне килчĕ,
Шухăшсен хумне хуллен çаврăнтарчĕ.

Сурăм сана ачашшăн лăпканă,
Мăн Çавал та савса ыталанă.
Ăш-пиллĕ эс, ĕçчен, пархатарлă…
Чăнласах та хастар, тараватлă.

… Сумлă, маттур ятна ĕмĕр упрар!
Нихçан манар мар…

Георгий ТУСЛИ
07.01.2019

Тавах, аттем!

Юратнă аттене сума суса

Атте, эс иртнĕ вăрçăра
Патваррăн çапăçнă фронтра,
Çĕре тасатнă тăшманран
Сталинградран Берлин таран.

Сан орден пур, сан пур медаль
Анчах хĕн-хур иртмест ахаль.
Телей курса пурнас чухне
Кĕрсе эс выртрăн çĕр айне.

Атте, сан пеккисем нумай,
Чыслать пурне те Юманай, -
Сăвап хыпарсăр çухалмасть,
Çĕнтерĕве пĕр çын тумасть.

Ял-йыш курать халь сан чунна,
Тĕнче курать халь сан сăнна,
Кур, хăв та вилĕмсĕр полкра -
Хĕрӳ сана йăтса пырать.

Хулкан пек тытнă эп сана,
Эс – хӳтлĕх маншăн яланах,
Тăшман ăмсанакан ырра
Сыхлатăп эпĕ çак полкра.

Калаттăн эс: сиртен – пире,
Калаттăн эс: пиртен – мире.
Тӳпемĕр илтмелле мана
Эп тав тăватăп, аттем, сана.

Вера АРХИПОВА
2019

«Кĕр-кĕрлетĕр Акатуй –
Тĕнчери чи чаплă туй»

Иккĕмĕш ретре сулахайран сылтăмалла: Архипова В.С., Чăваш наци конгресĕн культура комитечĕн ертӳçи *(12-мĕшĕ).* Тутарстанри Аксури Уяв, утă уйăхĕн 6-мĕшĕ, 2019 ç.

А. Асламасăн «Несĕлсен юррисем» Европăра та янăраççĕ…

Чăваш наци конгресĕн культура тата вĕренӳ комитечĕсен хастарĕсем Анисим Асламас композиторăн Чехире пурăнакан тач тăванĕсемпе йĕркеленĕ тĕлпулу хыççăн. *Пĕрремĕш ретре сулахайран сылтăмалла:* Антон, Татьяна Анисимовна, Инна Игоревна, Алексей Асламассем; Зоя Яковлева, журналист, режиссер, ЧНКан пресс-службин ертӳçи; *иккĕмĕш ретре сулахайран сылтăмалла:* Максимилиан Севастьянов, журналист, ЧНК культура комитечĕн пайташĕ, Вера Архипова ывăлĕ *(1-мĕшĕ);* Вера Архипова, журналист, ЧНК культура комитечĕн ертӳçи *(9-мĕшĕ);* Геронтий Никифоров, вĕрентекен, ЧНКан вĕренӳ комитечĕн ертӳçи *(10-мĕшĕ);* нарăс уйăхĕн 9-мĕшĕ, 2017 ç.

Вера Севастьяновна Архипова, чăваш наци юхăмĕн хастарĕ, Ольга Александровнăпа Севастиан Михайлович Архиповсен хĕрĕ, 2019 ç.

Уяв илемĕ – Вера Архипова

Чăваш наци конгресĕн хастарĕ!
Ялкăшать вут чĕрин хĕм-кăварĕ!
Верăпа çĕкленет чун силемĕ –
Вăл мĕнпур уявсен çут илемĕ!
Пĕвĕпе хурăн пек йăрăс, çӳллĕ!
Калаçать пит хаваллă, чĕнӳллĕ.
Пултаруллă ĕçчен йĕркелӳçĕ!
Пур ĕçре – тараватлă пĕлӳçĕ!
Конгресра вăл пулни пит аван!
Вăл – кашни чăваша – тус-тăван!

Раиса САРПИ
2018

Вера Архипова тата Чăваш халăх поэчĕ Юрий Сементер. 2019 ç.

Пирĕн ӳнерлĕх

Вера Архиповăна

Чăваш чĕлхин сăмахĕ –
Чун-чĕремĕр ахахĕ,
Сăвви-юрри, такмакĕ –
Çичĕ ӳнер уртмахĕ.
Эппин, Верук, тусăмăр,
Конгресри хастарăмăр,
Уççăнрах янратăр-и
Пирĕн çепĕç юррăмăр.

Чăваш сурпан-масмакĕ –
Несĕлсемĕр юмахĕ.
Тухйипеле шӳлкеми –
Хак хурса пĕтерейми.
Эппин, Верук, тусăмăр,
Конгресри юлташăмăр,
Тĕнчипе кĕрлетĕр-и
Тăпăр-тăпăр ташшăмăр.

Чăвашсен ӳкерчĕкĕ –
Сăрăсен кĕтретлĕхĕ,
Рим та Париж таранах
Пуç таяççĕ халь ăна.
Эппин, Верук, тусăмăр,
Конгресри тăванăмăр,
Тăваллах хăпартăр-и
Ӳнерти хăватамăр.

Юрий СЕМЕНТЕР
01.12.2019

Лариса Михайловна Архипова (Фомина), педагог-воспитатель, общество деятелĕ, Ольга Александровнăпа Севастиан Михайлович Архиповсен кинĕ

Чăваш чĕлхи

Чăваш чĕлхи - тăван чĕлхеçĕм!
Эс маншăн çывăх яланах.
Çак чĕлхепе пуплет аннеçĕм,
Юрлать-и юрă е калать юмах.

Авалтанпах çак чĕлхепе асаплăх
Çӳренĕ пач уйрăлайми.
Çапах та сан хăюлăхпа хăватлăх
Çĕнтерчĕ асапа ĕмĕр манми.

Чăваш çамрăкĕсем епле мухтавлă:
Учĕнăйсем те спортсменсем.
Кӳреççĕ вĕсене сăваплăх
Атте-аннен чунри сăмахĕсем.

Чăваш каччи мухтавлă Андриян та
Чапа кăларчĕ шур Шупашкара.
Вăл хăраман нимле йывăрлăхран та,
Чĕлхем, унпа пĕрле эс пулнăран.

Эс Мускава е Чĕмпĕре каятăн,
Çитетĕн-и çурçĕрелле, -
Тăван сăмах пархатарне туятăн, -
Чăваш чĕлхи янрать тĕнчипелех!

Лариса АРХИПОВА (ФОМИНА)
2012

Тăван уй-хир

Тăван çĕршыв, тăван уй-хир,
Чуна пит çывăх кĕтессем.
Сире сунатăп эпĕ мир,
Таса тӳпе, ачаш çилсем.

Çуркуннепе уй-хирсенче
Янраççĕ трактор сассисем.
Çемçе те кăпăш çĕр çине
Акаççĕ тырă пĕрчисем.

Çулла тăван колхоз хирне
Куратăп анлă тинĕс пек.
Çилпе вăл хумханать хуллен
Сап-сарă тырă ылтăн пек.

Ăш çумăр хыççăн тӳпере
Ав, илтĕнет тăри сасси.
Асамлă, тĕслĕ кĕпере
Халь савăнса сăнать кашни.

Якку вăрманĕ, ав, кашлать,
Мăнаçлăн курăнса ларать.
Ӳсеççĕ хурăнĕ, юман,
Куккук сасси янрать аван.

Тăван тавралăх, уй та хир,
Тăван шкула выртать кив çул.
Кĕтетпĕр çут ире эпир!
Тăван тĕнче! Телейлĕ пул!

Лариса АРХИПОВА (ФОМИНА)
2010

Владимир Федорович Архипов,
инженер-энергетик, общество деятелĕ,
Ольга Александровнăпа Севастиан Михайлович
Архиповсен мăнукĕ

Çуркунне

Çуркунне çитсен вăранчĕç
Кайăксем, чĕр чунĕсем.
Хам-хам йытă хавасланчĕ,
Тустарать çерçисене.

Упа утаман вăранчĕ
Шăнкăрч сассине илтсен.
«Çуркунне те çитнĕ мар-и?»-
Тесе тухрĕ йăвинчен.

Мăр кушак та килсе ларчĕ
Хĕвел ăшшине ирех.
Çепĕç юрă шăрантарчĕç
Кайăксем мĕн каçченех.

Çуркунне! Епле илемлĕ!
Чĕрĕлеççĕ йывăççем.
Кĕç çерем те симĕсленĕ,
Шăтса тухĕç чечексем…

Владимир АРХИПОВ, 5-мĕш класс
2004

Аннене

Мартӑн саккӑрмӗшӗ çитрӗ,
Хӗвел пӑхрӗ ӑшӑтса.
Çеçпӗлсем те ак вӑранчӗç
Хӗвел ӑшшине туйса.

Çав ятпа эпӗ парнелӗп
Аннене пин-пин чечек.
Сывлӑхпа сӳнми телейлӗх
Сунӑп ӗмӗр-ӗмӗрех.

Аннене саламламашкӑн
Тӑтӑм эпӗ ир-ирех.
Шӑллӑм та пӗрле тӑрасшӑн
Эпӗ хистемесӗрех.

Тем пек ир тӑтӑм пулсан та
Тупаймарӑм аннене.
Çӑмӑл ыйхӑллӑ аннемӗр
Пахчара тӑвать ӗçне.

Аннене эп тыттаратӑп
Хамӑн пӗчӗк парнене.
Пин чечеклӗ çӗн ӳкерчӗк
Уçтӑр унӑн кӑмӑлне.

Владимир АРХИПОВ
2004

Пулăра

Иккĕн пĕве хĕрринче
Вăлтапала ларатпăр.
Пулăсене тартасран
Шăппăн калаçатпăр.

Силленсе илет вăлти -
Туртса кăларатăп.
Вăлтара вылять пулли -
Чунтан савăнатăп.

Пилĕк карас, йăмпăлтак
Витрере ишеççĕ.
Тытар, тусăм, тепĕртак -
Пулăсем кĕреççĕ!

Хĕвел пăхать тӳпере,
Кайăксем юрлаççĕ.
Пулăсем ман витрере
Эх, шăмпăлтатаççĕ.

Акă иккĕн тусăмпа
Савăнса утатпăр.
Çуршар витре пулăпа
Килелле каятпăр.

Владимир АРХИПОВ
2004

Асатте

С.М. Архипова халалласа

Манăн ватă асатте
Кайнă çамрăклах вăрçа.
Чăтнă асаппа терте
Каялла чакман нихçан.

Ишсе каçнă Днепр урлă,
Темиçе хутчен аманнă.
Юлташсем вилнине курнă,
Чăтса тӳснĕ вутлă тăвăл.

Вăрçă хыççăн чылай вăхăт
Вĕрентнĕ ачасене.
Шкул директорĕ те пулнă,
Чылай курнă нушине.

Икĕ хутлă шкулăн çурчĕ
Курăнать халь аякран.
Асатте ăна тутарнă,
Тăрăшнă мĕн пур вăйран.

Асатте халь канура
Кăштăртатать хăйне май.
Аса илсе иртнине
Каласа парать нумай...

Владимир АРХИПОВ
2005

Ан пултăр вăрçă нихăçан!

Ан пултăр вăрçă нихăçан!
Ан килтĕр тапăнса тăшман!
Тĕп пултăр çав усал çăхан,
Часрах тасалтăр вăл кунтан!

Мĕн чухлĕ çын вилет унта?
Мĕн чухлĕ юн тăкать тĕнче?
Çӳрет тискер вăйпа пĕр тан
Хаярлăх, хурлăх çĕр çинче!

Ан пултăр вăрçă нихăçан!
Ан килтĕр тапăнса тăшман!

Владимир АРХИПОВ
2007

Татьяна Федоровна Архипова вĕрентекен, психолог, логопед, общество деятелĕ, Ольга Александровнăпа Севастиан Михайлович Архиповсен мăнукĕ, 2017 ç.

Хĕлле

Эпĕ тăтăм ирпеле
Таврара шап-шурă.
Ах, илемлĕ-çке епле
Кил умĕнчи хурăн.

Хурăн çинчи туратсем
Паслă, йăлтăр-йăлтăр.
Тӳперен вĕсем çине
Сапнă тейĕн çăлтăр.

Лапсăркка тураттисем
Усăнса тăраççĕ.
Унта ларнă кайăксем
Тетте пек курнаççĕ.

Татьяна АРХИПОВА, 4-мĕш класс
2008

Хурăн

Пирĕн умра ÿсет шур хурăн
Капмар та çÿллĕ, яштака.
Илемлĕ вăл, хăвах эс курăн
Ытарайми капăрлăха.

Çуркуннепе ем-ешĕл çулçă
Хуллен симĕсленсе тухать,
Тин çеç килсе вырнаçнă шăнкăрч
Илемлĕ юрă шăрататать.

Хумханнăçемĕн шурă хурăн
Çилпе пуплеççĕ çулçăсем.
Телей çинчен хываççĕ юрă
Саркайăксем те шăпчăксем.

Татьяна АРХИПОВА
2009

Хӗл илемӗ

Лапкам-лапкам çурӗ юр,
Халӗ таврара шап-шур,
Тăтăм эп йӗлтӗр çине,
Вӗçтерем вăрман енне.

Акă çитрӗм вăрмана,
Лăпкă тунсăх таврара.
Сас паратъ кăна шур юр,
Вăрман ыйхăра халь, кур.

Шăп лараççӗ йывăççем,
Ӳксе пӗтнӗ çулçисем.
Юрламаççӗ кайăксем,
Ăшă кăнтăрта вӗсем.

Чакак сасси илтӗнет,
Ют çын çинчен пӗлтерет.
Мулкач çав сасса илтсе
Тарчӗ инçете сиксе.

...Сас памарăм шăпланса,
Вăхăт чупрӗ васкаса.
Савăнса килтӗм киле,
Тавтапуç сана, хӗлле!

Татьяна АРХИПОВА
2009

Асамлăх

Аннен мĕн чухлĕ ырă кăмăл,
Аннен мĕн чухлĕ ăш сăмах!
Иксĕлейми ун пултарулăх,
Мĕн чухлĕ вăл пĕлет юмах!

Ирпе вăратнă чух аннеçĕм
Лăпкать, ăш сăмахсем калать:
«Ман чĕппĕм,- тет вăл,- ман чĕкеçĕм»,-
Тӳрех кăмăлăма уçать.

- Анне, мĕнле эс ĕлкĕретĕн
Пĕтĕм ĕçе тирпейлесе?
Эс чăн асамçă пулĕ тейĕн, -
Апат та лартнă пĕçерсе.

Анне куçран пăхса ачашшăн
Мана лăпкарĕ çурăмран.
Çапла амăшĕсем ачашăн
Асамçă вăйпала пĕр тан.

Татьяна АРХИПОВА
2010

Юлхав кушак аçи

Юптару

Пĕррехинче юлхав кушак ыйха туртать
Виç кун та виçĕ каç к(ă) мака çинче.
Куçне уçсассăнах вăл ятлаçма пуçлать:
«Ухмах-çке манăн çав хуçа, эй, тур, тĕнче!

Пĕлмест-им вăл ман хырăм выçнине?
Ярса памашкăн сĕт пит йывăр-шим ăна?
Пачах та ăнланмасть кун-çул йывăррине.
Манпа вăрçма пĕлет хăй пит аван кăна!»

Çапла мăкăртатса кахал кушак
Утать хуллен анчах чăланалла.
Унта курах каять кахал кушак
Сап-сарă сĕт çăра хăймапала.

Хайхи юлхавçă савăнсах каять.
Пуçне чикме тăрать кăна куршак ăшне
Шала çын кĕнине курах каять.
Суйма пуçлать вăл хуçине:

«Эп кĕтĕм ĕнерех çак чăлана,
Тытмасăр хăвармарăм пĕр шăши.
Вăй-халăм пĕтрĕ, çавăншăн мана
Пĕр чашăк сĕт ярса эс памăн-ши?»

Паян та çав юлхав кушак пурнать
Хăй хуçине суйса, улталаса.
Кунран-кунах мăнтăрланса пырать,
Шăшийĕсем вара – нумайланса.

Çак юптару пĕлтерĕшĕ шепех:
«Ан пул эс çав юлхавçă кушак пек.
Ан пурăн эс суйса, улталаса,
Ан курăн эс çав мăнтăр кушак пек».

Татьяна АРХИПОВА
2014

«НИКАМА ТА МАНМАН, НИМĔН ТЕ МАНĂÇМАН»

Тӳпери çăлтăрсем,
Çĕнтерӳ çутисем.
Улăхри чечексем пек
Илемлĕ вĕсем.
Тав сире, аттесем,
Тав сире, аннесем.
Эпир - сирĕн
Çĕнтерӳ ачисем.

Ю.СЕМЕНТЕР

Юманай шкулĕнче Тăван Çĕршывăн Аслă вăрçи тата педагогика ветеранĕ С.М. Архипов ячĕпе Хисеп хăми уçнă вăхăтра, çу уйăхĕн 6-мĕшĕ, 2016 ç.

Юманайри вăтам шкула С.М. Архипов ятне панă митингра, çу уйăхĕн 8-мĕшĕ, 2017 ç.

Чакман эпир каялла!

Асаттене - Севастиан Архипова халалласа

Çук, чакман нихăçан та эпир каялла,
Такăнса тăшмана вăй паман.
Шухăшра пĕр тĕллев: фашиста чармалла!
Çавăнпа каялла çул пулман.

Ун хăрушă çарне курсанах хăраса
Нихăçан пуç усма шутламан.
Вăй-хала, хăвата чăмăра пуçтарса
Çапăçу хирнелле талпăнан.

Асатте пехилне те пачах та манман:
«Ан çухат нихăçан та чысна!»
Çавăнпа юлташа нихăçан пăрахман,
Кăкăрпа хутĕленĕ ăна.

Ман тăван асаттен вут-вăрçа кĕнĕ чух
Алăра хĕçпăшал та пулман.
Днепр урлă туспа ишсе каçнă чух
Пулăшу панипе çеç путман.

Çапăçу хирĕнче малалла чупнă чух
Пĕрре çеç пульăпа аманман.
Асатте хăй чысне, хăйĕн паттăрлăхне
Вăрçăра нихăçан çухатман.

Кашни утăмра - çĕршывăн пуласлăхĕ,
Ун çинчен пĕр самант та манман.
Кашни утăмра - ачасен малашлăхĕ,
Çавăнпа пĕр утас та чакман!

Татьяна АРХИПОВА
2011

***«Аслă çул вĕçне çывхарнă май
Умăрта таятăп пуçăма,
Ырлăх пултăр, сывлăх пултăр, тетĕп,
Пехиллетĕп»***

***«Ачамсем, юратнă чĕппĕмсем,
Чĕвĕл-чĕвĕлти мăнукăмсем…»***

Архиповсен çемйи. Варринче Ольга Александровнăпа Севастиан Михайлович, çу уйăхĕн 9-мĕшĕ, 2011ç.

Ял-йыш, тăван-пĕлĕш пухăнсан…

Ольга Александровна Архиповăн 85 çулхи юбилейĕ,
авăн уйăхĕн 12-мĕшĕ, 2014 ç.

Умăрта таятăп пуçăма

Йăх-несĕле, тăхăма пехиллесе

Пĕр пуçланнă кун вĕçленетех,
Тӳпери хĕвел те анатех.
Тем пек тăрăшсан та, тăвансем,
Икĕ ĕмĕр пурнаймасть этем.
Вăрăм çул вĕçне çывхарнă май
Умăрта таятăп пуçăма,
Ырлăх пултăр, сывлăх пултăр, тетĕп,
Пехиллетĕп.

Ачамсем, юратнă чĕппĕмсем,
Чĕвĕл-чĕвĕлти мăнукăмсем,
Пурсăра пĕрле пухса сире
Ыталать кĕç-вĕç сÿнес чĕре.
Аслă çул вĕçне çывхарнă май
Умăрта таятăп пуçăма,
Ырлăх пултăр, сывлăх пултăр, тетĕп,
Пехиллетĕп.

Ялăм-йышăм, пĕлĕш-хурăнташ,
Хамăрăн йăхри кашни чăваш,
Тури Выл, Тусай е Юманай,
Ятăра асра тытап пĕрмай.
Сумлă çул вĕçне çывхарнă май
Умăрта таятăп пуçăма,
Ырлăх пултăр, сывлăх пултăр, тетĕп,
Пехиллетĕп.

Ват кукамайăн тивлетлĕ мăнукĕсем

Ольга Архиповăн кĕçĕн мăнукĕсем Максимпа Мария ват кукамăшĕн «Кун-çул таппи» çĕнĕ кĕнекипе паллашаççĕ, 2020 ç.

Пехил

Эй, мана çуратса ӳстернĕ аслă халăхăм, сана эп мĕн пĕчĕкрен юратса пурăнтăм, аякран, çывăхран та яланах сан патна туртăнтăм.

Халĕ вара, тăхăрвуннăпа çĕр çул хушшинче утăмласа виçнĕ май, пуçăмра çак шухăшсем тĕвĕленеççĕ.

Чĕвĕл-чĕвĕл чĕлхӳн кашни чĕрĕ тĕпренчĕкĕ мана хĕвел ĕнчи пек курăнать, тĕнче ăсчахĕсене тĕлĕнтерекен тĕррӳ кун-çул çырăвĕ пек туйăнать.

«Алран кайми» текен юррун янравĕ вара пурнăç хĕлĕхĕн йыхравĕ пек илтĕнет…

Çак хавхалануллă туйăм çыртарчĕ те ĕнтĕ сăввăм-юррăмсене.

Çывăхри те аякри тăванăмăрсем, тури те анатри хурăнташăмсем! Пурсăра та ырлăх сунса, пурсăра та сывлăх сунса пуçăма таятăп.

Пехил.

Улька аппăр

ЧУНРА ЧЫЛАЙ ÇУЛ «ТĔЛĔРНĔ» СĂВĂ ЙĔРКИСЕМ…

Чунра сăвă хăçан çураласса никам та пĕлмест. Сăвă вăл шур пĕлĕтсем хыçне пытаннă сар хĕвел пек. Чăркăш çил пĕлĕтсене сирĕлтерсе кăн-кăвак тӳпе тăрах салатать те сар хĕвел çут тĕнчене хăйĕн сапăрлăхĕпе тата хĕрӳ шевлисемпе çутатса йăл кулса ярать… Сăвă та çавах, чун савăтне йĕркен–йĕркен тулса-пуçтарăнса çитет те, пĕр кунхине таса шывпа тултарнă туп-тулли куркаран сĕтел çине тăкăнакан сиплĕ тумламсем евĕр тарăн шухăшлă, тулли рифмăллă, илемлĕ сăнарлă çаврăмсене чăмăртанса шап-шур хут çине шăрçаланать.

Çĕмĕрле районĕнчи Юманай ялĕнче пурăнакан 91 çулхи Ольга Архипова чунĕнче чылай çул канлĕн «тĕлĕрнĕ» сăвă йĕркисем пĕр кунхине çут тĕнче черченлĕхне курас тесе шур хут çине çыраннă. Çапла, çапла, тĕрĕсех ăнлантăн, вулаканăм, чунра «тĕлĕрнĕ» сăвă йĕркисем… Ара, урăхла пулма та пултараймасть. Çавăн пек ăста та сăнарлă, юханшыв пек шăнкăртатса юхакан çаврăмсем çут çанталăк памасан, йăхра пултаруллă çынсем пулмасан хăйсемпе хăйсем çуралмаççĕ. Вĕсем çумăр хыççăн кӳлле пухăнакан таса çумăр тумламĕсем евĕр чун савăтне ерипен кун-çул тăршшĕпе пуçтарăнаççĕ. Çут çанталăк панă пултарулăх Ольга Архиповăна, ман шутпа, мăн-мăн аслашшĕ-асламăшĕ, кукашшĕ-кукамăшĕ урлă куçнах.

Чи çывăх тăванĕсем хыççăн Ольга Архипова питĕ черченкĕ те ачаш сăввисене вулаканĕ эпĕ пултăм. Пытармастăп, вĕсем чунăма тӳрех ярса илчĕç. Сăвăсем-хĕвел шевлисем урлă эпĕ унăн кăмăл-шухăшĕпе, çывăх çыннисемпе, ачисемпе, мăнукĕсемпе, тăванĕсемпе, ĕçĕ-хĕлĕпе çывăх паллашрăм.

Сăвăçăн пултарулăхне сăмахпа тем тĕрлĕ мухтаса та ырласа хакласан та ун сăввисене вуламасăр вăл мĕн çинчен

çырнине, сăнарсене еплерех калăпланине, вулакана мĕн калас тенине пĕлме çуках. Çавăнпа та Ольга Арихиповăн сăввисенчи мана килĕшнĕ ăнăçлă йĕркесене илсе кăтартас килет. Калас пулать, кашни сăвăç «арчинчех» хăйне кун-çути парнеленĕ, пĕлӳ парса вĕрентнĕ, ура çине çирĕп тăратнă тăван çĕршыва сума суса хайланă сăвă пур. Ольга Архиповăн та тăван ене сăвапласа шăрçаланă сăвă чылай. «Ентешĕмсем» сăвăри икĕ йĕркене илем: «Чăвашăн килесси те каясси Йăлт курăнать хĕвеллĕ уçлăхран». Çапла, тĕрĕсех асăрханă сăвăç, эпир чăвашсем, хĕвел ачисем. Çавна пулах тĕнчене тытса тăракан çут хĕвел те пирĕн халăхăн шăпине уçлăх кĕнекинче ĕмĕрлĕх çырса пырать. Пур сăвăçа та çут çанталăк асамлă вăй парать. Çавна пулах сăвăç тепри курманнине курать, тепри туйманнине туять, тепри калайманнине сăмахпа ытарласа-сăнарласа калать. Ольга Александровна та ав çав кĕтретлĕхпе тулли: «Чунпа туятăп хам несĕлĕмсен Вун ĕмĕр витĕр тухнă ăшшине». Калас пулать, çак ĕмĕрсем витĕр куçакан ăшша пурте туяймаççĕ, çăванпа та йăх-ăрупа çыхăну çухатаççĕ, тăван чĕлхене манса сутаççĕ, йăла-йĕркене пăрахăçлаççĕ, урăх халăхпа пĕрлешсе ун саккунĕпе пурăнса чăваш пулма пăрахаççĕ.

«Эпир – Куçça йăхĕнчен» сăвăра Ольга Архипова хăйĕн йăх-тымарĕпе паллаштарать. Хăйĕн çак тĕнчере чăваш пулса пурăннă мăн-мăн тăванĕсемпе мăнаçланать. «Хаклă тăванăмăрсем, Ытарми çыннăмăрсем, Ятăр пултăр сумлăхра. Пуçăр пултăр сывлăхра!» Пăрчăкан ятпа çӳренĕ амăшĕ Фекла Васильевна уншăн чĕвĕл чĕкеç чĕлхиллĕ. «Чĕвĕл чĕкеç эс, анне» сăвва вулар-ха. «Чĕвĕл чĕкеçĕм аннем, Пурнăç пире парнелен. Тĕклентерен, ӳстерен, Çунат хушса вĕçтерен! Чĕвĕл чĕкеçĕм аннем, Пĕр канăçсăр вĕл! вĕçен, Пĕр канмасăр эс ĕçлен, Чĕпӳсемшен хĕмленен! Чĕвĕл чĕкеçĕм аннем, Чĕкеç чĕлхи пехиллен. Чĕвĕл-чĕвĕл чĕвĕлтетсе Туслăн пурăнма чĕнен. Чĕвĕл чĕкеçĕм аннем, Кил вучахне эс чĕртен. Шанăç паран, хӳтĕлен, Пурнăçра телей кӳрен». Çапла, пĕр сăмахпа хакласан, анне – пурнăç пуçламăшĕ! Шăп

та лăп амăш ачисене ĕлĕкрен упраннă чĕлхе сапăрлăхне, йăли-йĕркине, пурнăç тытăмĕн вăрттăнлăхĕсене вĕрентсе хăварать. Ольга Архиповăшăн та амăшĕ чи сăваплă та чи юратнă çын.

Пурнăç панă амăшĕ çеç мар, унпа пĕрле хĕр пĕрчине ачашласа, юратса, ăнланса ÿстернĕ ашшĕ Александр Александрович та сăвăçшăн питĕ хаклă çын. «Атте килĕ – эс шур хурăн!» сăвăра çакă уççăн курăнать. Хурăн – сăваплă, илемлĕ, чун пуянлăхне ăнлантаракан, ятулăхпа, яштака, ытарлă йывăç. Вăл тасалăхпа, черченлĕхпе, хÿхĕмлĕхпе çыхăннă. Атте килĕ вара кашни çыншăн сăпка, пурнăç никĕсĕпе тытăмĕ. «Атте килĕ – эс «шур хурăн», Эс – çĕршывăм, эс – аннем, Яланах эс пурăн, «хурăн», Илемлет тăван çĕре». Эпĕ халиччен чылай сăвă вуланă, анчах та атте килне «шур хурăнпа» танлаштарнине пĕрремĕш хут тĕл пултăм. Тăван çĕр тулăхлăхĕ, пахалăхĕ сăвăçшăн питĕ пĕлтерĕшлĕ иккенне вара вулакан «Лартар, туссем, йывăç-сем» сăвăран та аван курать. «Лартар, туссем, йывăçсем, Çăка, хурăн, каврăçсем, Çĕршыв пулсан пит хитре, Пулĕ телей чĕрере». Илемлĕ тăрăхра пурăнма, телейле пулма та аван çав. Тăван çĕршыва капăрлатма чĕннинче эпĕ Ольга Архиповăшăн ăна çитĕнтернĕ çĕр-анне уншăн мĕн тери хаклине куратăп.

Пĕр сăвăра Ольга Архипова «Хĕпĕртесе чунтан-вартан Каллех сăмах шăрçи эп тирĕп» тет. Питĕ сăнарлă йĕркесем. Чăнах та, шур пире тенкĕсемпе хитрелетсе кĕпе çĕлекен çĕвĕç пекех, сăвăç та хăйĕн сăввине çырнă чух сăвă «пирне» сăмахсемпе-шăрçасемпе «тирсе» илемлетет çав.

Мĕн анчах сăвăнтармасть, хумхантармасть иккен сăвăçа. Сăввисенчи чи ăшă та вĕри, черчен те ĕлккен юратăвĕ - ачисем, кунтах мăшăрне хисеплени, унпа мăнаçланни, çавăн пекех пурнăç тутине ас тивнĕ ăшшĕпе амăшĕ, пĕртăвансем, ял-йыш ал тупанĕ çинчи пек яр уçă. Чĕререн тухакан туйăм-сем ачаш тинĕс хумĕсем евĕр çепĕççĕн чуна çупăрлаççĕ. Сăнарлă сăвăсем урлă эпĕ сăвăçăн иртнĕ тата паянхи кун-

çулне витĕр куртăм. Унпа пĕрле ăшшăн култăм, хĕпĕртерĕм, чунпа пăшăрхантăм, чĕрене пăлхатрăм. Сăвăсенчи эреветлĕ те пуян шухăшлă çаврăмсемпе паллашнă хыççăн чĕререн çунатлантăм, хамăн кун-çулăма тарăнрах хакларăм. Тĕрĕсех. Енчен те сăвăç хăй чăтнă, курнă, тӳссе ирттернĕ пулăмсем-самантсем пирки хăй чунĕ витĕр сăрăхтарса кăларса çырмасан, çут çанталăк асамĕпе, пирĕнпе пулса иртекен пулăмсемпе, кил-хуçалăхра усă куракан тĕрлĕ хатĕрпе сăнарласа танлаштармасан ăна вулакан ĕненмĕ.

Ĕмĕрлĕхех куçне хупнă иккĕмĕш мăшăрне халалланă сăвă та юратупа çуталать. «Тав тăватăп мăшăра» сăвăра çапла йĕркесем пур: «Мăшарăм, эс ман умра, Эс ялан чунра, ăшра. Икĕ тăлах турата Хӳтлĕх патăн, тав сана!» Пĕрремĕш упăшкинчен икĕ ачапа юлнăскере çĕнĕ мăшăрĕ, маттур та ăста вĕрентекен Севастиан Архипов, юратса качча илет. Икĕ тĕпренчĕкне хăйĕнни пекех савать. Унпа пĕрле кун çути кăтартса тата 3 ачана ура çине тăратать сăвăç. Хĕрарăмшăн чăн телей вăл – çемье. Хăй йăвине чунпа упрать, хӳтĕлет вăл. Иккĕшĕ те шкулта ачасене вĕрентсе ĕмĕрне ĕмĕрлеççĕ. Чăвашлăхшăн, пуласлăхшăн ырми-канми тăрăшаççĕ.

Кĕнекере вăрçă тематики уйрăм вырăн йышăнать. Ачалăхĕ шăп та лăп хаяр та усал вăрçă кунĕсене лекнĕ Ольга Александровнăн. Тăван халăх тӳснĕ асапа вăл ял-йышĕпе, çемйипе пĕрле тӳсет, чун-чĕри витĕр çав усал, хаяр вăйа сивлесе, ылханса, çавах та малашлăха ĕненсе чунне хĕвелле çутатса сăнарлать. Çакна «Днепр шывĕ çинче», «Тăван çĕршыв тав тăвать», «Днепр шывĕ», «Çĕнтерӳ» сăвăсенче куратăн.

Ачасене шкулта чăваш чĕлхи вĕрентсе тăван чĕлхепе уйрăлми çыхăнса-тĕвĕленсе ларнă Ольга Алекснадровнăн канăçсăр чĕри çак йĕркесене çырмасăр епле чăттăр: «Çапла эп хам пурнăçăма Чăваш сăмахĕпе ирттертĕм. Ыр туртăма сăвва хума Хушса тăрать мана чĕреçĕм». Чăваш халăхĕ чăваш чĕлхине пула тытăнса тăрать, пурăнать, малалла утать. Çак асамлă чĕрĕ хĕлхем сӳнсен чăваш халăхĕн пулас-

лăхĕ те шанăçсăр иккенне чунĕпе туять чăваш чĕлхи вĕрентекен сăвăç.

Ольга Архипова хайланă сăвăсен тематики питĕ анлă. Вĕсен килĕнче хăналаннă чăвашсен паллă та маттур сăвăçисемпе ӳнерçисем те пур кунта. Никифор Ваçанкка, Петр Сизов, Александр Артемьев тата ытисем те. Аслашшĕ-асламăшне, хуняшĕ-хунямăшне, ĕçтешĕсене те тав тума манмасть вăл. Ачасем валли те сăнарлă çырма ятарлă мелсем шырать, çут çанталăк хăтлăхне, унăн пуянлăхне – чĕр чунсене, ӳсен тăрана, йывăçене, кайăк-кĕшĕке сăвă çырнă чух танлаштару пек усă курать. Вĕсем валли те пуян та паха чăваш чĕлхин ăслăлăх «хутаççинчен» вырăнлă та кирлĕ сăмахсем туртса кăларть.

Ку кĕске хаклавра Ольга Архиповăн пултарулăхне тарăннăн та туллин уçса пама хам ума тĕллев лартман эпĕ. Сăвăсене вуланă май эпĕ асăрхаманнине, уçса çитерейменнине вулакан хăй те тĕшмĕрттĕр. Çапах та тепĕр сăвă пирки каламасан кунта мĕн çырас тени мана пĕтĕмпех çырлахтармĕччĕ. Иртнĕ пурнăçне кусран хăрамасăр тӳремĕн тинкерсе Ольга Архипова чунне çапларах уçать. «Умăрта таятăп пуçăма» сăввăн пĕр çаврăмне пĕрле вулар-ха. «Пĕр пуçланнă кун вĕçленетех. Тӳпери хĕвел те анатех. Тем пек тăрашсан та, тăвансем, Икĕ ĕмĕр пурнаймасть этем. Вăрăм çул вĕçне çывхарнă май Умăрта таятăп пуçăма, Ырлăх пултăр, сывлăх пултăр, тетĕп, Пехиллетĕп…». Хăйĕн вилĕмĕнчен шикленмен çын çеç çапла çырма пултарать. Эп çыраймăттăм. Пĕр шутласан, кун пек çырма чунри хăюлăх та кирлех çав. Сăвăçăн çурăмĕ хыçĕнче 91 çул. Сахал мар. Апла пулсан та пурнăç пире нихçан та тăрантса çитермест. Пурнăç панă кунсем темле хĕресленсе, çаврăнса, пĕтĕрĕнсе пырсан та таса сывлăшпа сывлас, калас сăмаха калас, утас çулпа утас килет.

Каласах пулать, «Çунатлан, чĕрем» сăвă пуххинче автор хăй çырнă сăвăсемсĕр пуçне ăна хăйне чăваш сăвăçисем халалланисем те чылай. Юхма Мишши, Анатолий Кипеч,

Юрий Сементер, Валери Туркай, Раиса Сарпи, Светлана Асамат, Альбина Юрату. Мĕне пĕлтерет-ха ку? Пĕр чăнлăха çеç. Ольга Архипова чăваш ялĕпе кун-çулне çыхăнтарнă халăх пĕлекен тата юратакан чăн-чăн чăваш хĕрарăмĕ тата чăваш чĕлхипе литератури вĕрентекен ăстаçă пулнине ăнлантарать. Çирĕплетсех калатăп, çакăн пек сумлăха чун-чĕререн парăнса тăвакан ĕçшĕн çеç тивĕçме пулать.

Кĕнекене çавăн пекех кĕçĕн хĕрĕ Вера Архипова, мăнукĕсем Владимирпа Татьяна, кинĕ Лариса Фомина-Архипова çырнă сăвăсем те кĕнĕ. Кунтах сăвăçăн пурнăç тапхăрĕсемпе çыхăннă сăн ÿкерчĕксем те вырăнлă. Çавăн пекех унăн пур тăванĕпе, пĕрле вăй хунă ĕçтешĕсемпе, пултаруллă сăвăçсемпе тата кĕвĕ ăстисемпе те сăвă пуххинчи сăн ÿкерчĕксем урлă паллашма пулать. «Çунатлан, чĕрем» кĕнекене Чăваш автономи облаçне йĕркеленĕренпе 100 çул çитнине халалланă. «Чун хĕлхемĕ» ум сăмаха Чăваш халăх çыравçи Юрий Сементер, «Куçça йăхĕн ырă тĕслĕхĕ» статьяна Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ вĕрентекенĕ Геронтий Никифоров хайланă. Ăна Вера Архипова тата Максимилиан Севастьянов пухса хатĕрленĕ.

Кĕнекене пахаланă май эпĕ Ольга Александровнăна тата нумай çул пире савăнтарса пурăнма ырлăх-сывлăх сунатăп. Çĕр çул урлă каçмалла пултăр. Çĕнĕ сăввисемпе пирĕн чуна кĕтĕр. Эпир ачисене-тăванĕсене-вĕрентекенсене çул кăтартса пыракан пурнăç мĕнне чунпа ăнланнă, чăвашлăх ĕçĕнче вăй-халне шеллемесĕр куç хупми тăрăшнă çыннăн пархатарлă та сăваплă ĕçне малалла тăсăпăр. Май пур таран ачамăрсене тăван халăха, анне чĕлхине, йăла-йĕркене çак патвар та хăватлă чăваш хĕрарăмĕ пекех юратма, хаклама, сума сума вĕрентĕпĕр.

… Аллăмри «Çунатлан, чĕрем» сăвă пуххи чăваш тĕнчине ирĕклĕн те çунаттисене вĕл! сарса вĕçсе кĕрессе пĕрре те иккĕленместĕп.

Альбина ЮРАТУ

Вăрçă ачисем

Сулайхайран сылтамалла: Налимова Люба, Александрова Ольга, Порфирьева Люба. Красноармейски районĕнчи Тусай ялĕ, 1946 ç.

О.А. Александрова 4-мĕш курсра. Чăваш патшалăх педагогика институчĕ, 1952 ç.

Чăваш патшалăх педагогика институчĕ

Варринче пулас чăваш халăх поэчĕ А. Галкин, унпа юнашар О.А. Александрова (сылтăмран иккĕмĕшĕ), 1-мĕш курс, 1949 ç.

Çĕмĕрле районĕнчи Юманай вăтам шкулăн вĕрентекенĕсем

Малти ретре варринче: Ольга Александровнан мăшăрĕ, шкул директорĕ С.М. Архипов, *çӳлти ретре сулахайран:* О.А. Архипова (3-мĕшĕ), 1964 ç.

Асра тытатпăр, Манмастпăр, Мухтанатпăр!

Севастиан Михайлович Архиповăн асăну кунĕ. Чăваш наци библиотеки, раштав уйăхĕн 18-мĕшĕ, 2015 ç.

Çĕмĕрле районĕнчи Юманай вăтам шкулне С.М. Архипов ятне панă митингра, çу уйăхĕн 8-мĕшĕ, 2017 ç.

О.А. Архипова ачисемпе, мăнукĕсемпе тата кĕçĕн мăнукĕсемпе

Пĕрремĕш ретре сулахайран сылтăмалла: Максимилиан мăнукĕн мăшăрĕ Анастасия, кĕçĕн мăнукĕ Наталья, хĕрĕ Вера, Ольга Александровна, мăнукĕ Янина, кĕçĕн мăнукĕ Максим, мăнукĕсем Татьяна, Володя, Сергей. *Иккĕмĕш ретре сулахайран сылтăмалла:* мăнукĕ Максимилиан, 2019 ç.

ТАВ СĂМАХĔ

Çак кĕнеке ырă кăмăллă тус-юлташ пулăшнипе пичетленсе тухрĕ. Çăмăл мар вăхăтра поэзи те кирлине ăнланнăшăн, тĕнчене илемлĕх туйăмĕ те çăлса хăварассине ĕненнĕшĕн тавах! Чун-чĕрепе ăнланса алă паракансене, Чăваш халăх поэчĕсене Юрий Сементерпе Валерий Туркая; Раççей Федерацийĕн тата Чăваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченне, педагогика наукисен кандидатне Юрий Кудаков композитора; Чăваш Республикин искусствăсен тава тивĕçлĕ деятельне, Чĕмпĕр облаçĕн культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченне Светлана Азамата; Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ вĕрентекенне Геронтий Никифорова; чăваш поэтессисене, Чăваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕсене Альбина Юратупа Раиса Сарпине; калем ăстисене, Чăваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕсене Зоя Яковлевăпа Роза Деменцовăна; хам вĕрентсе кăларнă ачасене - филологи ăслăлăхĕсен кандидатне Олег Кульева тата кĕнеке кăларма нухратпа пулăшнă ООО «ПКФ «ИСТРУМ» генеральнăй директорне Георгий Шипеева ырă кăмăлĕпе çынлăхĕшĕн пуçăма çĕре çити тайса тав тăватăп. Эсир пуррипе çут тĕнче илемлĕ!

Ольга АРХИПОВА

ТУПМАЛЛИ

Сементер Ю. Чун хĕлхемĕ..3
Никифоров Г. Куçça йăхĕн ырă тĕслĕхĕ...................................6

ОЛЬГА АРХИПОВА СĂВВИСЕМ

Архипова О. Чĕрем хушать...30

ТĂВАН ЕНЕ САВАПЛАСА...31
Ентешĕмсем..31
Тусайпа Юманай..32
Эпир – Куçça йăхĕнчен...34

ИЛЕМ КӐРЕН ÇĔН КУНА, АННЕМ…..35
Чĕвĕл чĕкеçĕм аннем!..36
Хĕвел пики Хĕвелпи...37
Сурăм шывĕ..38

АТТЕНЕ – ПУРНĂÇ ТЫТКĂЧИНЕ...39
Днепр шывĕ...40
Аттене сума суса...43
Атте килĕ - эс шур хурăн..45
Атте лартнă ушкăн хурăн..46
Йӳçĕ пыл..48
Лартар, туссем, йывăçсем!..49

АСРАХ ЭС, ВОЛОДЬ ПИЧЧЕ, ЧĔРЕМĔН ВАРРИНЧЕ……51
Тĕнче курма...52

МĂШĂРĂМ, ЭС МАН УМРА, ЭС ЯЛАН ЧУНРА, ĂШРА……59
Çăкăр..60
Етĕрнене çул уçă…...63
Днепр шывĕ çинче...65
Тăван Çĕршыв тав тăвать..66
Тавах, учителĕм, тавах..69

Иккĕн утнă çулсем.......71
Тав тăватăп мăшăра.......73
Севастиан юрри.......7 4

ТУРИ ВЫЛТИ ЭРХИП МИХАЛИ ТАТА УНĂН МĂШĂРĔ ТАРИ.......75
Тав сире, аттепе анне.......76

АСĂМРИ ÇЫВĂХ ÇЫНСЕМ.......77
Пирĕн хастар Ваçанкка.......78
Эс пур, Сизов.......79
Ваçанкка, Уртемух, Себастьян.......81
Тăван ен кĕввисем.......83
Тусай хĕрĕ Роза.......85
Эх, Алеша, Алексей!.......87

ТĂВАН ТĂРĂХ ТУРТĂМĔ.......89
Çут çанталăк.......89
Пакша.......90
Сипетлĕ хурăн.......91
Кĕрхи кăмăл.......92
Ула такка.......93
Çумăр хыççăн.......94

ЯШЛĂХĂМА ХЫВАМ КĔПЕР.......95
Çунатлан, чĕрем, ялан!.......96
Çамрăклăх юрри.......97
Вăйăра.......98
Тăри сасси тӳпере.......99
Атьăр, атьсем!.......101
Ыр суну.......102

ПАТТĂРЛĂХПА ХАСТАРЛĂХ КУÇАТЬ ЛАМРАН ЛАМА...103
Мускав.......103
Амăшĕ.......107
Çунса тăтăр пурнăçу.......109

Офицер..111
Çӗнтерӳ..112

ПУРНĂÇ ХУМӖ...114
Чăваш халăх кун-çулӗ..114
Чăвашах юласчӗ ман..120
Тӗнче – тӗрлӗ кӗнчеле...122
Пурнăç таппи...126
Кун-çул никӗсне хывап чул çинче..................................129
Юманай ачисем...132
Хăна юрри...133
Çул çук каялла...134
Уйрăлу юрри..135
Эп сана телей пиллем!..137

ШУХĂШ-ÇИÇӖМСЕМ..138
Мӗн вăл телей?..138
Çӗрӗм-шывăм, тăван халăх..138
Чысна упра..139
Çемье..141
Çамрăк ӗмӗр час иртет..142
Çут çанталăк...143

ТЫТĂНСА ТĂРАТЬ ТӖНЧЕ ЫРĂ, ÇУТĂ ЧУНСЕНЧЕН.....144
Таймапуç!..144

ХАЛАЛ СĂВВИСЕМ

Юхма М. Чăваш хӗрарăмӗсене эп пуç таятăп....................146
Кипеч А. Мăшăр тени мӗн тени...150
Сементер Ю. Чăваш чӗлхин çӳлти сывлăшӗ......................153
Сементер Ю. Тавах, чӗлхе вӗрентекен!..............................155
Сементер Ю. Сăпка юрри..157
Сементер Ю. Юманай такмакӗсем.......................................159
Сементер Ю. Тури Вылти ликбез..162
Сементер Ю. Етӗрне çути...163

Сементер Ю. Днепр çинче..164
Сементер Ю. Тăван çĕр салтака пил пани.........................166
Сементер Ю. Кăвакарчăн, упăшкаçăм!...............................167
Сементер Ю. Тури Вылти Архипов Севастиан: баллада...168
Сементер Ю. Севастиан Архипов шывĕсем: баллада.......170
Сементер Ю. Тав сăмахĕ...173
Туркай В. Акатуй...174
Сарпи Р. Вĕрентекен..178
Сарпи Р. Эс юратнă анне, асанне, кукамай........................180
Азамат С. Юратнă Чăваш Килĕм...183
Азамат С. Ан кулянсам, тăванăм...184
Юрату А. Чăваш хĕвелĕ ялтăрать умра.............................188
Кульев О. Пирĕн ватă учитель...192
Тусли Г. Юманай мухтавĕ..194
Тусли Г. Чутай чăвашĕ...195
Тусли Г. Манар мар...196
Архипова В. Тавах, аттем!...197
Сарпи Р. Уяв илемĕ – Вера Архипова....................................201
Сементер Ю. Пирĕн ӳнерлĕх...202
Архипова (Фомина) Л. Чăваш чĕлхи.....................................204
Архипова (Фомина) Л. Тăван уй-хир....................................206
Архипов В. Çуркунне..207
Архипов В. Аннене..209
Архипов В. Пулăра..210
Архипов В. Асатте...211
Архипов В. Ан пултăр вăрçă нихăçан!....................................212
Архипова Т. Хĕлле...213
Архипова Т. Хурăн..214
Архипова Т. Хĕл илемĕ...215
Архипова Т. Асамлăх..216
Архипова Т. Юлхав кушак аçи...217
Архипова Т. Чакман эпир каялла!...219
Архипова О. Умăрта таятăп пуçăма.......................................222
Пехил..225
Чунра чылай çул «тĕлĕрнĕ» сăвă йĕркисем...........................226
Тав сăмахĕ...235

Ольга Александровна АРХИПОВА

Çунатлан, чĕрем

сăвăсем

Вдохновение

стихи

На чувашском языке

Составители
Максимилиан Юрьевич Севастьянов
Вера Севастьяновна Архипова

Литературный редактор *Альбина Юрату*
Редактор *Геронтий Лукиянович Никифоров*
Дизайн *Янина Юрьевна Михайлова*
Компьютерная верстка *Андрей Владимирович Савинкин*

Подписано в печать 10.12.2020
Печать офсетная. Гарнитура Arial
Уч. печ. лист 7,5. Тираж 100. Заказ № 428
Отпечатано в ООО «Своя типография»
г.Чебоксары, ул.Текстильщиков, 8
8-903-345-33-47

Ольга Александровнăпа Севастиан Михайлович Архиповсем

Архипова (Александрова) Ольга Александровна 1929 çулхи авăн уйăхĕн 12-мĕшĕнче Чăваш Республикин Красноармейски районĕн Тусай ялĕнче çуралнă. Ачалăхĕ колхозсем йĕркеленнĕ пăтравлă вăхăтпа, Тăван çĕршывăн аслă вăрçин 1941–1945 çулĕсемпе пĕр килнĕ. Тусай пуçламăш, Упи вăтам шкулĕсенчен (1949), Шупашкарти И.Я. Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика институтĕн историпе филологи факультечĕн чăваш чĕлхипе литератури уйрăмĕнчен вĕренсе тухнă (1953). Елчĕк районĕн Аслă Таяпа вăтам (1953--1956), Кĕçĕн Таяпа çичĕ çул вĕренмелли (1956–1957), Елчĕк вăтам (1957–1958), Çĕмĕрле районĕн Юманай вăтам (1958–1985) шкулĕсенче чăваш чĕлхипе литератури вĕрентнĕ.

Педагог, фольклорист, таврапĕлÿçĕ, общество деятелĕ, ĕçпе вĕрентÿ (1953–1985) тата тыл (1941–1945) ветеранĕ, вăрçă ачи, Чăваш Республикин çыравçăсен пĕрлешĕвĕн пайташĕ (1997), фольклор ансамблĕн никĕслевçи тата ертÿçи (1970), «Ылтăн тата хурçă перо» тăван чĕлхепе литература кружокне пуçараканĕ тата ертсе пыраканĕ, «Çамрăк хунавсем» литература антологийĕпе альманахне йĕркелекенĕ, республика тата Раççей пичет кăларăмĕсенчи статьясен тата чылай кĕнеке авторĕ, радио-тележурналистика хыпарлавçи.

Алексей Талвир ячĕллĕ литература, И.Я. Яковлев ячĕллĕ чăваш наци премийĕсен лауреачĕ, чăваш халăх пултарулăхĕн тĕрлĕ фестиваль-конкурс лауреачĕ (1960-1980), СССР халăх артисчĕ Вера Кузьмина ячĕллĕ илемлĕ вулав конкурсĕн лауреачĕ (2017), «Хыпар» Издательство çурчĕн «Чăваш хĕрарăмĕ» хаçачĕ тата Чăваш наци конгресĕ йĕркеленĕ «Вутра та çунман, шывра та путман чăваш хĕрарăмĕ» конкурсĕн лауреачĕ (2020). «Ĕç ветеранĕ», 2-мĕш степеньлĕ Ача амăшĕ, «Вăрçă ачисем», 1941-1945 çулсенчи Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинчи Çĕнтерĕвĕн юбилей медалĕсене, Раççейри ача çыравçисен пĕрлешĕвĕн «Мудрая сова» орденне тата чылай Хисеп хутне тивĕçнĕ.

Ольга Александровна Севастиан Михайлович Архипов мăшăрĕпе пĕрле пĕтĕм пурнăçне ачасене вĕрентессипе, воспитани парассипе çыхăнтарнă, халăха хутла вĕрентес тесе нумай тăрăшнă. Севастиан Михайлович - Тăван çĕршывăн Аслă вăрçин тата вĕренÿпе ĕç ветеранĕ. Вун çиччĕре чухнех вĕренÿ ĕçе пикеннĕ, унтанпа 50 çул ытла педагогика тытăмĕнче тăрăшнă, 20 çул ытла Çĕмĕрле районĕн Юманай вăтам шкулĕн директорĕнче вăй хунă.

Ольга Александровна тата Севастиан Михайлович Архиповсем вĕрентÿпе культура аталанăвне пысăк витĕм кÿнĕ.

Альбина ЮРАТУ,
Чăваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ,
ЧР Журналистсен союзĕн Николай Никольский ячĕллĕ преми лауреачĕ.